34-99

№ 2454

Ф. П. Павлов

# ЙАЛТА СУТРА

Чăвашиздат

Ф. П. ПАВЛОВ

# ЙАЛТА
# СУТРА

ПЙЕССАСЕМ

ЧӐВАШСЕН ПАТШАЛӐХ ИЗДАТЕЛСТВИ
ШУПАШКАР—1934



# ЙАЛТА.

## 5 КАРТИНĂЛĂ ПЙЕССĂ.

1922-мĕш çулта пичетленсе тухнă 4 пайлă драмăна Чăвашсен патшалăх театăрĕнче 1932-мĕш çулта выљаса панă пек çĕнĕле редакципе пичетленет. Хăш вьрăнсене камсем, йепле урăхлатнине пĕлес тесессĕн, тата ку пйессăна Шупашкарти театăрта мĕнле выљаса панине асăрхаттарнинче вула. Редактăрĕ.

**ВЫЉАКАНСЕМ:**

1. **Пăрчкан**—вăтам хресчен арăмĕ.
2. **Йељук**—унăн амаçури хĕрĕ.
3. **Вађук**—каччă, тăлăхскер, чухăн.
4. **Çтаппан**—йал куштанĕ, кулак.
5. **Йăскар**—карчăк.
6. **Муççа**—унăн упăшки.
7. **Паљља**—салтак.
8. **Старăстă.**
9. **Çамрăк ача.**
10. **Вата çын.**
11. **Туй пуçĕ.**
12. **Хăйматлăх.**
13. **Кĕреке пуçĕн йулташĕ.**

1-мĕш туйачи, 2-мĕш туйачи, 1-мĕш туйарăмĕ, 2-мĕш туйарăмĕ.

Хĕрсем, ачасем, каччăсем, хĕрçумсем, туй халăхĕсем, туйачисем туйарăмĕсем тата ыттисем те.

Драмăри ĕç Германи вăрçи вăхăтĕнче пулнă.

Пйессăри йурăсене Ф. Павлăв хăй идемлетнисене тата кăтартнă йĕркепе йурласа пырсассăн пит те аван пулмала. Кĕввисене „Сăрнай“, „Çĕнĕ Сăрнай“ сборниксенче тупма пулат. Ку пйессăна лартма хоркружоксен пулăшас пулат.

## ПЁРРЕМЁШ КАРТИНĂ.

### 1-мёш курăну.

(Сăмахсăр сценкă[1])

Çтаппан крылца çинчен уретникпе старăстăна кăмăллăн ăсатать. Лешсем ăшшăн сывпуллашса кайаççĕ. Урам хушшипе ватă çын иртсе кайать. Вăл Çтаппан тĕлне çитсессĕн çĕре çити лайăлса чыс тăвать. Çтаппанĕ кĕрет.

### 2-мёш курăну.

Пăрчкан килкартинче. Сценă: вăтам хресчен пÿрчĕн пăлтăра кĕмели картлашка, çывăрма шăналăк карса тунă вырăн, хапха т. ыт. те. Пăрчкан пусă умĕнче кĕпе çăвать.

Йеђук (витресемпе кĕрет). Ĕнтĕ сурăхсене хупрăм. (Витрисене крылца çине лартса, вырăн патне пырать).

Пăрчкан. Купăста шăвартăн-и? (Урамра йурă сасси).

Йеђук. Шăвартăм.

Пăрчкан (кĕпине çуса). Ĕнене мĕн патăн?

Йеђук. Пахчаран курăк çулса патăм.

Пăрчкан. Йурĕ, апла пулсан. Ĕнтĕ кайса çывăрах. (Хапха патнеле кайма тăрать, йурă сасси хытăрах илтĕнет. „Çырма хĕрне"... йурра йурлаççĕ).

Йеђук. Анне, ман пĕртте ыйăх килмест.

---

[1] Шупашкарти академилĕ театăрта 1932 ç. лартнă чухне пйессăн 4 картинĕшĕн те йурăхлă, улшăнми декораци—урам хушши пек тунăччĕ: сценăн пĕр йенче вăтам хресчен килкартийĕ, тепĕр йенче Вађукăн чухăн килĕ, вĕсем урлă урам леш йенче Çтаппанăн шатрун çурчĕ курăнать.

Кун пек декорацине выђас пулсассăн, йе Пăрчкан килĕ умĕнчи урам хушшине кăтартма май пулсассăн çех, çак малтанхи сăмахсăр сценкăна выђаса ирттерме пулать. Йалти сценăра тÿрех иккĕмĕш курăнуран пуçламала, йе тата действи Пăрчкан пÿртĕнче шалта пулма та пултарать.

Пăрчкан. Мĕн тата?

Йеђук. Епĕ урама кайатăп...

Пăрчкан. Мĕн? Ан чупса çӳренĕ пултăр.

Йеђук. Анне, хĕрсем пурте урамра, йурăсем йурлаççĕ, йепле манăн пĕччен кайса çыварас?

Пăрчкан. Ан пелке, чупкăн! Пĕре-пĕре асăнмалăх тупан-ха хуна вађђи.

Йеђук. Анне, мĕншĕн апла калатăн?

Пăрчкан. Епĕ санран аслăрах-и, аслăрах мар-и? Итле-ха. Ма есĕ ман сăмахран тухатăн? Епĕ хуна çуратнă апу мар пулсан та, ман саншăн чĕре ыратаť.

Йеђук. Анне, есĕ йаланах çапла калатăн.

Пăрчкан. Ех, Йеђук! Вилсе кайăп та курăймăп çав: „Ĕлĕк анне çапла калаччĕ“, тесе сахал мар астăвăн, вара.

Йеђук. Анне, темскер çинчен калаçатăн есĕ, епĕ ăнланаймастăп.

Пăрчкан. Тĕрĕс каларăн. Чăнах та нимĕн те пĕлместĕн есĕ. Çипуç ырă, хырăм тутă, тата мĕн кирлĕ?

Йеђук. Мана ним те кирлĕ мар.

Пăрчкан. Ухмах! Аçупа апу кампăн тăрăшнă тата? Пирĕн пурлăх кăштах пур ĕнтĕ. Çĕр тара илсе пухман ăна. Аçу вилсен пĕтĕмпех хам пуççине йулчĕ те, çурăма лайăх тарлаттарчĕ.

Йеђук. Анне, мĕншĕн çиленетĕн? Епĕ сан сăмахунтан пĕртте тухмастăп-çке? Епĕ хĕрсемпе выђама çеç кайатăп.

Пăрчкан. Ех, ачам, епĕ сана хуна йуратса калатăп. Ман шухăшпа, сана ун пек тухса çӳреме питех килĕшмест.

Йеђук. Анне, епĕр выђатпăр анчах. Кайатăп, анне?

Пăрчкан. Кайах еппин. Чармастăп. **(Алкумнеле утса кайаť. Йеђук кайма тăрсан).** Йеђук! Асту, Вађукран айаккаларах пăрăн.

Й е ђ у к. Мĕншĕн, анне? Вађук питĕ ырă каччă-çке?

П ă р ч к а н. Йуратмастăп епĕ сан Вађукна.

**3-мĕш к у р ă н у.**

(Йăскар хапхаран кĕрет).

Й ă с к а р. Ман килес, Пăрчкан йăмăк.

П ă р ч к а н. Ах, килсем, килсем, Йăскар акай. Малала ирт.

Й ă с к а р. Килнĕскер иртетпĕр. Сывă-и, çӳреттĕр-и?

П ă р ч к а н. Çӳретпĕр-ха хуллен. Есĕ ху лайăх-и? (Ал параççĕ).

Й ă с к а р (Йеђука). Чупаӳ-и, хĕрĕм? (Ал параççĕ).

Й е ђ у к. Анне, епĕ кайатăп.

П ă р ч к а н. Кай та, час таврăн.

Й е ђ у к. Халех килетĕп. (Урамра йурлама чарăнаççĕ).

Й ă с к а р. Çӳрех, хĕрĕм, çӳрех. Сирĕн çӳремесĕр камăн çӳрес. Акă епĕр, ват супнăсем, çĕрнĕ кăмпа пекех, пĕр ларсан вырăнтан та тапранмастпăр. Çӳрех, хĕрĕм: сирĕн çӳрес пулаӳ. (Йеђук тухса кайаӳ).

**4-мĕш к у р ă н у.**

(Йăскарпа Пăрчкан)

Й ă с к а р. Пăрчкан йăмăк, ача-пăчасен çӳрес те пулаӳ, тетĕп. Епĕр хамăр ача чухне сахалах çӳремен. (Ђуххи тапак тургаӳ)

П ă р ч к а н. Ача-пăчах пулнă çав.

Й ă с к а р. Ах, Пăрчкан йăмăк, ĕлĕкхи пурнăçа лайăх иртертĕмĕр те. Мĕн чухлĕ çинĕ, мĕн чухлĕ ĕçнĕ, ереке йухтарнă. Ĕçкĕ чухне—ĕçкĕре, туй чухне—туйра. Çук, хаљ ĕлĕкхи чухлĕ пултараймаççĕ. Тепĕр тесен, хам та епĕ, ĕлĕкхипе танаштарсан, упăте пек анчах тăрса йулнă.

П ă р ч к а н. Есĕ, акай, апла мар-ха, лар-ха—епĕ сăра ăсса тухам.

Йăскар. Ах, ан чăрман, Пăрчкан йăмăк. Епĕ кĕрсе анчах курас терĕм.

Пăрчкан. И, Йăскар акай, епĕ часах ăсса тухатăп. Сана пĕрре тахçанах ĕçтерес тенĕччĕ. **(Витре илсе тухса кайат̆.).**

**5-мĕш курăну.**

**(Йăскар пĕчченех).**

Йăскар. Е, вăрманти тăмана. Пĕрре мар, çирĕм те ĕçтерĕн халĕ. Пĕлетĕп епĕ сан шухăшусене, витĕрех куратăп. Хĕре часрах хăпăтса кăларса, ху пĕччен хуçа пулса йуласшăн есĕ. Унтан вара, упăшка кӳртесшĕн. Ха, вată кĕлетке пулсан та, упăшкапа выљаса пурăнасшăн. Çавă ĕнтĕ: мăнтăр темскер те тутарĕ. Хушăн пулсан, кирек-мĕн хăтлан. Мана мĕн? Ман ĕçес те çийес, çийĕнчен укçа илес. Ах, пайан пыр йарăначчĕ-ха. Ĕнтĕ пехлетĕп. **(Урамра çĕнĕ йурă йурлани илтĕнет,—„Шăлтăр-шăлтăр урапа“ йурлаççĕ).**

**6-мĕш курăну.**

**(Йăскар. Пăрчкан кĕрет).**

Пăрчкан. Акă епĕ, килтĕм те.

Йăскар. Ма чăрманатăнах. Ман пĕртте ĕçес килмест.

Пăрчкан. Ай, мĕн калаçатăн, Йăскар акай. Йепле вара епĕ сана хам пӳртрен хăна тумасăр кăларса йарăп? **(Сăра тултарат̆. Малтан хăй ĕçет, унтан Йăскара парат̆.)**

Йăскар. И, Пăрчкан йăмăк, кăçал ĕçни.. Çăвар ăшĕ те шăршланса карĕ пулĕ. Ĕçетпĕр, ĕçетпĕр—таçта кайат̆, тепле хырăм чăтат̆. **(Љуххи тургат̆).**

Пăрчкан. Сăри сивĕрех пулмарĕ-ши?

Йăскар. Ман хырăм ăна тиркемест. Ман хăвăлĕ асланнă мар-и? **(Ĕçет).** Сăри питĕ тутлă... пыл пекех. Тавăсси, йе астуман та... **(Сăх-сăхат̆).** Пăрчкан йăмăк!

Пăрчкан. Тавах-ха, кăçал курсах та kайман-ха. Сана пĕрре питĕ хытă ĕçтерес тенĕччĕ. (Ĕçтерет) Çтаппан арăмĕ мĕнле?

Йăскар. Тирĕпе шăмми анчах йулнă. Нумайа пултараймасӗ. Чĕм татăлнă.

Пăрчкан. Мĕнле чир унăн?

Йăскар. Çтаппан мăшкăлне тӳссе йытă вырăнĕнче пурăн-ха, тата пирĕн хĕрарăмăн телейĕ те çавнашкал ĕнтĕ. Патак хыççăн, ачана чипер çуратма пултараймасан... вăра етем пĕтĕмпех пăрахăçа тухаӗ.

Пăрчкан. Çтаппанĕ хăй мĕн?

Йăскар. Çтаппанĕ-и?

Пăрчкан. Е-е...

Йăскар. Çтаппан вăл урăх арăм шыраӗ.

Пăрчкан. Чăнах-и?

Йăскар. Суймастăп.

Пăрчкан. Ĕç-ха... Епĕ сана тахçанах пĕр сăмах калас тенĕччĕ.

Йăскар. Калах, сăмахху пулсан. Епĕ никама та калас çук.

Пăрчкан. Мĕн... Çтаппан мана килĕштермĕ-ши?

Йăскар. Ха... Акă мĕн! Ай, тата шухăш кĕчĕ?

Пăрчкан. Темскер..: шухăш кĕчĕ пек çав.

Йăскар. Мм... апла. Анчах...

Пăрчкан. Мĕн тата?

Йăскар. Карт тухмасӗ.

Пăрчкан. Епĕ сана ахаљ тумăп, Йăскар акай. (Урамра йурлама чарăнассĕ).

Йăскар. Ан çилен, сарçу катса çитерсен те пулмасӗ. Ху шухăшла: есĕ тепĕр пилĕк çултан ватăлса ларатăн. Çтаппан халех ватăлас çук. Сана урăх тупса парăп. Кама килĕштеретĕн?

Пăрчкан. Çтаппан мар пулсан, мана ытти кирлĕ мар. Çтаппан пурлăхлă етем, йалта йатлă çын, унпа пĕрле пурлăх тытма аван пулĕ.

Йăскар. Е, вăл çаплах та-ха ĕнтĕ. Ах, тыт ха, ĕçрĕм ĕнтĕ. (Урамра йурлани илтĕнет,— „Пахча кайăк..“ йурлаççĕ).

Пăрчкан. И, ĕç-ха, ĕç! Паллах пирĕн Йеђуксем, кĕргленсе çӳреççĕ. Ваңук çыпăçнă та, уйăрăлма та пĕлмест. Ăçта Йеђук—вăл унтала. Те качча илесшĕн тата хăйĕн ухмах ăсĕпе?

Йăскар. И, Ваңук Йеђука тĕлĕкре те кураймĕ. Çавах та есĕ вĕсене сыхла. Каччăпа хĕр вăл—кушакпа çу, тенĕ. Тавара пăссан, илекен пулмĕ.

Пăрчкан. Епĕ те çапла шухăшлатăп çав: хĕр йатне пăсасси ним те мар, тетĕп. Чăнах та кайса сыхлас пулĕ. Есĕ, акай мана ан пăх, хăвах тултарса ĕç.

Йăскар. Тытах. Мана çитрĕ. Ĕнтĕ кăштах выртса канасчĕ. Ватă шăм-шак мар-и? Йĕпене сиссенех туртма пуçлаť.

Пăрчкан. Канах, канах. Епĕ Йеђука кайса шырамха. (Кайаť).

### 7-мĕш курăну.

(Йăскар пĕччен).

Йăскар. Кайах, ара. Канма ăна епĕр сансăр пуççăр та пĕлетпĕр. (Сăра тултарса ĕçет. Ĕççе йарсан витри тĕпне пăхса). Йакалчĕ. (Урамра хытăрах йурлани илтĕнет). Йурлăрах, йурлăрах. Ăна епĕ те йурлатăп. (Хуллен йурлаť: „Сар кайăк, (2 хут) сар кайăкăн савнасси“ т. ыт. те. Вырăн çине кайса выртаť. Ыйăхра пĕр икĕ хут йурласа илет).

### 8-мĕш курăну.

(Йеђук кĕрет, Ваңук урама тăрса йулаť).

Йеђук (урлă-пирлĕ пăхкаласа). Ваңук, Ваңук! Ан кай, ан кай! Кĕр, кунта никам та çук.

**9-мĕш курăну.**

(Йеђук. Ваӊук кĕрет. Йăскар выртаť).

Ваӊук. Чăнах никам та çук-и?

Йеђук. Никам та.

Ваӊук. Тусăм! (Йеђука ыталаť)

Йеђук. Ай, намăс...

Ваӊук. Епĕ сана йуратататăп...

Йеђук. Ваӊук, есĕ мана манмăн-и?

Ваӊук. Ăçтан манас ман сана? Есĕ манăн çутă хĕвелĕм-çке?

Йеђук. Чăнах-и?

Ваӊук. Уйăхшăн та, хĕвелшĕн те. (Йăскар вăранса пуçне çĕклет). Йеђук!

Йеђук. М...

Ваӊук. Чуп тутар?

Йеђук. Ай! (Вăганса Ваӊук кăкăрĕ çине пуçне чикеť).

Ваӊук. Йеђук... Йеђук...

Йеђук. (пуçне йерипе çĕклесе Ваӊука куçран пăхаť).

Ваӊук (Йеђука чуптуса хытса кайаť).

Йăскар (шăналăка уçса пăхаť). А... Епĕ мĕн, тетĕп? Вакăр пăрува çуллаť, мĕн.

Ваӊук (пуçне вăрт çĕклет). Кәм пур кунта? Мана темĕскерле сасă илтĕнчĕ?

Йеђук. Есĕ йăнăшрăн. Никам та çук. Ларар-и?

Ваӊук Ларар. (Лараççĕ) Йеђук, есĕ хитре.

Йеђук Есĕ епĕ хитрине тин куратăн-и?

Ваӊук. Тин мар Епĕ сана пĕчĕкренех йуратататăп. Есĕ маншăн питĕ хитре.

Йеђук. Есĕ те маншăн питĕ хитре.

Ваӊук. Ĕлĕк атте калаччĕ:—çынна тӳрех куçран пăх, тетчĕ,—куçĕ санран тарса кушаккайăк пек пытанмасť пулсан,—вăл вара сан çын,—тетчĕ.

Й е ђ у к. Ха-ха-ха! Йепле кулăшла калаçатăн есĕ, Ваңук? Ман куçăмсем камăн пек тата?

В а ң у к. Санăн çутă çăлтăр пек. Епĕ кунĕн-çĕрĕн сана куçран пăхса ларăттăмччĕ: вĕсем çăл пек тарăн (Чуптăват). А...

Й е ђ у к. Ваңук, Ваңук, мĕн пулчĕ сана? Çиллентĕн-им?

В а ң у к (чĕнмест).

Й е ђ у к (Ваңука куçĕнчен пăхса). Ваңук, есĕ ӳсĕрĕлсе кайнă пек пултăн?

В а ң у к. Санăн çӳхе туту ӳçĕртсе йачĕ мана. Ех, Йеђук! Сана çилленме манăн вăйăм çитмест. Епĕ сана акă çапла ал çине çĕклĕттĕм те, пĕтĕм тĕнчене кăтартăттăм: „Çакă манăн“, тейĕттĕм. Ах, савнă Йеђук, питĕ хытă йуратататăп-çке епĕ сана!

Й е ђ у к. Хăçан качча илĕн есĕ мана?

В а ң у к. Хăçан? Кĕçĕрех! Пĕлтĕн-и?

Й е ђ у к. Кĕçĕрех ытла хăвăрт. Епĕ хатĕрленмен.

В а ң у к. Кĕçĕрех, чунăм, кĕçĕрех! (Ыталат).

Й е ђ у к. Йурĕ апла пулсан.

## 10-мĕш к у р ă н у.

Йеђукпа Ваңук. Йăскар, Пăрчкан, ун хыççăн Çтаппан тата Муçça кĕреççĕ.

(Й е ђ у к п а В а ң у к пĕр-пĕринчен хăвăрт уйăрлаççĕ. Йеђук намăсланса питне саппунпа хуплат. Ваңук пуçне çĕклесе, мĕн пулассине кĕтсе тăрат. Çтаппан алăкран кĕрсен унтах тăрат. Йăскар тăрса ларат, сăмсаран тапак туртат. Муçça унта-кунта çавăрăнкаласа сĕтел çывăхне пырат, сăра витри çине ăшшăн пăхма тытăнат. Пăрчкан Йеђука хĕнеме пуçлат).

П ă р ч к а н. Есĕ качча́па-и? Есĕ качча́па-и? Ах, лиска йытă! Акă сана, акă сана!

Й е ђ у к. Ай, ан çап, анне!

Й ă с к а р. Ап-чăхху! Ап-чăхху!

М у ç ç а. Айуй! Ман тапак пыракки те кунта тем?

Йăскар. Есĕ тата мĕн шыраса çӳретĕн, тапак пыракĕн хупăлчийĕ?

Ваҧук. Пăрчкан акай, ан тив есĕ Йеҧука.

Пăрчкан. Сана тата мĕн кирлĕ? Есĕ унăн упăшки-им?

Йеҧук. Анне, ан йатлаç есĕ Ваҧука...

Пăрчкан. Тата кирли? Ах, сучка! Йепле вĕсем пĕр—пĕрин хутне кĕреççĕ.

Ваҧук. Пăрчкан акай, ан тив Йеҧука. Епĕ ăна качча илетĕп. (Пăрчканран хуллине туртса илет те, ывăтса йарать).

Пăрчкан. А, есĕ унăн хутне кĕретĕн-и? Чим, епĕ сана, качча илтерем! (Алкум патĕнчен кисип илет). Тухса кай ман килтен, тухса кай! Тухса кай!

Йăскар. Пăрчкан йăмăк, асту!

Муçça. Пăрчкан йăмăк, кисипне пăрахах! (Муççапа Йăскар Пăрчканран кисипне туртса илеççĕ).

Пăрчкан. Ах, тура, вĕсем пурте мана хирĕç! Ах, тур! Çтаппан ывăлсем, Çтаппан ывăлсем!

Çтаппан (урай варне паттăр пек йăвăррăн утса тухать). Ваҧук! Кай тухса!

Ваҧук. Хуллен!

Çтаппан. Кай тухса! Унсăрăн епĕ сана халех кантăр тыллана пек хуçкаласа пăрахăп.

Муççа. Ваҧук ывăлăм, кайах есĕ, кайах, çапăçу пулĕ, кайах.

Ваҧук (Çтаппана пӳрнипе йунаса). Ей, халăх йунне ĕçекен вăрăм туна! Асту! Епĕ çак килте сан çине ал хурса алла та вараламастăп, анчах ирĕкре тĕл пулсан, санпа кĕрешме хатĕр. Акă çакă чăмăр пуçунтан тивсен—йе пуçу саланса кайĕ, йе ĕмĕрлĕхе сĕрĕм тивсе йулĕ.

Çтаппан. Ну!.. (Çапма аллине çĕклет).

Ваҥук. Ан тапран вырӑнтан!

Пӑрчкан. Тухса кай ман килтен, тухса кай! (Йеҗука). Есӗ те тухса хӑп!

Ваҥук. Кайӑпӑр, кайас пулсан. Анчах епӗ кунтан пӗччен каймастӑп. Айта, Йеҗук, пӗрле. Чӑнах та епӗр ҫак килтен тухса кайӑпӑр.

Йеҗук. Ӑҫта кайӑпӑр, Ваҥук?

Ваҥук. Ман пата. Пурӗ пӗр, иксӗмӗр пӗр мӑшӑр пулас пулать.

Пӑрчкан. А-ах, шуйттансем! Пӗтерчӗҫ! (Йӗрет).

Йӑскар. Апла мар-ха, Ваҥук шӑлӑм! Апла йал кулать. Епӗр акӑ ҫапла тӑвӑпӑр: есӗ, хӗрӗм, венчетчен ман патӑмра пурӑн, кайран вара, Ваҥук пӳртне сана туйпа ӑсатӑпӑр.

Муҫҫа. Ха, епӗ те хӗр паратӑп! „Ай-җун, май-җун, манӑн варли лутра хурӑн!“

Йӑскар. Кайӑпӑр, ачасем. Йапалисене кайран та илсе кайӑпӑр.

Пӑрчкан. Тухса хӑпӑрах, вӑрӑ-хурахсем! Мана сирӗн йапалӑрсем кирлӗ мар! (Йапалисене кӑларса ывӑтма тӑрать)

Ваҥук. Айта, Йеҗук!

Йеҗук. Сывӑ пул, ҫуратнӑ кил ҫурт!

Пӑрчкан. Кайӑрах, пӗтӗр, ҫӗр айнех путӑр! (Ваҥукпа Йеҗук, вӗсем хыҫӗнчен Йӑскарпа Муҫҫа тухса кайаҫҫӗ).

## 11-мӗш курӑну.

(Пӑрчкан, Ҫталпан).

Пӑрчкан. Ах, мӗн турӗҫ мана ку вӑрӑ-хурахсем.

Ҫталпан. Кӑларсах пемеллеччӗ те вӗсене, кӑштах тӑхтас, терӗм.

Пӑрчкан. Ах, ма кӑларса пемерӗнех вӗсене?

Ҫталпан. Ан кулҗан, кирлӗ пулсан, епӗ вӗсене кайран та тытса хӗнеме пултаратӑп.

Пăрчкан. Ах, Çтаппан ывăлсем, тытса хĕне вĕсене тархасшăн. Ваҫукне пусне çапса шăтар, Йăскарне кутĕнчен тап, Муççине тата тытса силлесен те çитĕ. Епĕ сана уншăн пулăштух ĕçтерĕп.

Çтаппан. Пулăштуха ăна епĕр хамăр та тупатпăр, а санăн... (çывăхарах пырат) ман ваҫҫи... кăшт тутлăраххи пулмала, а?...

Пăрчкан (пĕлмен пек пулса). Мĕн ши вăл тутлăраххи?

Çтаппан. Акă çакă (Пăрчкана йарса тытат).

Пăрчкан. (вĕçернесшĕн пулса). Ай... Йурамасĭ!

Çтаппан. Мĕншĕн? Есĕ ман кăмăла питĕ кайатăн, кăштах выҫаса пăхма йурĕ çке?

Пăрчкан. Выҫама? Епĕ сан ваҫҫи выҫама кушак çури мар çке? Намăса ăçта хурас? Епĕ ĕнтĕ тин хĕр мар, ватăлнă.

Çтаппан. Е, намăс вăл тĕтĕм мар, куçа çимест. Ватти çамрăкки—епĕ питех уйамастăп. Çамрăк хĕрсем вĕсем пиçсе çитмен çырла пек анчах. Есĕ чăмăр, çемçе, çавăнпа сана чуптума та авантарах пулĕ...

Пăрчкан. Санăн чуптума, хăван арăму пур та?

Çтаппан. Ех, арăм!., Ман, ăна курсан, хăсас килет.

Пăрчкан. Ха-ха-ха! Ан култарах. Анчах ман упăшка вилни виçĕ çул. Çав виçĕ çул хушшинче епĕ выҫама мар, вăл шухăша пуçра та тытман. (Айакала) Ах, чĕре сиксех тухат, мĕн тăвас?

Çтаппан. Тытман пулсан, хаҫ тытма та кайах мар. Тытманни вăл тата лайăхрах.

Пăрчкан (шăппăн). Çынсем пĕлсен?... а.. Намăс?...

Çтаппан. Кунта никам та çук, урамра тĕттĕм.

Пăрчкан. Чăнах та кунта никам та çук... тĕттĕм... Ах, мĕнле çын есĕ.

Çтаппан. Ан шарла... (Пăрчкана йарса тытат).

**12-мěш курăну.**

(Çавсемех тата Муççа).

Муççа. Ман кунта калпак йулнă пулас та...

Çтаппан. Муççа! Тепре шăл шуррине уçатăн пулсан, халех кăларса перетěп.

Муççа. Е, епě хамах, хамах кайатăп. Çтаппан шăлăм, хамах кайатăп.

Çтаппан. Ш-шст! (Муççа тухса тарать).

**Чаршав.**

## ИККӖМӖШ КАРТИНӐ.

(Ваԓук патӗнче).

### 1-мӗш куранӗ.

(Йеԓукпа Ваԓук).

Й е ԓ у к (сӑпка сиктерет, йурлать).

| | |
|---|---|
| Ԓанине, тунине, | Амӑшне—пуҫне, |
| Ачине урине... | Ачине—ҫунатне— |
| Тӑппи-таппи ҫӳреме, | Вӑштӑн-вӑштӑн вӗҫтерме, |
| Кӑрӑс-кӑрӑс тутарма... | Лӑпӑш лӑпӑш сиктерме... |

В а ԓ у к (картишӗнче ҫава аври лартать). Хире кайаччен ҫитерен пуԓ, Йеԓук, хатӗрле-ха. Ачине унччен епӗ хам та сиктерӗп.

Й е ԓ у к. Йурӗ, Ваԓук, пӑх-ха: вӑл пӗртте ҫывӑрмасть, куҫне уҫнӑ та, пӑхса выртать.

В а ԓ у к. Аҫта-ха вӑл? (ҫавине пӳрт кӗтессине тӑратать). Ха, чӑнах: йепле вӑл чарлаттарса пӑхса выртать. А, Йеԓук, есӗ апат хатӗрле-ха, хатӗрле.

Й е ԓ у к. Халех. Апачӗ те ним те ҫук та, мӗнех хатӗрлес-ши?

В а ԓ у к. Кӑвас пӗтни-ха, вара?

Й е ԓ у к. Пур кӑштах.

В а ԓ у к. Кӑвас ҫине сухан йар. А, ку шӑхличи ваԓԓи—качака сӗчӗ. Вара ҫитрӗ те пире.

Й е ԓ у к. Йурӗ. Ҫапла тӑвӑпӑр. (Чашӑк илсе тухать)

В а ԓ у к. Мӗн туса выртатӑн-ха есӗ, улпут? Ха, аллисене чӑсать, тата! Маттур, маттур! Ҫывӑрах, ывӑлӑм, ҫывӑрах!

## 2-мĕш курăну.

(Ваҥук. Пăрчкан кĕрет).

Пăрчкан. Ман килес, ан йатлăр, пурăнаççи?

Ваҥук. Вилме шухăшламан-ха Ху мĕлле пурăнатăн?

Пăрчкан. Пурăнкалас пулаť прĕксĕр, мĕн тăвас тетĕн.

Ваҥук (пуçне çĕклет). Мĕлле ирĕксĕр? Пуçна ма çыхрăн?

Пăрчкан. Ах, ан калах, Ваҥук, Çтаппан çапса шăтарчĕ.

Ваҥук.Ехе! Тыткалама пĕлет пулас, мур, пĕрре алла лексен. Астăватни, пĕрре сан патăнта мана тытса хĕнеме тăчĕ? Анчах ури чĕтрерĕ пулмала—çыхланмарĕ. Çавах епĕ ăна маттур пулĕ, тесе шухăшлатăп.

Пăрчкан. Мĕн пулнине каçарах, Ваҥук кĕрŷ. Мана ухмах хĕрарăма улталарĕ вăл, усал. Ман пĕтĕм пурлăха хăй аллине пуçтарса илчĕ. Хама тарçă туса хучĕ. Сáмах чĕнсенех хăвалаť, хĕнет.. Арманĕнче тарçă, килĕнче тарçă, хăй ĕçсе çŷрет, арăмĕ ĕçлемест.. Йăскарсене ĕçлеттерет...

Ваҥук. Ан тив, ăва пурлăх чăрмантарас çук.

Пăрчкан. И, арăмве çаплах çĕмĕрет. Вырăнтан тăма та памасť. Кăшт ура çине тăрса çŷреме пуçласанах хĕнеме тытăнаť.

Ваҥук Ха, упа хăраххи!

Пăрчкан. Кайас пуљ.

Ваҥук. Ма лармастăн?

Пăрчкан. Çтаппана шыр тăп... Сирĕн пата килсе ларман ши, терĕм. Çавăнпа килсе пăхас, терĕм.

Ваҥук. Çук, Çтаппан пирĕн пата килмен. Мĕн ма кунта килес унăн?

Пăрчкан. Йељук пуçне çавăратăп, тесе мухтанаť, тет.

Ваҥук. Ха-ха-ха! Çавăрттарăп епĕ ăна лайăх пĕрре, йарса илсен.

Пăрчкан. Йытăлансан, ăна никам та чараймĕ.

### 3-мĕш курăну.

(Ваӈук, Пăрчкан, Йелук).

Йелук. Ачи çывăрать-и?

Ваӈук. Çывăрать.

Йелук. Анне, чипер çӳретни?

Пăрчкан. Епĕр çӳрессе çӳретпĕр те-ха. Пайан кантуртан килнĕ, Ваӈукпа пĕр çултисене чĕнеççĕ, тет.

Ваӈук. Килсе чĕнмен халь, унччен апат çийер.

Пăрчкан. Кайас-ха, сывă пулăр!

Йелук. Анне, апат çиме йул.

Ваӈук. Апат çиме лар! Çитĕ ĕнтĕ, малашне пĕрпĕрне çилленмесĕр пурăнăпăр!

Пăрчкан. Ларса çийес-им апла?

Ваӈукпка Йелук. Ларса çи! Ларса çи!

Йелук. Çимесĕр. (Çиме лараççĕ. Йелук çимесĕр Ваӈук çиие пăхса ларать).

Ваӈук. Ма çиместĕн есĕ?

Йелук. Сана салтака илсе кайасран хăратăп.

Ваӈук. Ан хăра, епĕр кайсан вăрçи те пĕтет.

Пăрчкан. Пĕттĕрчĕ вăл, вăрçи. Вара кайсан та пуç пĕтмĕччĕ. (Шаккаççĕ).

Сасă. Килте-и?

Ваӈук. Кунта, кунта! Килте! Кам вăл? Çытăр мучей, есĕ мар-и?

Сасă. Епĕ.

Ваӈук. Кĕр кунта.

Сасă. Кĕрес те пулĕ.

Йелук. Ваӈук, мĕншĕн килнĕ вăл?

Ваӈук (шухăша кайса). Темме...

Йелук. Ах турă, старăстă... (Пурте сĕтел хушшинчен тухаççĕ. Пăрчкан апат пуçтарма тытăнать).

## 4-мĕш курăну.

(Çавсемех тата старăстă.)

Старăстă (кĕрет). Ман килес, вăй патăр.

Ваӈук. Килех! Вырăн тупкаласа ларччĕ.

Старăстă (Ваӈука ал тытать). Лайăх пурнаççи, ушкăнĕпе?

Ваӈук. Тавта пуç. Пурăнатпăр-ха хуллен. Ху лайăх-и?

Старăстă. Çӳретпĕр. Пирĕн ĕçĕ çавнашкал та...

Йеӆук. Мĕн тата?

Старăстă. Çавнашкал ĕнтĕ. Пайан кантура кайас пулать, ыран прийума.

Йеӆук. Ах!...

Ваӈук. Йеӆук, ан макăр-ха, тархасшăн... (Çавине тытать). Авă сан... выртать. Есĕ çавна пăх.,. Епĕр ĕнтĕ... карăмăр... (Питне аллипе хуплать. Урамра салтак йурри илтĕнет. Йурлакансем Ваӈук пӳрчĕ çумнеле килеççĕ),

Старăстă. Ăна ĕнтĕ, Ваӈук шăлăм, макăрса та ним те тăвас çук. Ĕçĕ çапла та... Ну, епе́ кайам-ха... Ман тата ик-виç çĕре çитес пулать. Сывă пулăр. (Тухса кайать).

Ваӈук. Сывă пул, мучей. (Çаваран уйăрлать).

## 5-мĕш курăну.

(Паӆӆала салтак ачисем кĕреççĕ).

Паӆӆа. Сывă-и ушкăнпе?

Ваӈук. Сывах-ха, йулташсем! Ĕçтермелеччĕ те йулташсене, сăри пулмарĕ.

Паӆӆа. Сăрапа тăрса нумай пулать, Ваӈук. Епĕр кайма тухна́. Сана пĕрле илсе кайас терĕмĕр.

Салтак ачисем (йурлаççĕ).

1. Çăлтăр витĕр çул курăнать, (2 хут).
   Епĕр кайас çул пуӆ çав... (2 хут).
2. Уйăх витĕр çул курăнать, (2 хут).
   Епĕр çӳрес çул пуӆ çав... (2 хут).

Ваҥук. Ан макăр-ха, Йеҕук чунăм. Кантур инçех мар, каçчен кайса килĕпĕр...

Паҕҕа. Кайас та пулаť ĕнтĕ.

Ваҥук. Кайăпăр. (Йурлаççĕ).

1. Мăн çул урлă каçнă чух (2 хут).
Йаштак хурăн хуçăлчĕ,
Симĕс çулçи тăкăнчĕ...

2. Тăвансенчен уйрăлнă чух (2 хут).
Йаштак пĕвĕм авăнчĕ,
Çемçе кăмăл хуçăлчĕ...

Паҕҕа. Ну, кайар, Ваҥук.

Ваҥук. Кайăпăр. (Пурте пĕрлешсе йурлаççĕ).

Ваҥук. Ех, карăмăр... (Кайаççĕ, Йеҕук ăсатма тухаť, Пăрчкан сăпка патне йулаť).

Йеҕук. Ваҥу-ук, часрах таврăн!

## 6-мĕш курăну.

Йеҕук. Карĕç!..

Пăрчкан. Макăрса та ним тăвас çук.

Йеҕук. Сана апла калама ним те мар. Ман мĕнле чăтас?

Пăрчкан. Епĕ кайам-ха. Сыв пул. Ан макăр. Макăрса та ним тăвас çук... (Тухса кайаť).

Йеҕук. Сыв пул...

## 7-мĕш курăну.

(Йеҕук пĕчченех).

Йеҕук. Чĕре пасăрах сисрĕ. Турă çавăрса килтĕрех. Пĕччен пулсан, тата тепĕр майлăччĕ... (Сăпка çине пăхса). Çакăншăн чун хăраť... (Сăпка йуррине хуллен йурлаť).

Ҥанине, тунине,
Ачине, урине...

Чаршав.

## ВИÇÇĔМĔШ КАРТИНĂ.

(Çавăнтах, пысăк антрактсăрах пуçлама йурăт)

**1-мĕш к у р ă н у.**

(Йеђукпа Çгаппан)

Ç т а п п а н (алăкра). Кĕме йурать-и? (Кĕрет).

Й е ђ у к. Ваңуксем карĕç...

Ç т а п п а н. Килнĕ-килменех ан хăваласам. Куртăм кайнине. Çавăнпа сана хĕрхенсе кĕтĕм.

Й е ђ у к. Мана хĕрхенекен сансăрах пур.

Ç т а п п а н. Сăмаххусем хăватлă. Епĕ ун пеккине йурататăп.

Й е ђ у к. Мĕн кирлĕ сана?

Ç т а п п а н. Ан йатла, Йеђук. Нимĕн те кирлĕ мар. Сана анчах кĕрсе курас, терĕм.

Й е ђ у к. Есĕ ўсĕр!

Ç т а п п а н. Пулĕ те пулĕ. Анчах ĕçнĕшĕн айăп тăвăн-и есĕ мана?

Й е ђ у к. Санпа калаçса тăма ман кăмăлăм çук. Кала мĕн кирлине?

Ç т а п п а н. Лăплан, лăплан, Йеђук. Мана ытлашши нимĕн те кирле мар. (Улталаса). Ех, Йеђук! Ниçта пырсан та епĕ хам вађђи канăçлăх тупаймастăп. Есĕ хĕр чухне сана курсан манăн чун хĕпĕртетчĕ. Халĕ сана çын арăмĕ вырăнче куратăп та, манăн ăш çурăлсах тухать.

Й е ђ у к. Ей, путсĕр ултавçă! Тăван арăмна хĕне кĕртсе йатăн, ман аннене çыпăçса ăна намăс кăтартрăн. Çитĕ сана, мана ан тив! Пăрах хăвăн ўсĕр шухăшусене.

Ç т а п п а н. (суйса, кулгкла тилĕленсе). Епĕ ӳсĕр мар, Йеԉук, ĕçнĕ пулсан та, ӳсĕр мар. Ман пуç урă чухнехинчен те урăрах. Епĕ хам кăкăра акă çапла уçса кăтартма пултарсан, есĕ мана кăштах та пулсан хĕрхенĕттĕнчĕ. Есĕ калатăн: „арăму" тетĕн, „анне", тетĕн. Ман арăм ман кăччă ĕмĕрне типĕтрĕ. Хĕне карĕ те, пăчăкăпа сĕрнĕ пекех вăрçма пуçларĕ. Вара епĕ хам килтен хам сивĕнтĕм. Сан апу çумне те çавăнпа пырса çыхлантăм. Ку вара тата арăмран та усалтарах пулчĕ. Хăй вата пирки, тытăнчĕ вара кĕвĕçме, айаккала пăхма та памасť, кĕвĕçет. „Есĕ, тет, мĕн куçна чаркаласа пыратăн, тет, мăнтăр хĕрсене шыратăн-им? тет. Мĕн тек урамала пăхатăн", тет. Вара чун тăвăрланса çитрĕ те, чăтаймарăм, тухса тартăм санăн апу патĕнчен. Вара ман чĕре тата ытларах суранланса карĕ. Çав тĕлех пĕрре сана чиркӳре турра кĕл-тунине куртăм. Есĕ мана турăн таса анкĕлĕ пек курăнса карăн. Çавăнтан пуçласа, есĕ ман чĕрене ăмăрт-кайăк чĕрнисемпе чавса илнĕ пек (аллипе туса кăтартаť), кĕрсе лартăн. Çавăнтан вара ĕçме те тытăнтăм. Йуратăн-и есĕ мана?

Й е ԉ у к. Есĕ хăрушă етем. Сан сăмаххусене итлесе сивĕсĕр шăнса каймала. Епĕр çакă начар пӳртре те телейлĕ пурăнатпăр. Упăшка мана йуратаť, манăн сăпкара пĕчĕкçеççĕ ача выртаť,—пурăнăç нимрен те кайах мар. Есĕ хăвăн телейна халиччен тупаймарăн пулсан,—çакăнта аӊ шыра. Кайах хăвăн çулупа,—пулĕ ăçта та пулсан сан ваԉԉи те тӳпе.

Ç т а п п а н. А, кăмăлпа йуратмастăн пулсан,—епĕ сана вăйпа илĕп. (Йурă сасси).

Й е ԉ у к. Ах! (Сăпка хыçне тарса ӳкет). Мана тивес тесен, сăпкана çĕмĕрсе ман ача урлă пусса каç!

Ç т а п п а н (салтак ачисен йуррине илтсе, хăраса). Мĕн турăм епĕ? Каçар мана тархасшăн, Йеԉук!

Йеђук (алăк патнелe кăгаргса). Тухса кай, çылăхлă чун!

Çтаппан. Каçар, Йеђук, каçар. (Хăй салга с ачиеем йеч еле пăхат).

Йеђук. Тухса кай часрах! Халэх тухса каймасан сана, Вађук килсен, йытта вĕлерне пек вĕлерĕ.

Çтаппан. Вĕлертĕр. Есĕ каçармасăр епĕ вырăнтан тапранмастăп! (Хăй тарма хатĕрленнĕ, сценă хыçĕнче „тпру!" тени илтĕнет).

Йеђук (ăнран кайса Çтаппан патне чышкине чăмăртаса чупса пырат). Тухса кай часрах, шуйттан! Есĕ мана пĕтересшĕн-и? (Çтаппан тарат).

### 2-мĕш курăну.

(Йеђук. Вађукпа салтак ачисем кĕреççĕ).

Паљља (Çтаппана курса) Вађук, сан килĕнтен пĕр çын тухса тарчĕ.

Тепри. Вăрă мар-и, тытас ăна, тытас. Атăр, ачасем, атăр, атăр!.. (Чупаççĕ)

### 3-мĕш курăну.

(Йеђукпа Вађук).

Вађук (Йеђук патне чупса ғырса). Кам кунтан тухса тарчĕ? А, вăл сан пата килнĕ вĕт? Кала тӳррипе унщăн пурĕ-пĕр чунна кăларса илĕп.

Йеђук. Чунтан-вартан йуратнă, Вађук, каçар мана, епĕ айăплă мар.

Вађук. Мĕн тата, кала часрах!

Йеђук. Есĕр кайсанах, епĕ ача çывратма хатĕрлентĕм...

Вађук. Ну?..

Йеђук. Çав вăхăтра Çтаппан килсе кĕчĕ те, мана пусмăрлама тытăнчĕ.

Вађук. Çтаппан... Мĕншĕн есĕ ăна тытса чармарăн?

Йеђук. Есĕ вĕлересрен хăраса, епĕ ăна кăларса йатăм.

Ваҥђук (Йеђука çапма аллине çĕклет). Есĕ те мана ултаАлас тетни, йытă ами?

Йеђук. Епĕ айăплă мар, Ваҥђук, каçар мана!

Ваҥђук (çемçелсе). Йеђук! Пăх мана куçран. Чăн калатăн-и, йе суйатăн-и?

Йеђук. Чăн калатăп, Ваҥђук. Вăл мана пусмăрлама килчĕ. Вара хăйĕн ўсĕр пуçĕпе тĕрлĕ кирлĕ мара лĕпĕртетсе ларчĕ-ларчĕ те, мана çыпăçма тытăнчĕ вара. Вăл ман патала ура йарса пуссанах епĕ сăпка хыçне тарса ўкрĕм. Вара „Малтан ман ачана вĕлер,—терĕм,—вара сăпка урлă пусса каçса мана тин тыт“, терĕм.

Ваҥђук. Чăн, чăнах, Йеђук! Сан сăмаххху тĕрĕс, епĕ ăна сан куçăнта тĕкĕр витĕр курнă пек куратăп.

Йеђук. Чăн çапла, Ваҥђук. Есĕ ĕнтĕ мана çилленместĕн-и, Ваҥђук?

Ваҥђук. Ăçтан çилленес ман сана? Есĕ чăн каларăн... Темме ăш çунаť манăн, часрах шыв парччĕ, кăштахта пулин çăвар ăшне йĕпетесчĕ...

Йеђук (шыв параť). Пĕтĕмпех ĕç.

Ваҥђук (ĕçет). Ентĕ ăш канчĕ. Ну, ĕнтĕ, шуйттан, сана кĕл тутармалăх хатĕрлерĕм.

(Тулта сасăсем илтĕнееçĕ; „Ан йул! Айта!“ Салтак ачисем Çтаппана икĕ аллинчен тытса кĕреççĕ).

### 4-мĕш курăну.

(Çавсемех, Çтаппан тата салтак ачисем).

Пађђа. Акă хађхи упана тытрăмăр.

Ваҥђук (мăшкăласа). Кил, кил, Çтаппан. Мĕн-ма есĕ пирĕн хушăмăра килесшĕн мар? Пирĕнпе хутшăнма йĕрĕнетĕн-и? Ай, çын арăмсене чуптума анчах лайăх-и?

Çтаппан. Каçар мана, Ваҥђук!

Ваҥђук. А-ы есĕ каçар? Есĕ каçар-и? (Çтаппана пыр са çапаť. Ăна йулташĕсем тытса чараççĕ. Йеђук ачине тытаť).

Çт а п п а н. Каçар, Вађук! Епĕ ӳсĕр пулнă...

В а ђ у к. Ӳсĕр!... Сана хăвăн арăму çитмест, мăнтăр! Тăлăх арăмсемпе путсĕрленсе çӳрерĕн те, тата ман вырăна килсе вараласа кайас терĕн-и? Акă сана! Акă сана!..

П а љ ђ а. Çитĕ ĕнтĕ, Вађук, чарăн. (Стаппана чышат̆) Çитĕ, çитĕ...

**5-мĕш к у р ă н у.**

(Çавсемех, тата Йăскар кĕрет),

Й ă с к а р. Çтаппан кунта-и? (Çтаппана курса) Çтаппан, айта часрах килне, арăму вилсе карĕ.

В а ђ у к. Акă сана тепре, арăмушăн.

П а љ ђ а. Ан тив; Вађук, йăвăр суран ан ту! (Çапат̆). Ан тив, ан тив...

В а ђ у к. А-ы! йăвăр суран? Чунне кăларса илем епĕ унне! Тфу, шуйттан аçи, тепĕр тесен... Намăссăр çын, тухса çухал ман куçăмран! (Çтаппан тухса кайат̆).

**6-мĕш к у р ă н у.**

(Çавсемех, Çтаппансăр).

С а л т а к а ч и с е м. Ха-ха-ха! Хи-хи-хи! Тупрĕ хăйĕн ваљђи!

П а љ ђ а. Тахçанах хăйранăччĕ-ха кăна. Пĕркун арман пĕвенĕ чухне, унăнне, тар йухаччен ĕçлерĕмĕр, пĕр укçа та тӳлемерĕ,—нимешĕн укçа тӳлемеççĕ, тет, шуйттан.

В а ђ у к. Ех, ĕмĕр сакки, мĕншĕн есĕ питĕ сарлака... (Йĕрсе йарат̆).

Й е љ у к. Ан макăр Вађук.

В а ђ у к. Çук. Епĕ макăрмастăп. Ех, кала, Мĕтри купăсна! (Мĕтри купăс калама тытăнат̆). Йарăр ташша! (Ташлаççĕ)

Чаршав.

## ТĂВАТТĂМĔШ КАРТИНĂ.

(Урамра, Йăскар пӳрчĕ умĕнче).

**1-мĕш курăну.**

Йеҗук (пĕчченех кăвчала арласа ларатӑ, йурлатӑ).

Чашки, чашки, ай, сар мăйăр та,
Чашки чашки, ай, сар мăйăр—
Кампа та ларса, ай, ҫийем-ши?
Кампа ларса, ай, ҫийем-ши?
Чун хурланатӑ, чĕрем макратӑ те,
Чун хурланатӑ, чĕрем макратӑ—
Кампа та ларса. ай пуплем-ши?
Кампа ларса, ай пуплем-ши?

Ех, мăнтарăн пурнăҫĕ... Пĕртте арлас килмест. Пĕр пыра тăрантарасшăн ҫын тарҫи пултăм. Ваҗук! Ваҗук! Курмастăн есĕ ман пурнăҫа, пĕлместĕн... Те чĕрĕ есĕ, те вилнĕ, ҫыру та йамастăн. Есĕ те хурлăх курса пурăнатăн пулĕ, килте те пурăнма тутлă мар. Акă ĕнтĕ ҫиме те ҫук, ҫын ĕҫне туса тăранса пурăнатăп. Хăш чухне хытă хурланнипе сан ҫинчен те манса кайатăп. Мĕнле пурăнас, мĕнле пурăнас... (Йăскар кĕрет).

**2-меш курăну**

(Йеҗукпа Йăскар).

Йăскар. Мĕншĕн тата арламастăн? Сана ахалех тăрантарма епĕр ҫĕрме пуйан терĕн-им? Ҫтаппан йышши терĕн-им?

Йеҗук. Арласа ларнă ҫĕрте пуҫа тĕрлĕ шухăшсем кĕчĕҫ те, шухăша карăм.

Йăскар. Тыткалакан ҫук сана, пулсан—шухăша каймăттăн есĕ.

Й е ђ у к. Ах, пур, Йăскар акай, пур...

Й ă с к а р (мăшкăласа). Пур... Ман шухăшпа, сан ăна ёнтĕ манас та пулаť.

Й е ђ у к. Йăскар акай, мĕн калаçатăн есĕ? Ăçтаń епĕ Вађука манма пултаратăп? Вăл ман ăшран та тухмасť.

Й ă с к а р. Тек апла каланине ман илтес килми пулчĕ. Вăрçăри вăл икĕ телейлĕ. Те килет, те килмест.

Й е ђ у к. Вилмесен, хăçан та пулсан килĕ.

Й ă с к а р. Ухмах! Епĕ сана хуна ырă тăвасшăн калатăп. Вилмесен килĕ, тетĕн, килсеń те вăл ёçе питех чăрмантармĕ. Есĕ çамрăк, сăнсăпатлă—йепле хуна-ху типсе пурăнас тетĕн?

Й е ђ у к. Ах, турă, йепле кулăшла калаçатăн есĕ, Йăскар акай. Ун пек шухăш ман пуçа пĕртте кĕмест.

Й ă с к а р. Епĕ сана уншăн каламастăп, хăвăншăн калатăп. Хăвăн ирĕк, кирек-мĕн ту. Есĕ хурапа шурăна курман-ха, апла пулсан.

Й е ђ у к Курнă та-çке, Йăскар акай, курнă. Пурăнăç шухăшĕ ман пуçа шăтарсах тухаť. Епĕ ăна есĕ каламасăрах лайăх пĕлетĕп.

Й ă с к а р. Вара, вара. Акă хĕле кĕретпĕр, мĕн çийес тейетĕн? Мĕн тумланас, тейетĕн? Ыйткалама кайас тейетĕн-и? Çавна пĕл.

Й е ђ у к. Келмĕçе кайас вырăнне хапрăк-савăта ĕçлеме кайам, пĕччен хырăма тăрантарăп çавах. Ачи пурăннă пулсан, пурăнма кансĕртерех пулнă пулĕччĕ.

Й ă с к а р. Пирĕн хĕр-упраçпала тем тумала хапрăк-савăтра. Пĕлетĕн, хĕрарăмăн пĕр хак—май килчĕ—тутă, май килмерĕ–çакăнса та вилĕн.

Й е ђ у к. Сан сăмаххусем ман чĕре тĕпнех кĕрсе ларaççĕ.

Й ă с к а р. Кĕччĕр çав, кĕччĕр. Шухăшлама пĕлместĕн. Çавăн пек кĕлеткепеле епĕ сар çу çисе пурăнăп.

Авӑ, Ҫтаппан миҫе хут килсе карӗ кӑҫал. Мӗн тутуна пӑратӑн, тепӗр тесен?

Йеҙук. Ваҥук киле таврӑнсан вӑл манне чуна кӑларса илӗ.

Йӑскар. А, тата вилнӗ пулсан?

Йеҙук. Ах?! Вилнӗ пулсан? Вара ан тапрат, Йӑскар акай, ман ҫӳҫсем вирелле тӑрса карӗҫ.

Йаскар. Чӑнах та вилнӗ пулсан? Мӗн? Кала-ха?

Йеҙук. Вилнӗ пулсан, вара, епӗ те вилетӗп.

Йӑскар. Тхву!

### 3-мӗш курӑну.

(Йеҙук, Йӑскар. Ача-пӑчасем лашала выҙаса чупса кӗреҫҫӗ).

Ачасем. Тпру! Тпру!

Йӑскар. Мӗн кирлӗ сире, шӗкӗнтӗрсем?

Ачасем. Мӗн, Паҙҙа пичей вӑрҫӑран таврӑннӑ. Сӑра ӗҫме чӗнме йачӗҫ.

Йеҙук. Ӑҫта вӑл, ӑҫта?

Ачасем. Мӗн, килӗнчех. Ваҥук пичейпе пӗрле пурӑнтӑмӑр, тет.

Йеҙук. Ваҥук пичу сывах тет-и?

Ачасем. Мӗн, ӑна каламарӗ. Часрах пырӑр сӑра ӗҫме!

Йӑскар. Чупӑр. Пыраҫҫӗ, тейӗр.

Ачасем. Йурат. Ей, малти! (Вӗҫтерсе тухса кайаҫҫӗ).

### 4-мӗш курӑну.

(Йеҙук, Йӑскар).

Йеҙук. Часрах кайса пӗлес... (Тухса кайат).

Йӑскар. Чим-ха, курӑпӑр...

### 5-мӗш курӑну.

(Йӑскар, Ҫтаппан тепӗр йенчен кӗрет).

Ҫтаппан. Пурӑнат-и?

Йӑскар. Пурӑнат.

Çтаппан. Ма вилместĕн есĕ?

Йăскар. Тĕнче пушанса йулĕ, тетĕп.

Çтаппан. Ман шухăшпа, есĕ тĕнчене шăршлантарма анчах.

Йăскар. Ху шăршлантар. Сан хырăм çӳхех мар.

Çтаппан. Ман кăсйа та çӳхех мар.

Йăскар. Суйатăн!

Çтаппан. Мĕншĕн суйас? Есĕ суйнăшăн укçа памастăн пулĕ?

Йăскар. Кай! Урăх сана нихçан та ĕненместĕп.

Çтаппан. Мĕншĕн, Йăскар акай?

Йăскар. Е, Йеђук кирлĕ пулсан, „Йăскар акай?" Миçе хутчен суйрăн? Тухйа тупса паратăп, тесе суйаӳ. Йеђука мар, сана хĕрĕх çулхине те тупса памастăп.

Çтаппан. Йăскар акай! Мĕншĕн çиленетĕн-ха?

Йăскар. Кай, ăçтан килнĕ çавăнта.

Çтаппан. Йăскар акай!

Йăскар. Кай, кай, кай!

Çтаппан (аллине кăсйене чикет те, Йăскар çине пăхса укçине шăнкăртаттараӳ).

Йăскар (Çтаппан çинеле çавăрăнса пăхаӳ).

Çтаппан (татах шăнкăртаттараӳ).

Йăскар (аллине чăсса). Пар тата, мĕн йĕкĕлтетĕн.

Çтаппан (укçине кăлараӳ). Йеђук хăçан ман пулаӳ?

Йăскар. Ы-ы... (патне пырса). Итле, чăтас пулаӳ кăштах.

Çтаппан. Урăх чăтăм çитмест.

Йăскар. Хă-хă... Чăтăму çитмест пулсан, укçуна ан хĕрхен, хăвăртрах пулĕ.

Çтаппан (укçине параӳ).

Йăскар. Ах турă...(Укçи çине куçне чаркаласа пăхаӳ. Унтан хӳмне чикет).

## 6-мӗш курӑну.

(Йӑскар, Ҫтаппан, Паљља кӗрет).

Паљља. Аван-и, йалйышсем?

Ҫтаппан. Паљља-ҫке ку? Аван-и? Хӑҫан ҫитрӗн? (Ал параҫҫӗ).

Паљља. Хаљ анчах. Киле ҫитнӗренпе пӗр витре сӑра ӗҫрӗмӗр ӑнчах. Епӗ Йељук патне килтӗм. Ваңук ҫинчен каласа пӗлтерес, терӗм. Ҫавӑнпа час васкаса тухрӑм.

Йӑскар. Йељук хаљ анчах, есӗ таврӑннине илтсе, сан патна тухса чупрӗ. Мӗлле хирӗҫ пулмарӑр вара?

Паљља. Епӗ, пахча витӗр тухса, тӳрех ҫырма урлӑ каҫрӑм. Йељук тата мӗнле пурӑнать.

Йӑскар. Ҫын ӗҫне тукаласа тӑранса пурӑнать.

Паљља. Ха, апла.

Ҫтаппан. Ҫапла. А, Ваңук мӗле?

Паљља. Ҫавна калама пӗлместӗп. Вӑрҫа пӗрлех кӗ- тӗмӗр. Мана шрапнел пырса тивиччен епӗр пӗрлехчӗ унпала... Хытӑ вӑрҫса пыратчӗ. Хӑй те вӗри йунлӑ пулнӑ мӗн... Кайран вара, хам та астумастӑп—пӗлми пулнӑ. Мана лазарета илсе кайнӑ. Лазаретра унта, епӗ виҫӗ кун кӗтсе выртрӑм Ваңука. „Ах, ку Ваңук килӗ- ши, килмӗ-ши" тесе кӗтсе выртатӑп. Виҫӗ кун кӗтрӗм— куҫа курӑнмарӗ. Вара вилнӗ пул-и, йе тыткӑна карӗ пуљ и тесе шухӑшларӑм, мӗншӗн тесен, пирӗн дивизи рен пӗтӗмпе ҫирӗм салтак анчах ҫӑлӑнса йулнӑ. Унтан пире Мускаври лазарета куҫарчӗҫ. Мускавра пӗтӗмпе виҫ ерне выртрӑм. Хаљ малала сывалма киле йачӗҫ.

Ҫтаппан. Апла вара, Ваңук ҫинчен нимӗн те пӗл- мерӗн-и?

Паљља. Ҫук, нимӗн те пӗлеймерӗм.

Ҫтаппан. Сан шухӑшпа, мӗнле пек? Вилнӗ-ши вӑл, йе тыткӑна кайнӑ-ши?

Па љ љ а. Çук, пĕлместĕп.

Йăскар. Вăрçă час чарăнаť-и? Пирĕн çĕнтерет теççĕ пулас?

Па љ љ а. Кам калаť?

Çтаппан. Хаçат çине çыраççĕ.

Па љ љ а. Вĕсен, улпут-хуçасен, хаçачĕ вăл суйаť. Епĕр нихçан та вĕсен хаçатне ĕненместпĕр.

Çтаппан. Патши çирĕп тăраť-ха вăл. Патша калаť, тет: етем виллинчен сăрт туса тултарам, çавах парăнмастăп, тесе калаť, тет.

Па љ љ а. Ăна калама лайăх: вăл хăйĕн йунне тăкмасť.

### 7-мĕш курăну.

(Çавсемех. Ача-пăчасем тепĕр йенчен чупса кĕреççĕ).

Ача-пăчасем. Тпру; Тпру! Паљља пичей, епĕр пурне те чĕнсе çаврăнтăмăр.

Па љ љ а. Ну, матур апла пулсан. (Çтаппанпа Йăскара) Ĕнтĕ пирĕн пата кайăпăр.

Çтаппан. Тавта пуç.

Йăскар. Ху килсе лар

Па љ љ а. Епĕр килĕпĕр. Сывă пулăр! (Тухса кайаť.)

Ача-пăчасем. Ей, малти!

### 8-мĕш курăну.

(Çтаппанпа Йăскар.)

Çтаппан (хĕпĕртесе). Мĕн калас тетĕн?

Йăскар. Çын пĕтнипе хĕпĕртетĕн-им?

Çтаппан. Мана мĕн? Ай,епĕ пĕтес пулсан, маншăн куљанакан пулаť, тата?

Йăскар. Пар тата укçуна—ку çынна макăртмали ĕç.

Çтаппан. Мĕскер калаçатăн,—камăн макăрмала тата? Ман шухăшпа, Йељукăн, ман пуйанлăха кура, хĕпĕртемеле анчах.

Йăскар. Пар теççĕ сана. Мĕн хĕрхенетĕн-им тата çĕрсе выртакан укçуна?

Çтаппан. Парассине парăп та, анчах макăрмалишĕн мар,—савăнмалишĕн паратăп.

Йăскар. Йытă. Саншăн Йељука пăсма та шел.

Çтаппан. Мĕн вара пăсмала? Йељук хĕр мар-çке?

Йăскар. Хĕре астарсан та çылăх мар. Йељук арлăарăм.

Çтаппан. Ман шухăшпа, арăма астарни ним те мар. Пур-пĕр палăрмасť.

Йăскар. Йеплe астарăн, вăл тĕлĕкĕнче те Ваӊука кĕтсе пурăнаť.

Çтаппан. Епĕр ăна кĕтмеле мар тăвăпăр. Авă, илтрĕн-и? Паљља мĕн каласа хăварчĕ? Кун хыççăн пĕр çыру анчах кирлĕ.

Йăскар. Мĕнле çыру, йытă?

Çтаппан. Ваӊук вилнĕ, тесе...

Йăскар. Ĭхву! Есĕ шуйттан...

Çтаппан. Есĕ ухмах, Укçаран хăратăн.

Йăскар. Мĕнле тумала, кала? Пĕр кĕрĕшнĕскер, кайала чакмăп.

Çтаппан (кăсйинчен хут кăларса пĕчĕк çыру çыраť). Акă, ме... Йељук килсен пар. (Айаккала пăхса). Авă килет. (Тухса пытанаť).

## 9-мĕш курăну.

(Йăскар, тата Йељук кĕрет),

Йăскар. Мĕншĕн пуçна чиксе тавăрнатăн?

Йељук. Ваӊук... вилнĕ... пулмала... Пĕтрĕ ман пурăнăç ĕнтĕ.

Йăскар. Ан макăр-ха часах. Тен, пурнаť-и тен? Çыру пур. Вуласа пăх-ха.

Йељук. Ăçта çыру, ăçта?

Йăскар (сырăва хӳмрен кăларса парать). Акă, тен, Ваңук сырать-и тен?

Йеңук. Ах, чĕре сиксех тухать... (Тĕлĕнсе пăхать). Çырни Ваңук алли пек мар... Ваңук вилнех пулĕ. Кама вулаттарас-ши? Паңңа патнех тепре кайам-ха (Кайма тăрать).

### 10-мĕш курăну

(Йеңук. Йăскар. Çтаппан васкаса кĕрет).

Çтаппан. Мĕн вуламала, кӳр хам вуласа парам.

Йеңук. Нимех те мар. Паңңа патне кайас, терĕм...

Çтаппан. Есĕ ун патне пĕрре кайса килнĕччĕ мар-и, вара?

Йăскар. Çыру вуланăшăн мĕн пулать, вулаттар ĕнтĕ. Унта кайса киличчен халех пĕлетĕн.

Йеңук. На вуласа пар.

Çтаппан. Хавас, питĕ хавас.

Йеңук. Ах, Çтаппан, часрах вула.

Çтаппан (Йеңук çине пăха-пăха вулать).
„Деревни Хыр-кассы. Елене Кудряшовой... Сывă пурăнатăр-и? Иван Кудряшов сире нумай пурăнма хушса хăварчĕ".

Йеңук (шуралса кайать).

Çтаппан (кулать) „Шрапнел кăкăрне çĕмĕрсе кайсан, виçĕ сехет те пурăнмарĕ"!

Йеңук. А-а-а! (Ӳкет).

Йăскар (Çтаппана). Шуйттан! Есĕ турăн, çĕр çăтса антарашшĕ!

Çтаппан (аллипе Йăскар çăварне хуплать. Çилленсе.) Ан кăшкăр, шапа çăварĕ!

Йăскар. Кăшкăратăп!

Çтаппан. Кай кунтан, епĕ хамах май кӳретĕп.

Йăскар. Каймастăп!

Çтаппан. Апла пулсан, тыт татах, выçлăх пыр! (Укçа парать).

Йăскар. Кирлĕ мар укçу!

Çтаппан На татах!

Йăскар. Куçăнтан сурам!

Çтаппан (тата хушса парать). Тыт, хампар айĕнчи!

Йăскар. Халăха кăшкăратăп.

Çтаппан. На пĕтĕмпех, тăранми хырăм!

Йăскар (илет). Çылăхĕ сан çине пултăр. (Тухса каять).

Çтаппан. Ăхву! Шуйттан хĕрарăмĕ!

### 11-мĕш курăну.

(Йеђук, Çтаппан Йеђук çине пăхса тăрать. Хĕвел анать).

Йеђук. А-а-а!.. Пĕтерчĕç! Ваңук, ах, Ваңук, ăçта есĕ? Ах, ăçта есĕ, ăçта-а?

Çтаппан (Йеђук çине пĕшкĕнсе). Йеђук!

Йеђук. Кам есĕ?

Çтаппан (айаккала). Тăнран тухса карĕ.

Йеђук. Кам есĕ?

Çтаппан. Епĕ...

Йеђук. Кам?

Çтаппан. Сана чунтан-вартан йуратакан çын.

Йеђук. Есĕ Ваңук-и, вара? (Гăрса ларать)

Çтаппан. Епĕ сана çак çутă тĕнчерен ытларах йуратататăп...

Йеђук (пăхкаласа). Есĕ мана йуратататăн-и? Есĕ тăшман, ха-ха-хаах!

Çтаппан. Йеђук? Ваңук вилнĕ..

Йеђук. Ваңук вилнĕ?..

Çтаппан. Ваңук вилнĕ... Епĕ сана Ваңукран ытла йуратататăп.

Йеђук. Çук... Есĕ Ваңук мар.

Çтаппан (мухтанса). Епĕ чаплă пуйан. Мавăн мул нумай. Епĕ Ваңук мар.. Мавран пĕтĕм йал хăраса тăма

пултарат̆. Епĕ сана хура çăкăр çитермĕп, хура ĕçпе санăн çинçе пилĕкне хытармăп...

Йеђук. Кай ман çумран! Хăвар мана! Ман чĕрене вырăнтан ан хускат. Епĕ ĕмĕрте те санăн арăму пулас çук.

Çтаппан. Епĕ сана ылттăн пек ачашласа пăхса пурăнăттăм..

Йеђук. Ан тархасла. Санпа пĕтĕçсе, пурăнăç суранне тӳрлетес çук.

Çтаппан. Ех, Йеђук! (Йеђук умне чĕркуçленчĕ пек туса) Сана йуратма пуçланăранпа епĕ ухмаха йерне çын пек çӳретĕп. Ăçта кайсан та есĕ ман куç умĕнче, ман çине пăхса ман чĕрене шăрататăн. Йеђук, Йеђук, йурат мана!

Йеђук. Ей, телейсĕр чун, хĕрхенетĕп епĕ сана. Йăвăр пулмала сана та. Çавах та хăвар есĕ мана. Епĕ те чĕре тапраннă çын. Телей курас çук есĕ манпала...

Çтаппан (айаккала). Çавăрнат̆ пулас та-ха. (Йеђука, мухтанса, улталаса). Савнă Йеђук! Çӳлти çутă хĕвел те ман чуна сан чухлĕ савăнтараймаст̆. Есĕ мана йурату сáмах памастăн пулсан, епĕ пайанах хамăн пĕтĕм пуйанлăха хĕм-кăвар туса салатса йарăп. Унтан вара хам кăкăра хамах çĕçĕпе касса çурăп та, санăн уру умне килсе ӳксе вилĕп.

Йеђук. Ах, хăрушă-çке! Ахаљ те пусăннă чуна есĕ татах пăвса илес тетĕн и? Темле пулсан та, кай, мана хама пĕччен пуçпа шухăшласа илме пар.

Çтаппан. Йеђук...

Йеђук. Кай часрах! (Айакра сăвă йурри илтĕнет).

Çтаппан. Сывă пул, йуратнă Йеђук. (Чăрăнса айаккала). Çавратăп, хам майлă çавратăпах.

Йеђук. Вађук, Вађук! Ăçта есĕ? Илтетне хăвăн йуратнă йулташна? Çук, есĕ илтместĕн... Есĕ катари

чикĕре тапаланмасăр выртатăн. (Хăрушшăн, тискеррĕн) Йун йухаť... Йун!.. Ав, шăлне йĕрнĕ!.. (Хăраса ухмаха йернĕ пек кăшкăрса йараť). Ах-ха-ха-ха!..

Çтаппан. Çавратăпах хам майлă!

## 12-мĕш курăну.

(Вăйă ачисем йурласа кĕреççĕ. Карта ăшĕнче Аңукпа Ваңук).

Вайă ачисем (йурлаççĕ):

Пĕчĕкçеç путене сарă тулла йуратаť, (2 хут).
Йуратаť, йуратаť, чăнахах та йуратаť. (2 хут).
Ай-хай ача Ваңук пур, çав Аңука йуратаť, (2 хут).
Йуратаť, йуратаť, чăнахах та йуратаť... (2 хут).

(Ваңук карта варрине тухса Аңука чуптăваť. Вара вĕсем картаран пĕр хĕр, пĕр ача суйлаççĕ. Суйланисем карта варрине тухаççĕ. Суйланнисем вĕсен вырăнне тăраççĕ. Унтан вара çавнах тепре йурлаççĕ. Йурласа пĕтернĕ çĕре кайарах йулнă ачисем чупса кĕреççĕ).

Кайарах йулнă ачисем. Айай! Йеңук инке шыва сикрĕ!

Выңакансем. Кам? Кам? Йеңук инке? Ăçта? Шыва сикрĕ? Айтăр часрах! (Чупса тухса кайаççĕ).

## 13-мĕш курăну.

(Йăскар сценă урлă чупса тухса кайаť).

Йăскар. Ах, шуйттан. Ах, ман пуçа çийес терĕн-и? Ах, шуйттан! Ама йытă! Шыва сикет тата! (Тухса чупаť).

## 14-мĕш курăну.

(Муçça шывран туртса кăларнă Йеңука йăтса кĕрет. Ун хыçĕнчен Пăрчкан, Йăскар, вăйă ачисем, хыçалтан Çтаппан тата ытти çынсем те кĕреççĕ).

Çынсем. Силлес ăна! Шăналăкпа силлес!

Муçça. Силлеме кирлĕ мар. Йеңук кӳпсе кайман. Епĕ ăна шыва путаťченех туртса кăлартăм. Авă куратăр, вăл сывлама та пуçларĕ.

Çтаппан (Йеђук патне пырса). Йеђук, Йеђук!

Йеђук (ура çине тăрса). Хура халăх, каçарăр мана. (Ывăннипе сулăнса кайат̆ те, ăна Çтаппан тытат̆).

Йăскарпа Муççа. Ах, Йеђук, кĕçех вилеттĕнчĕ-çке, ачам?

Пĕр старик. А, Йеђук, есĕ ку шухăша хăçан тытрăн?

Йеђук. Вађук, вилнĕ тесе çыру килчĕ. Вара ман куçăмра çутçанталăк тĕттĕмленсе çитрĕ те, чăтаймарăм... (Çтаппан Йеђука çĕклесе урăх çĕре илсе кайат̆).

Пĕр старик. Ай, йай-йай! Ку вăрçăра нумай халăх вилчĕ те, анчах чĕрĕ пурăнакансем пурте вĕсен хыççăн каймĕç. Епĕ те калатăп: ман тахçанах вилес пулат̆, тетĕп, Темме вилес килмест. Çутçанталăках паха пек туйăнат̆. Ах, хах-ха... Ватăлтăмăр ĕнтĕ...

Çтаппан (хуллен). Йеђук, епĕ сана шывран туртса кăлартăм. Сан пурнăçна çăлтăм. Çавах есĕ мана ĕненместĕн-и?

Йеђук (Çтаппан çине пăхса). Вађук, Вађук!..

Çтаппан. (гарăхса). Ы-ых!..

Чаршав.

## ПИЛЛЁКЁМЁШ КАРТИНĂ.

Сценă сылтăм йенче кĕреке сĕтелĕ. Сĕтел таврала çăка çыхса тултарнă. Туп-тулли хăча. (Май пулсассăн—уретник, старăстă та кĕрекене ларнă пултăр). Çаплах ĕçтереççĕ, çаплах çитереççĕ. Сулахайра, рамăă çывăхнерех, икĕ пичке: пĕри—сак çинче, тепри урайĕнче. Кил хушшинче туй сикет. Кĕсле, хуткупăс, парапан сассисем Ташлаççĕ, йурлаççĕ. Ку картинă пĕтнĕ çĕре тул çутăлаĭ.

**1 мĕш курăну.**

Пўртре хăнасем. Икĕ туйарăмĕ ташлаççĕ. Музăкçă хĕрарăм ташши çеммине калаĭ. Туйарăмсем ташланă вăхăтра тулта туй сикет. Туй сикекенсем акă çакă сăвăсене каласа парапан çапса йурлаççĕ (кĕвви „Çĕнĕ Сăрнай“ сборникре):

Туй, туй, туй, тесе (2 хут).
Çĕр çĕмĕрсе килтĕмĕр,—
Çул йусама тухмасан
Епĕр килсе кайас çук,
Туйра сикме прахас çук.
Епир туйа каймасан, (2 хут).
Туй ĕренки килес çук,
Инке илсе килес çук,
Айар, айара!
Ой, пичче Çтаппан пур, (2 хут).
Инке лайăх Йеђук пур.
Йеђук пурăта, Вађук пур.
Айар, айара!
Туй, туй, туй тăвас, (2 хут).
Туй тăвас та çуй тăвас.
Çапла мар-и, ачасем?
Айар, айара...

(Тулта çакă сăмахсене йурласа пĕтерсен пўртре икĕ туйарăмĕ ташлама чарăнаççĕ).

## 2-мĕш курăну.

(Çавсемех, тата туйарăмĕсем).

Тулта малала туй хуллентерех сикет. Туйарăмĕсем тултан тултисемпе пĕр тĕл туса йурласа, кĕреке умне пыраççĕ. Кĕрсен йурлама кăштах чарăнаççĕ. Туйарăмĕсем йурлама чарăннă вăхăтра малтан ташлană икĕ туйарăмĕ кĕрекерисене пырса тайăлса акă çапла чыс тăваççĕ:

Икĕ туйарăмĕ. Ĕнтĕ ан йатлăр, хăтасем, тăхлачсем. Кĕçĕн çынсене кăмăл тăвас тесе сикрĕмĕр.

Муçça. Ăрахмат чыс тунăшăн.

Йăскар. Ташланă хыççăн ĕçĕр-ха.

Икĕ туйарăмĕ. Ĕнтĕ туйран перекетлĕ пултăр. (Ĕçеççĕ).

Çтаппан (тайăлса). Тавта-пуç хисеп тунăшăн.

Тултан кĕнĕ туйарăмĕсем малали савăсене каласа, йурлама пуçлаççĕ .Туйарăмéсем йурланă вăхăтра тухса ташлаççĕ. Музăкçă арçын ташши çеммине калать. Туйарăмĕсемпе ачасем çак сăмахсене каласа йурлаççĕ:

Хăта, пире хваттер йар.
Хваттер йар та хĕрна пар,
Айар, айара...

Хĕрна пар та, тӳшек пар,—
Тӳшек пултăр çиттилĕ,
Çитти пултăр чĕнтĕрлĕ,

Чĕнтĕр пултăр шăрçалă,
Шăрçи пултăр тенкĕлĕ,
Тенки пултăр майралă.

Майри пултăр ачалă,
Ачи пултăр картуслă.
Картус çинче вăй выљать,
Пирĕн алра хĕр выљать,
Айар, айара...

## 3-мĕш курăну.

Çавсемех. Туй ачисем, туйарăмсем. Туй сикме чарăнаҫ. Туй ачисем тултан кĕреке сĕтелĕ патĕнчисемпе пĕрлешсе йурласа кĕреççĕ. Туйачисем, туйарăмсем йурлама чарăннă вăхăтра ташлакан икĕ туйачи кĕрекерисене пырса тайăлса акă çапла чыс тăваççĕ:

И к ĕ   т у й а ч и. Ĕнтĕ ан йатлăр, хăтасем тăхлачсем Кĕçĕн çынсене кăмăл тăвас тесе сикрĕмĕр.

М у ç ç а. Ăрахмат чыс тунăшăн.

Й ă с к а р. Ташланă хыççăн ĕçĕр-ха! (Тултарса параҫ).

Ç т а п п а н (тайăлса). Тавта пуç хисеп тунăшăн.

(Кун хыççăн тултан кĕнĕ туйачисем, туйарăмĕсем малали сăвăсене каласа йурлама пуçлаççĕ. Вĕсем йурланă вăхăтра икĕ туйачитата икĕ туйарăмĕ тухса тăваттăн ташлаççĕ. Музăкçă арçын ташши çеммине калаҫ. Тăракан туйачисемпе туйарăмĕсем акă çакă сăмахсене каласа йурлаççĕ):

Çичĕ çырма пуçĕнче
Çичĕ çул кайман йур выртаҫ.
Йурне чавса пăхрăмăр,
Кĕрĕк татки тупрăмăр.
Кĕрĕк татки кăсийинче
Катăк чĕлĕм тупрăмăр.
Çавă катăк чĕлĕме
Кукрашкинчен хуçрăмăр.
Йеҙукпала Ваҙука
Кĕçĕрхи çĕр уйăртăмăр.
Айар, айара ..

(Çакă сăмахсене йурласа пĕтерсен, икĕ туйачи тата икĕ туйарăмĕ—тăваттăн—ташлама чарăнаççĕ. Вара вĕсем те кĕрекерисене тайăлса чыс тăваççĕ).

## 4-мĕш курăну.

(Çавсемех. Туйпуçĕ кĕрет).

Т у й п у ç ĕ. Ну, ĕнтĕ, туй çыннисем! Ĕнтĕ ĕçрĕмĕр, çирĕмĕр, ташларăмăр, сикрĕмĕр, хуçасене таптарăмăр Ентĕ тул çутăлнă çулпала пирĕн киле кайма тивĕçлĕ.

Туйачисем. Кайатпăр! Кайатпăр!

Çтаппан. Ей, аслă туйпуçĕ! Авалхи йăлапа çул курки тума ирĕклĕ пулатăн пулĕ?

Туйпуçĕ. Тавтапуç сана, кĕрӳвĕм. Епĕр аслă çулпа килтĕмĕр сана асла хумашкăн, аслă çулпах тухса кайма ирĕк пар.

Çтаппан. Пысăк салам сана, аслă туйпуçĕ.

(Туйпуçĕ ĕçет те тухса кайас умĕн „Хăйматлăх йурри" йурлаŤ; кĕвви „Çĕнĕ Сăрнайра")

Тухаŏ-и те тухмасŏ-и, (2 хут).
Епир киле кайатпăр... (2 хут).

(Туйпуçĕ, ун хыçĕнчен туйачисем йурласа тухма хатĕрленеççĕ).

## 5-мĕш курăну.

(Çавсемех. Туйарăмĕсем çав кĕвĕпех малала йурлаççĕ).

Тавай пире йапала (2 хут)
Трантас кашти авниччен. (2 хут).
Епир панă укçине (2 хут).
Сĕтел ури тайличчен. (2 хут).
Йĕри-тавра пăхрăм та, (2 хут).
Пирĕн кин пекки пĕртте çук,—
Йепле пулма пĕлнĕ-ши?
Ах, кинĕм пукане,
Пĕчĕк кинĕм, пукане,
Çавах илсе кайатпăр!
Ай, йай, йай, йай, йа!..

Йăскар. Апла пулсан, кĕçĕн-çынсене кĕреке умне тăратас та пулĕ...

Хăйматлăх. А, вăл ĕнтĕ ман ĕç пулаŤ. Айтăр хампара. (Туйарăмсем, йулнă туйачисем, музыкçă тата ыттисем те Çтаппанпа хăйматлăх хыççăн тухса кайаççĕ. Кĕрекерисем вырăнтах йулаççĕ).

## 6-мĕш курăну.

(Йăскар. Муçça. Хăнасем).

Й ă с к а р. Ĕçĕр-ха, ырă тăвансем!

Х ă н и с е м. Рахмат. Ентĕ пайан ĕçрĕмĕр те, çирĕмĕр те...

М у ç ç а. Карчăк! Епĕр хĕр паратпăр-çке? Йепле савăнса йурлас мар манăн?

Й ă с к а р. Йурлах ĕнтĕ!

Х ă н и с е м. Çаплах ĕнтĕ, йурлас пулаť.

М у ç ç а (йурлаť). Ĕйан, айан, айаййах та ай, йай, йа-ах...

Й ă с к а р. Ĕçĕр ха çийĕр-ха, савнă тăвансем!

Х ă н и с е м. Рахмат. Ĕнтĕ пайан ĕçрĕмĕр те, çирĕмĕр те...

М у ç ç а. Карчăк! Епĕр ывăла авлантаратпăр-çке? Мĕнма савăнса ташлас мар ман, Муççан?

Й ă с к а р. Ташлах ĕнтĕ.

Х ă н и с е м. Çаплах ĕнтĕ, ташлас пулаť.

М у ç ç а (ташлаť).

Тиллит, тиллит тил ури,
Тил ури мар, хĕр ури,
Айар, ай, йай, йай,
Айар, айар, айара...

(Ташласа пырса пичке çине кайса ӳкет).

## 7-мĕш к у р ă н у.

(Çавсемех. Пăрчкан чупса кĕрет).

П ă р ч к а н (Муççана). Муçça, Муçça!

М у ç ç а. Мĕн?

П ă р ч к а н. Ваҧук вăрçăран таврăннă...

М у ç ç а. Суйатăн?..

П ă р ч к а н. Суймастăп. Авă, хаљ урамра çӳрет, хăй вуљверпех, тет.

Муçça (урăлса кайса). Е-е, тет-тет-те!..
(Тултан „Хĕр йĕрри“ музыкĕ илтĕнме пуçлать).

Пăрчкан. Килеççĕ... (Çынсем хушшинеле пытанать).

## 8-мĕш курăну.

(Çавсемех. Йелҕукпа Çтаппан кĕреке умне пырса тăраççĕ. Туй халăхĕсем).

Хăйматлăх. Муçça шăллăма тăратăр.

Йăскар. Муçça!

Муçça. Мĕн?

Йăскар. Сĕтел хушшине ларас пулать! Кĕçĕнçынсем умра тăраççĕ!

Муçça. Кай!

Йăскар. Йала ан култар!

Муçça. И... йала култарасси тин пуçланать, пĕлетĕн-и? (Тăрса ларать).

Хăйматлăх. Муçça шăллăм, тăрах часрах, çамрăксене пиллĕс пулать,

Муçça. Пиллеместĕп епĕ вĕсене.

Йăскар. Чарăн, йал ухмаххи! Ларнă пултăр халех сĕтел хушшине!

Муçça. Лармастăп та, пиллеместĕп те.

Йăскар. Ах, турă! Персе тултарнă та, нимĕн те пĕлмест тата...

Çтаппан. Муçça пичей! Мĕншĕн есĕ ман кăмăлăма хуçасшăн?

Муçça. Есĕ... кам пулатăн?

Çтаппан. Муçça пичей!

Муçça. Ихи-хи-хи!

Çтаппан. Муçça пичей!..

Муçça. Епĕ, тахçанах Муçça пичей...

Çтаппан. Муçça пичей! Хуна ху ытлашши ан ман! Есĕ манăнне ĕçсе шутран тухса карăн.

М у ç ç а. На, хăвăнне хăвах. Кирлĕ мар мана санăн нимĕн те! (Сĕтел çинчен ереке кĕленчине илсе Çтаппан çине пеме тăрат. Муççана алран тытаççĕ).

Ç т а п п а н. Чарăнатăн пулсан чарăн, Муççа!

М у ç ç а. Епĕ санран хăрамастăп!

Й ă с к а р. Çыхса пăрахас ăна, ухмаха...

М у ç ç а. Епĕ ухмах мар. Епĕ хам пӳртре. Хура-ах!

## 9-мĕш к у р ă н у.

(Çавсемех. Тата Ваҥук кĕрсе тăрат).

П у р т е. Ах!.. (Пуртө тĕлĕнсе хытса кайаççĕ. Йеҙук Ваҥук йенеле пĕрре ура йарса пусат те, ăнтан кайса ӳкме тăрат. Çтаппан Йеҙука тытса тăратат).

В а ҥ у к (тăрсан, тăрсан). Аван туй тăватăр-и?

М у ç ç а. Ваҥук шăллăм! Ах, Ваҥук шăллăм! Вĕсем мана кĕçех çыхса пăрăхатчĕç!

В а ҥ у к. Камсем? (Çтаппанпа Йеҙук çине кăтартса). Акă çаксем-и? Пĕлетĕп, пĕлетĕп... Иккĕшĕ те паллана çынсем.. (Йăскара). Есĕ те хĕр паратăн-и-ха, йĕке хӳре?

Й ă с к а р. Мана ан мăшкăла... Арăмна пĕл...

В а ҥ у к. Пĕлетпĕр! (Йеҙук çинө пăхса хуллен кулса йарат). Ха-ха-ха... Чипер, чипер, кĕçĕн çын. Кĕрӳвĕ те чухăн мар пулас... Арăмне майра пекех тумлантарнă... Мĕн чухлĕ тӳллерĕн ку арăмпăн? Хулăн укçи кăштах та пулсан пана пулĕ?

Ç т а п п а н. Сан укçу мар!

В а ҥ у к (шăлне çыртса). Сан укçу мар! Епĕр сирĕншĕн вăрçăра йун тăкнă чух, есĕр кунта, вăрçă хӳттипе, пĕтĕм йала хăвăр алла çавăрса илсе, ĕççыннине çаратса мул купалатăр. Вăл çитмест, тата салтак арăмĕсене пусмăрлатăр.

Ç т а п п а н. Епĕ сан арăмна сутăн илмен. Вăл хăйех мана савса качча пыраť.

Ваӈук. А!.. Ăҫта епĕ? Камсем есĕр? Виҫĕ уйăх Австрире тыткăнра пурăннă чух епĕ кун пек пуласса шухăшламанччĕ. Ах, килте мана йуратакан йулташ кĕтсе пурăнаҭ, тесе, тыткăнран тухса тартăм. Хамăр йала курсан, чун хĕпĕртенипе, чăтаймарăм—макăрса йатăм. Йала ҫитсен—йалĕпе туй сикет. Кам туйĕ ку?.. тетĕп... Пĕр сăмах та чĕнмеҫҫĕ. Ы-ых... Ман йун тăкăнни сан пуҫ ҫине килтĕр.

Ҫтаппан. Есĕ суйатăн! Есе тыткăнра пулман! Есĕ—тарса пурăннăскер, дезертир! Епĕ сана халех тыттарса йарăп. Тытăр ăна! Тытăр!

Ҫынсем (Ваӈука тытма тăраҫҫĕ).

Ваӈук (араслан пек пуҫне каҫăртаҭ). Сирĕлĕр ман умран! (Сирĕлеҫҫĕ). Ҫитĕ вăхăт, сирĕнпе епĕр урăхла калаҫăпăр, хаӈ епĕ акă ҫакăнтан тепĕр сăмах ыйтам. (Йеӈука). Савнă йулташăм! Паллатăн-и есĕ мана?

Йеӈук (чĕнмест).

Ваӈук. Йе ҫакă ҫурăлса, татăлса пĕтнĕ кăвак тумтирлĕ ҫынна йышăнас теместĕн-и?

Йеӈук (чĕнмест).

Ваӈук. Ма чĕнместĕн? Епĕ окопра ҫĕрсе выртнă чухне те, тыткăнра выҫăхса пурăннă чухне те сан ҫинчен анчах шухăшлаттăмччĕ. Манăн пысăк ҫунат ӳстерсе, сан умна вĕҫсе килес килетчĕ. Епĕ саншăн тыткăнран тухса тартăм. Австрин аслă вăрманĕнче тискер кайăксемпе пĕрле пурăнтăм. Хурал тăракансене улталаса, аслă Дунай шывĕ урлă ишсе каҫрăм. Епĕ санран пĕр виҫĕ сăмах та пулин илтме тивĕҫлĕ пулĕ, тесе шаннăччĕ...

Йеӈук. Ей, телейсĕр Ваӈук. Епĕ те сана нумай кĕтрĕм. Нумай саншăн куҫҫуӈ тăкрăм. Виҫ ҫул хушши ес килессе шанса тăтăм... Анчах, есĕ вилнĕ тесе ҫыру килсен, манăн шанчăк татăлчĕ... Пурнăҫ пĕтрĕ—

шыва сикрӗм, Ҫтаппан шывран хӑтарса, ман кӑмӑла ҫавӑрчӗ.

Муҫҫа. Е-те-те-те! Йеђук, сана шывран епӗ кӑларнӑччӗ мар-и?

Йӑскар. Кунта мана та лектерӗҫ (пӑрӑнать).

Ҫтаппан. Тытӑр ҫакӑ таркӑна! Уретник! Старӑста! Хӑвӑр ӗҫӗре мантӑр-ши? (Лешсем пӗлми ӳсӗр лӑрласа лар аҫҫӗ).

Ваңђук (вођвер кӑларсэ). Ан тапранӑр вырӑнтан. (Аллине йерите хӑпартса Ҫтаппана тӗллеме пуҫлать). Епӗ сапа авлантарас, тетӗп, Ҫтаппан!

Ҫтаппан. М-мхм... (Чавсине ҫӗклесе тытса Ваңђук ҫине кашкӑр пек пӑхса тӑрать, уптан сиввӗн кулса йӑрать).

Муҫҫа. Ваңђук шӑллӑм, персе ан варалан.

Кӗрекепуҫ йулташӗ. Йун ан тӑк, Ваңђук...

Ваңђук (аллине усса). А, Ваңђук... Ваңђукӑн чӗри сӳнмен... (Йеђука). Ну! Пӑрахатӑн-и есӗ ҫакӑ намӑс пӗркенчӗке, чухӑн тарӗпе тӗртнӗ, чухӑн куҫҫулӗпе шуратнӑ ҫак илемлӗ тумтире?

Йеђук. Пӑрахӑттӑм, Ваңђук, халӑх мӗн калӗ? Венчетре тӑнӑ-ҫке Ҫтаппанпа? Телей ҫавӑн пек пулчӗ пуђ!..

Ваңђук. Пирӗн телей малала. Чараклана хура пӳртсене, чӑрик-чарик хапхасене, ҫӗтӗк-ҫатӑк ҫатансене, ҫӗре лапчӑтса тӑракан Ҫтаппан шатрун ҫуртне, унӑн чаплӑ хӳмине ӗмӗртенпе пуйансен ирсӗр ултавне хуплаа тӑракан ҫак тискер хӳмене тӳнтерсе, ҫӗнӗрен пурнӑҫ тума пуҫласан, пирӗн телей пуҫланӗ. Ҫтаппансен шӑпи тулӗ, чухӑнсен чӑтӑмӗ татӑлӗ, ҫак хӳмене ишӗпӗр!

Муҫҫа. А, ку хӳмене ишсен пӑсмасть пуђ те-ха вӑл. Йапун вӑрҫи вӑхӑтӗнче тапӑннӑччӗ те... (Уретниксем ҫине кӑтартса). Ҫаксем чарчӗҫ. А, Йеђук кинӗм, Ваңђук патнех таврӑнан пулӗ...

Й е љ у к (чёб мест).

М у ç ç а. Хаљ ёнтĕ санăн ик упăшка. Иккĕшĕнпе те венчетре тăнă.,. Иккĕшĕнчен пĕрне суйласах пулаť ёнтĕ. Вађук хамăр çын, Вађуках суйлан пуљ.

Й е љ у к (пĕркенчĕке, хушпуна хывса пăрахса). Вађук! Вађук! (Кăкри çиве пырса ўкет. Телейлĕн тухса кайаççĕ).

М у ç ç а (Вађукпа Йеђука ăсатса Çтаппан патне пырса тăрăхласа): Çтаппан кĕрў, кĕреке курки паран пуљ?

Ç т а п п а н. Еп сана! (Пуканпа пеме тăраť).

М у ç ç а. Е-те-те-те-е! Илтрĕн-и, Вађук шăллăм мĕн каларĕ? Çак хўмесене ишмеле, тет...

Ч а р ш а в.

---

## „ЙАЛТА“ ПЙЕССĂРА ЙУРЛАМАЛИ ЙУРĂСЕМ.

### ПАХЧА КАЙĂК.



Пах - ча ка - йăк, сар ка - йăк, сар ка-йăк.
Хам - пар умĕнчи вир пăтти, вир пăтти.
Пе - тĕрпе - ле Ма - йу - ка, Ма - йу-ка.
Пе - тĕрпе - ле Ма - йу - ка, Ма - йу-ка.

---



Ах! Са - лат сап - са тыт - рă - мăр,
Ах! У - лă - хай - са çи - йес - чĕ.
Ах! Чуп-ту - ни - не кур - тă - мăр,
Ах! Си - вĕн - ни - не ку - рас - чĕ

### ЕЛШЕЛ УРАМ.



Ел - шел у - рам, ас - лă у - рам - та.
Пи - кет - ле - се хĕ - рĕ - сем те.



Ел - шел у - рам, ас - лă у - рам.
Пи - кет - ле - се хĕ - рĕ - сем.



Мат - тур йал çак Ел - шел.
Мат - тур йал çак Ел - шел.



У - ра - ма тă - рăх пӳрчĕ - сем.
У - ра - ма тă - рăх пӳрчĕ - сем.

3. Епĕр вăййа тухсассăн та,
Епĕр вăййа тухсассăн,
Çак аслă, çак аслă,
Çак аслă урам йанăрать.

4. Авăт, куккук, хытăрах та,
Авăт, куккук, хытăрах,
Чарăнасси инçе мар,
Чарăнасси инçе мар.

---

## СĂПКА ЙУРРИ.



Ђа - ни - не, ту - ђи - не, а - чи - не,



У - ри - не, та - ппи, та - ппи çӳ - ре - ме,



Кă - рăс, кă - рăс ту - тар - ма

---

# СУТРА.

ПĔР СЫПĂКЛĂ КОМЕДИ[1].

**ВЫЛЉАКАНСЕМ:**

**Миравай**—сутйе.
**Ç̧екретар.**
**Ухгеркке** } сутлашакансем.
**Сăпани**—унăн кинĕ }
**Катăк Çăвар** } çвитетлĕсем.
**Кайура Крахйанĕ** }
**1-мĕш çетатлĕ.**
**2-мĕш çетатлĕ.**
**Сута пынă çынсем.**

Сценă тĕпĕнче алăк. Сулахай йенче тепĕр алăк. Сылтăм йенче хĕрлĕ пустав витнĕ сĕтел; сĕтелĕ тăрăхăшпе куракансем йенелле тăрат̆. Сĕтел хыçĕнче виçĕ пукан, миравайпа çетатлĕсем валђи, Çĕтел çинче саккун кĕнекисем, сут ĕçĕсем, чернилницă, тата сутйе вăчăри. Кăшт ăйаккарах тĕпĕр пĕчĕк сĕтел, вăл—çекретар валђи. Тĕп алăк паттĕнче, сылтăм йенче—шкап, сулахай йенче—йăвăç диван. Çтена çинче сехет, тĕслĕрен хаклă картинкăсем.

Сута килнĕ çынсем диван çинче тăваттăн кăлаçса лараççĕ. Калаçни куракансене илтĕнмест. Ларакансенчен пĕри чĕлĕм туртат̆, тепри суханпа çăкăр çийет. Калаçса ларнă чух сулахай алăкран çекретар тухат̆. Алăк хыçĕнче сута килнĕ çынсем шавлани илтĕнет.

**1-мĕш курăнни.**

Çекретар, тата тăватă çын.

Çекретар. Сутйесем килеççĕ. Тухăр кунтан!
(Ларакансем тухса кайаççĕ, алăк урлă каçсан, çаврăнса пăхсă тăраççĕ).

---

[1] Комедин прологĕ-фелйетонĕ пирки редактăр асăрхаттарнине вула.

## 2-мĕш курăнни

Çекретар.

Çекретар. Фу, ты... Пайан халăх пасарти пекех... Кăритор çитмен вĕсене, кунта кĕрсе ларнă тата! Йепле! (Ларать. Кăсйаран сехет кăларса пăхать. Çтена çинчи сехет çине пăхать. Хăйĕн сехетне хăлхи патне тытса пăхать).
Виднă, пайан та сут каçа йулать. Вăхăт—виççĕрен иртсе тăвата сехет çине кайнă. Сутйесемшĕн пулсан мĕн, лараççĕ вĕсем пăхса, а ман, çекретарĕн, ал хытса кайиччене çырас пулать. Пайан та—çыр-çыр, çыр-çыр,—шĕвĕр пӳрне лапчăнсах ларчĕ. Епĕ, хам сутйе пулсан, нихăçан та пĕр кунтах вăл таран нумай ĕç пăхас çук. Йар ăна пĕр çичĕ, ай, сакăр ĕç. Вăл пур, нихăçан та вуниккĕрен кайа лартмасть. Пайан вунвиççĕ... Чортовă дӳжина! Хе-хе-хе! Шуйттан дӳжĕнĕ тухсан нихăçан та ахаль иртмест. Йе кулмали ĕç тухать, йе тата макăрмали. Пайан мĕн пулĕ-ши? Кам ĕçне малтан йарас-ши? Е-е... Ухтеркенне йарам-ха. Ку —тĕлĕнтермеле старик. Зайавлени парса хăварнă чухне те шалт култарса пĕтерчĕ. (Сулăхăй алăк çинеле пăхать). Ах, килеççĕ! (Ура çине тăрать),

## 3-мĕш курăнни

Çекретар, миравай, 1-мĕш тата 2-мĕш çетатлĕ.

(Миравай, 1-мĕш тата 2-мĕш çетатлĕ сĕтел хушшине пырса лараççĕ. Вĕсем ларсан, çекретар те ларать. Миравай куçлăх тăхăнать, вăчăрине çакса йарать, унтан аллипе сулса çекретаре хушать).

Çекретар (тăрса). Сут пуçланчĕ!

Миравай. Слушается дело о семействе гражданина деревни Кеевметь-Пусь Артемия Ухтеркина. Позвать сюда Ухтеркина!

Çекретар (алăк патне пырса). Ухтеркин Артемий! Артемий Ухтеркин!

Ухтеркке (сценă хыçĕнче). Я-х!

Çекретар. Кĕр часрах!

Ухтеркке. Кĕретĕп, халех!

### 4-мĕш куранни.

Çавсемех, тата Ухтеркке

Ухтеркке (алăкра тăракан çынсене чавсисемпе сирсе кĕрет). Ы-ый çынĕсем килсе тулнă, иртсе кĕмеле те мар. Йарччĕ-ха, кĕме памастăн... Йар, тетĕп!..

Çекретар. Йарăр ăна!

Ухтеркке. Ĕнтĕ кĕтĕм, ывăлăм, кĕтĕм. (Çĕлĕкне хывса хул хушшине хĕстерет те, сутйесене ал пама тăрат, ăна ал памаççĕ). Страствăй!

Миравай. Мĕн?

Ухтеркке. Страствăй, тетĕп!

Миравай. Сутра ал памастăп.

Ухтеркке. Çаплах ийĭа, çаплах!

Миравай. Тăр вăт унта.

Ухтеркке. Йурат, тăрам.

Миравай. Позвать обвиняемую Степаниду Ухтеркину!

Çекретар. Ухтеркина Степанида! (Хытăрах). Степанида Ухтеркина! Пур-и вăл унта?

Сасăсем. Пурччĕ...

Çекретар. Чĕнĕр ăна.

Сасăсем. Сăпани! Сан йат тухрĕ, кĕр часрах!

Сăпани (сценă хыçĕнче). Кĕретĕп, халех.

Çекретар. Час!

### 5-мĕш куранни.

Çăвсемех, тата Сăпани.

Сăпани (алăкран аран хĕсĕнсе кĕрет). Йар-ха, пăйахам, часрах! Ах, турă, хĕстерсе лартрĕç...

Çекретар. Есĕ-и Степанида Ухтеркина?

Ухтеркке. Иййа, ман кин вăл, усал.

Миравай. Не разговаривать!

Ухтеркке. Не расковору...

Сăпани. Кам, епе-и?

Çекретар. Есĕ çав, тата камран ыйтатăп.

Сăпани. Епех пулĕ терĕм. Килте те Сăпани теччĕç те...

Çекретар. Ай, сута килсен, пукане пултăн-им?

Сăпани. Пĕлмерĕм.

Çекретар (витлесе). Пĕлмерĕм!

Миравай. Степанида Ухтеркина!

Сăпани. Мĕн?

Миравай. Тăр маларах... Хунеçӳ çумнерех...

Сăпани. Йурать, тăрам. (Ухтеркке çумне пырса тăрать. Ухтеркке ăна чавсипе тĕкет. Сăпани хирĕç тĕкет).

Ухтеркке. Ан тĕккеле! Мĕн, хăратас тетĕн-и шăрчăк!

Сăпани. Ăçта епĕ сана тĕкрĕм? Есĕ ху малтан мана тĕкрĕн!

Ухтеркке. Ăçта епĕ сана малтан тĕкрĕм?

Миравай. Ан çĕмĕрлĕр кунта! Кунта, сут вĕт!

Ухтеркке. Çаплах, иййа, çаплах...

Миравай. Не разговаривать!

Ухтеркке. Не расковору...

Миравай. Позвать сюда свидетеля Герасима Криворотова.

Çекретар. Криворотов! Герасим Криворотов! Пур-и вăл унта?

Çекретар. Чĕнĕр ăна!

Сасăсем. Катăк Çăвар! Сан йат тухрĕ! Кĕр часрах!

Катăк Çăвар (сцена хыçĕнче). Мы!

Çекретар. Кĕр часрах!

Катăк Çăвар. Кĕретĕп, халех!.. Çул пар, ей!..

**6-мěш курăнни.**

**Çавсемех, тата Катăк Çăвар.**

Çекретар. Криворотăв есě-и?

Катăк Çăвар. Это так точчěн!..

Çекретар. Мěн точчěн?

Катăк Çăвар. Тойěç, Криворотăв—мы, сначчăт... чăвашла каласан—Катăк Çăвар...

Миравай. Криворотов!..

Катăк Çăвар. Чево исвољте?

Миравай. Тух тула.

Катăк Çăвар. Мěншěн? Ёпě кирлě пулмарăм-им тата?

Миравай. Есě çвидетлě...

Ухтеркке. Çаплах, иййа, çаплах, хоспотин миравай, Катăк Çăвар, вăл ман çвитетлě. Вăл сана пěтěмпех каласа пăраť...

Миравай. Малчать!

Ухтеркке. Çук, урăх шарламастăп.

Миравай. Криворотов...

Катăк Çăвар. Чево исвољте?

Миравай. Так вот, есě çвидетлě..

Катăк Çăвар. Так точчěн...

Миравай. Мěн таклаттаратăн, улакайăк мар вěт есě?

Катăк Çăвар. Никак нет, хоспата причашнăйě!

Миравай. Так вот, итле есě малтан, мěн калатăп епě сана. Есě çвидетлě, а çвидетлěсенчен кайран ыйтатпăр, çавăнпа есě хаљ тух.

Катăк Çăвар. Слушайус, хоспата причашнăйě! (Тухаť).

Миравай. Ступай. Позвать сюда свидетельницу Агрипину Каюрину.

Çекретар. Агрипина Каюрина!

Крахйан (сцена хыҫĕнче). Пур, пур, кунта!

Ҫекретар. Кĕр часрах!

Крахйан. Кĕретĕп, халех...

**7-мĕш курăнни.**

**Миравай, 1 мĕш ҫетатлĕ, 2-мĕш ҫетатлĕ, ҫəкретар, Ухтеркке, Сăпани тата Крахйан.**

Крахйан. Пăйахам, ҫул пар-ха, епĕ кĕрем...

Ухтеркке. Крахйан, кунтарах кил, хĕрĕм...

Миравай. Не разговаривать!

Ухтеркке. Не расковору...

Миравай. Малчать!

Ухтеркке. Ҫук, урăх шарламастăп.

Ҫекретар. Агрипина Каюрина есĕ пулатăн-и?

Крахйан. Епех пулĕ, терĕм. Килте те Крахйан теччĕҫ те...

Миравай. Тух калла.

Крахйан (тухма тăрат, унтан ҫаврăнса). Ман киле кайас-и мĕн апла?

Миравай. Киле мар, тула тух. Есĕ ҫвидетлĕ...

Ухтеркке. Ҫаплах, ийӳа, ҫаплах, хоспатин миравай. Крахйан вăл ман ҫвитетлĕ. Епĕ ăна качча илес тетĕп.

Миравай. Ухтеркке! Калатăп сана, ан шарла тесе. Мĕнле тăна кĕместĕн есĕ?

Ухтеркке. Ҫук, урăх шарламастăп.

Миравай. Чарăн! Мĕнле туту ывăнмасť санăн?

Ухтеркке. Ара, тутан унăн шăмми ҫук ҫав.

1-мĕш ҫетатлĕ. Ан йантра! Мĕскер пелкетĕн!

Крахйан. Тухас-и, еппин?

Миравай. Тух та, ниăҫта та ан кай, сана тепре чĕнетпĕр.

Крахйан. Йураť. Тухам, еппин. (Тухаť).

**8-мĕш к у р ă н н и.**

Çавсемех, Крахйавсăр пуçне

М и р а в а й. Ну-с, все явились?

Ç е к р е т а р. Все.

М и р а в а й. Та-ак... следовательно начнем! (**Куçлăхне йусаť, ĕç уçаť те, вулаť**). Гражданин Артемий Ухтеркин заявил мне, мировому судье, что третьего дня сноха, Степанида, выгнала его из собственного дома, причем кинула ему в спину сухим навозным комом...

У х т е р к к е. Çаплах, иййа, çаплах...

1-мĕш ç е т а т л ĕ. Ан шарла, чăрмантаратăн.

У х т е р к к е. Çук, чăрмантармастăп; мĕншĕн чăрмантарас. Есĕ, хоспатин миравай, вулах, епĕ урăх шарламастăп.

М и р а в а й. Говорят тебе, не разговаривать...

У х т е р к к е. Не расковору.

М и р а в а й. (**Ухтеркке çине хытă пăхаť**). Гм...

У х т е р к к е. (**куракансем йеннеле**). Йытă çийешшĕ чĕлхи, нимĕн те çавăрса калаймасť. Калмăкла каланă пекех тухаť.

М и р а в а й. Мĕн мăкăртататăн есĕ унта?

У х т е р к к е. Сăмаха çавăрса калаймарăм-çке. Пирĕн чĕлхи çыпăçмасť.

М и р а в а й. Ну, ладно. Урăх ан чăрмантар.

У х т е р к к е. Çук урăх чăрмантармастăп...

М и р а в а й (**хул пуççине силлентерет**). А потому он, Ухтеркин, просит привлечь сноху, Степаниду, к законной ответственности... Причем указал свидетелей, одножителя Герасима Криворотова и одножительницу Агрипину Каюрину.

У х т е р к к е. Çаплах, иййа, çаплах.

М и р а в а й. Ухтеркке, каçармастăн-и есĕ кинўне? Каçар, вара ĕçĕ те пĕтет.

Ухтеркке. Çук, çу-ук! Каçармастăп! Ман каçарма вăй çитмест, хоспатин миравай.

Миравай. Мĕнле вăй çитмест? Каçарма вăй кирлĕ мар вĕт?

Ухтеркке. Кирлĕ çав, хăспатин миравай! Мана вăл тислĕк муклашкипе печĕ те, ман халĕ те çурăм ыратать, кукăрăлма та памасть. Епĕ тепре авланас теттĕмччĕ, халĕ ĕнтĕ, çурăм ыратнă пирки, авланма та чаранса тăтăм.

Миравай. Каçармастăн пулсан, сутне тăватпăр!

Ухтеркке. Ара! сутне ту çав, сутне ту! Ăçтан каçарас ман ăна, хăспатин миравай! Вăл мана çăкăр та памасть. Пĕлтĕр пĕрре çăкăра алранах туртса илчĕ...

Миравай. Катайа ан кай!

Ухтеркке. Катара мар, хăспатин миравай, хамăр килтех туртса илчĕ. (Миравай аллипе сулать).

Ухтеркке. Чим-ха, хăспатин миравай, каласа пĕтерем... Çăкăра алран туртса илчĕ те, йатлаçма пуçларĕ: Ы-ы-ы! есремет пырĕ! Çийессе те çын пек çиме пĕлместĕн, лаша пек хыпатăн, тет. Сан тĕпсĕр катка хырăмне çăкăр мар, салат пăтти чыхса тултарасчĕ!—тет.

Миравай. Калатăп сана: пĕлтĕрхине ан тапрат.

Ухтеркке. Çаплах, ара, çаплах. Пĕлтĕрхине тапратмастăп...

Миравай (аллипе сулать).

Ухтеркке. Чим-хе, каласа пĕтерем-хе. Ийййа, çапла каларĕ те, вара, мĕн, ман алри çăкăра кăрт! туртса илчĕ.

Сăпани. Çук, епĕ унтан çăкăр туртса илмен. Суйать вăл, ан ĕненĕр ăна.

Ухтеркке. Ара, туртса илтĕн çав!

1-мĕш çетатлĕ. Ан çĕмĕрлĕр!

Ухтеркке. Çук, çĕмĕрлместпĕр...

Миравай. Ухтеркке, кала есĕ мĕн кирлине.

Ухтеркке. Çаплах, ара, çаплах. Мĕн кирлинех калатăп. Çăкăра ман алран туртса илчĕ те, вара йытта: Саккул! на!—терĕ. (**Миравай аллипе сулать**).

Ухтеркке. Чим-хе, каласа пĕтерем-хе. Вара, йытти ман хырăма кĕрес çăкăра кап! хыпрĕ. Епĕ çăкăрне кайала туртса илесшĕнччĕ, йытти хампар айне тарса кĕчĕ. Мĕншĕн вилес мар вăл йытăн! Вăл та пулин мана çын вырăнне хумарĕ...

Сăпани. Мĕн суйатăн, вилменскер! Ăçта епĕ çăкăрне йытта патăм? Хам çирĕмиç. Йыттине те пурăнас йытта вĕлертĕн. Сасси лайăхчĕ!

1-мĕш çетатлĕ. Ан шарла! Ыйтăçĕ акă санран та.

Ухтеркке. Епĕ—ватă çын. Епĕ—суймастăп! Есĕ ху суйатăн! Ы-ы суйа çăмхи!

Миравай. Есĕр йытăпа суйа çинчен сывлăша ан йанратăр. Иксĕр хушăрта мĕн пулнине калăр. Ухтеркке, есĕ кала.

Ухтеркке. Çаплах, иййа, çаплах, хăспатин миравай! Есĕ халĕ курма-ан ман кин йанранине. Пĕр пелкеме пуçласан, чĕлхи те ывăнмасть, унăн, çаплах пелкет.

Миравай. Калатăп сана, Ухтеркке, айаккала ан пăрăн. Есĕ мана ĕç çинчен кала!

Ухтеркке. Çаплах, ара, çаплах; айаккала пăрăнмастăп, ĕç çинченех капатăп. Пăрăнсан май килмерĕ вара вăл. Астумастăн-и, хăспатин миравай, Çавал арманче пĕлтĕр хуçа мелникĕ пăрăс çинчен айаккала пăрăннă та... (**Миравай аллипе сулать**).

Ухтеркке. Чим-хе, каласа пĕтерем-ха. Пăрăс çинчен айаккала пăрăннă та, арман хыçне шампăлт! чăмнă. Вăт, хăспатин миравай, çапла вăл айаккала пăрăнсан.

Миравай. Ун çинчен ыйтмаççĕ санран. Сана кину мĕн турĕ, çавна кала!

Ухтеркке. Е-е...а, хаҘ те! Кин-и? Кин кайран ҫăкăрне чармарĕ вара...

Миравай. Есĕ кун ҫинчен мар! Виҫĕмкун мĕн пулни ҫинчен кала.

Ухтеркке. А, а... хаҘ те! Виҫĕмкун пулни... Е-е... Виҫĕмкун ҫăкăр ҫинчен мар, кукăҘ ҫинчен тухса кайрĕ мар-и, катăршнай пуҫĕ...

Миравай. Ха-ха-ха! Кала, апла пулсан, кала.

Ухтеркке. Иййа, кукăҘ ҫинчен тухса кайрĕ ҫав. Мĕн, кин кукăҘ пĕҫернĕ те, кукăҘ ҫийет. Епĕ пур, текех тип ҫăкăр паккатăп; ҫăкри те пулин кăнкăвак кăвакарса кайнă. Хăнкăла шăрши ҫурат̆, сăмса патне те леҫмеле мар.

Сăпани. Суйат̆ вăл. Ан ĕненĕр ăна.

1-мĕш ҫетатлĕ. Ан шарла...

Ухтеркке. Епĕ—ватă ҫын! Епĕ—суйма́стăп. Есĕ ан пӳл мана, старикре... Ҫук, хăспатин миравай, суймастăп. Вăл хăй суйат̆. Епĕ нихăҫан та суйа суймастăп. Есĕ мана ĕнен, ватă ҫынна.

Миравай. Ну, малала кала.

Ухтеркке. Ҫаплах, ара, ҫаплах; малалах калатăп... Ман кин кукăҘ пĕҫернĕ те, кукăҘ ҫийет. Кине-ĕ-ĕ-м! терĕм, мана, ват ҫынна, кукăҘ шăл ҫеммиччĕ те, терĕм. Сан кукăҘ тутлă-ши? терĕм. Ҫапла каларăм анчах, мана кин—хар-р! кăшкăрса пăрахрĕ. Ҫăха-ан-н! терĕ,—кукăҘ тата сана, терĕ, сана мунча чулĕччĕ!—терĕ.

Сăпани. Ăҫта апла каларăм! Мĕн суйатăн, вилмен? Суйат̆ вăл, ан ĕнерĕн ăна. Ҫăхан, тесе епĕ ҫăвар та уҫман. Вăл хăй мана темскер-тепĕр каласа пĕтерчĕ. Йепле! Сăмаконкă персе тултарнă, хăсасшăн йеклетсе ҫӳрет. КукăҘ тата сана, самăконкă карланкине!

1-мĕш ҫ е т а т л ĕ. Есĕ тăхта-ха, ан шарла. Ыйтĕҫ акă санран та.

У х т е р к к е. Ара каларăн ҫав: ҫăхан пырĕ! терĕн. Есĕ апла каламан пулсан, кукăљне те ҫинĕ пулăттăм. Вара пĕр кăмака кукăљне ху пĕчченех хыпса йатăн. Есĕ ху ҫăхан пырĕ. Кам пур сан пек йалта, йакăлти?

М и р а в а й. Мĕн кĕрлетĕр? Есĕр кунта иксĕр йатлаҫма килмен вĕт. Ухтеркке! Кала есĕ чипер: кину сана чăнах килтен хăваласа кăларса йачĕ-и?

У х т е р к к е. Ара, кăларчĕ ҫав, кăларчĕ. Вăт, тупата туршăн, кăларчĕ. Хăваласа кăларсах йачĕ!

М и р а в а й. Ухтеркке! Хăҫан вăл сана ҫурăмран тислĕкпе печĕ?

У х т е р к к е. Мĕн? Хăлхана кĕримарĕ ҫке ывăлăм.

М и р а в а й. Ек-кей! Епĕ ăҫтан сан ывăлу пулатăп?

У х т е р к к е. Ҫаплах, ара, ҫаплах. Ухмах мар-и епĕр. Хут вĕрентмен пире. Пĕр ҫĕр чавалама вĕрентнĕ, ҫĕр чаваласах вилетпĕр. Вилсен вара, ҫăвара карса выртатпăр.

М и р а в а й. Итле! Кину сана хăҫан ҫурăмран тислĕк муклашкипе печĕ?

У х т е р к к е. Ийна! Печĕ ҫав, хăспатин миравай, печĕ. Кукăљ ҫисе тăранчĕ те, сăрлă пыр, кăмака ҫине ҫывăрма хăпарса выртрĕ, кушак ҫури пек... (Миравай аллипе сулать).

У х т е р к к е. Чим хе, каласа пĕтерем-хе... Хăпарса выртрĕ те, мĕн, хăрлатта-арчĕ вара ыйăха. Харр-харр-хар! тутарать. Ку кин ман ҫывăрса вилсех кайăть-и-ха, тетĕп. А, вăл пур, ҫаплах хăрлаттарать. Куна пĕлнĕ пулсан, вилтĕр пулачче пĕрех хутчен.

С ă п а н и. Мĕн суйатăн, суйеҫĕ! Ăҫта епĕ ҫывăртăм? Ахаљ анчах выртрăмиҫ! Есĕ ху, ватă сысна пек, кунĕн-ҫĕрĕн ҫывăратăн, выљăх-чĕрлĕх пăхма та тухмастăн вара.

Ухтеркке. Есĕ ан пӳл мана, старике. Епĕ йĕрки-пе калатăп! Итле-хе, хăспатин миравай. Ыйăхран тăчĕ те, шыв ĕçме тăчĕ, шыв çук... Вара каллех мана йат-лаçма пуçларĕ. Ы-ы, сулланчăк! тет. Каткара шыв çук, шыв патне те каймастăн, уссăр кĕлетке, тет. (Миравай аллипе сулаҫ).

Ухтеркке. Чим-хе, каласа пĕтерем-хе. Ара, пăхчĕ-ха, çапла каламала-и унăн мана, вата çынна? Ху кай шыв патне, терĕм. Есĕ--çамрăк çын, терĕм. Кăмака çинче манăн, ватă çыннăн, выртас пулаҫ, терĕм. Çапла каларăм ку... Унччен те пулмарĕ, кин кăмака çинчен йалт! сиксе анчĕ. Вара пуçа çĕклеме те памарĕ: пӳртрен ӳпне те питне тĕксе кăларса йачĕ.

Сăпани. Ăçта епĕ сана тĕксе кăларса йатăм? Мĕн суйатăн, пĕтескер? Есĕ ху мана малтан кутран тапрăн.

Ухтеркке. Ăçта епĕ сана кутран тапрăм? Есĕ ху мана малтан çатма аврипе тутаран тĕкрĕн. Асав шăл-не катса пăрахрăн та, пыра ларса кĕçех вилеттĕм.

Сăпани (Ухтерккене пырса тутинчен тĕкет). Ы-ы, кӳп-менскер!

Ухтеркке. Айай! пĕтерчĕ, пĕтерчĕ!..

Миравай (аллипе сĕтел çине çапса). Ан çĕмĕрлĕр кунта! Кунта сут вĕт! Ха, йепле вĕсем тупнă йантрамали?.. Шăп!!! Ухтеркке! Кала есĕ чипер мĕн кирлине!

Ухтеркке. Çаплах, ара, çаплах! Мĕн кирлинех калатăп..

Миравай. Санпа пуплеме, старик, малтан апат çийес пулаҫ. Унсăрăн санпала пĕтĕмпех аптрамала.

Ухтеркке. Çаплах, ара, çаплах! Выçă хырăмпа камăн пуплес килĕ. Пайан кунта ларса каç та пулаҫ, пайан хырăм тахçанах выçнă. Апатсăр ăçтан пурăнатăн? Апат вăл вăй-питти вĕт. Есĕ хуҫ нумайах çийей-

местĕн пулĕ, хăспатин миравай, а епĕ-тĕк!... (Миравай аллипе сулать).

Ухтеркке. Чим-хе, каласа кăтартам. Ĕлĕкрех ман пек çийекен йалĕпе те çукчĕ. Ну, вара хам та çимелипех çийеттĕмччĕ!.. Çăкăра урлă тытаттăмччĕ те, пăх-ха, хăспатин миравай, акă çапла тытаттăмччĕ те (сĕтел çинчи кĕнекене илсе çыртса кăтартать), шатăрт! çыртаттăмччĕ. (Миравай аллипе сулать).

Ухтеркке. Чим-хе, каласа пĕтерем-хе! Вара пĕр çăкăра пĕтĕмпех çисе йараттăмччĕ. Çисе йарсан, виçĕ алтăр шыв ĕçеттĕмччĕ. Вара хырăм акă çапла сарăлса кайаччĕ...

Миравай. Ан пупле ытлашши!

Ухтеркке Чим-хе, каласа пĕтерем...

Миравай. Ав!..

Ухтеркке. Çук, урăх тарламастăп...

Миравай. Санран ун çинчен ыйтмаççĕ вĕт!

Ухтеркке. Тăнланаймарăм çке, ывăлăм! Темскер çинчен ыйтатăн есĕ манран Хăлхи йӳплĕ мар-и манăн. Пĕр йӳппинчен кĕрет те, тепĕр йӳппинчен вĕлт! тухса кайать... (Хуллен). Епĕ пĕчĕкçĕ чухне ман хăлха шăтăкне йӳплĕ хӳре кĕнĕ, тет. Çавăнпа ман хăлха йӳплĕ пулнă, тет. Ăна епĕ анчах мар, йалĕпелех пĕлеççĕ.

Миравай. Аптрамала санпала. Кала есĕ, вара, малала: кинӳ мĕн турĕ сана.

Ухтеркке. Малала çаплах: çатма аврипех çапать.

Миравай. Çапнăшăн ăна ывăлу мĕншĕн чармасть. Сан кинӳн упăшки пулĕ вĕт?

Ухтеркке. Упăшки? Упăшки çук ça ав... Салтака кайрĕ. Пĕлтĕр вĕсем шăкăртах вун çын кайрĕç. Пĕри ман Петĕр, тепри Кайура Куçми, тепри Шукăль Микулай, тепри Мускав Ентри, тепри Çĕнçĕр Тинехпи ..

Миравай. Ытлашши пуплетĕн!

Ухтеркке. Çук, каккуй, ытлашши те, тата нумай... Тата тепри камччĕ-ха... Е-е, тепри Мăнтăр Саваҫи.. Палламастăн-и есĕ ăна, хăспатин миравай? Хăш чухне вăл сирĕн пеккисене аш сутса çӳрет.

Миравай. Мăнтăр Саваҫипе мĕн тăвас пирĕн. Сана ун çинчен ыйтмаççĕ вĕт. Кала есĕ хăвăн ывăлу çинчен.

Ухтеркке. Е-е... Ман ывăл-и... Ман, киле таврăнаймарĕ, салтакрах пуçне çирĕ, мăнтарăн ачи... (Хул ен) Ăна унта пунттă тунăшăн персе пăрахнă, тет. Есĕ хăспатин миравай, никама та ан кала.. (Хытă). Епĕ вăл вилнине тĕлĕкрех куртăм. Çĕрпӳ хули çунат, пек. Урам туллийех çын утат, пек... Пайан пасар мар-çке, мĕн çынĕ утат, ара, ку? тетĕп, пек. Унтан, çумăр çават, пек. Çумăр та мар, çынсем те мар, пек. Темскерсем çĕрпе пĕлет хушшинче утаççĕ, пек. (Миравай аллипе сулат).

Ухтеркке. Чим-хе, каласа пĕтерем... Епĕ: мĕн? тетĕп. А вăл, пирĕн Петĕрсем пунттă туни пулнă..

Миравай. Кинӳ çинчен кала.

Ухтеркке. Çаплах, ийй̆а, çаплах. Кин çинченех калатăп. Уншăн пулсан, хут—вил, хут—чĕрĕл. Вăлуншăн пулсан, хăнт! та тумаст. Пĕр пасара йакăр, татма пĕлет те, шукăҫ, тата мана кышлама пĕлет. Вара, то тех пор çĕмĕрлет, то тех пор çĕмĕрлет: йытă пекех йантрат, çăвар уçма та памаст.

Сăпани. Ан ĕненĕр ăна. Суйат вăл. Пĕтĕмпех суйат. Епĕ ăна йатлаçассине те нихăçан та йатлаçман, тата килтен те нихăçан та хăваласа кăларман.

Ухтеркке. Ийй̆а, кăлартăн, хăваласа кăларсах йатăн. Есĕ хăваласа кăларман пулсан, епĕ сута та памастăмччĕ.

Миравай. Ухтеркке! Есĕ кинӳпе ан пупле, пире кала!

Ухтеркке. Çаплах, ийй̆а, çаплах! Сирех калатăп. Кин мана чăнахах пӳртрен хăваласа кăларса йачĕ. Суймастăп. Кăларса йачĕ те, епĕ хуллен пусма картлашкипе çĕре анаттăмччĕ. Кин хыçран сикрĕ тухрĕ те, мана ĕнсерен тӳ-ӳнт! тутарчĕ. Вара епĕ пăлтăрпалтăр! чикеленсе кайрăм, шыв лапашкине чăпăлчапăл! кĕрсе ӳкрĕм. Мĕн, лартăм вара унта...

Сăпани. Аçта епĕ сана тĕксе йатăм? Ы-ых, пĕтескер, суйа суйаӑ тата!..

Ухтеркке. Ара, тĕксе йатăн çав. Есĕ тĕксе йаман пулсан, шыв лапашкине, мĕн, епĕ, ай, йури кĕрсе лараттăмччĕ. Йтле-хе, хăспатин миравай. тунма пуçларĕ, усал. А епĕ, ватă çын, суйа суймастăп. Ара, вăл тĕксе йаман пулсан, епĕ йĕме те йĕпетместĕмччĕ, кута та вараламастăмччĕ. Ман хаљ те кут хуп-хурах. Ĕненместĕн пулсан, пăх-ха, хăспатин миравай. Маншăн пулсан суйа çук! (Çавăрăнса кăтартаӑ).

Миравай (аллипе сетел çине çапса). Тăр чипер, ухмах! Мĕн пăркаланатăн? Часрах кала: малала мĕн пулчĕ?

Ухтеркке. Малала çаплах...

Миравай. Мĕн çаплах?

Ухтеркке. Пылчăк лапашкинчен упаленсе тухрăм та, вара, суймастăп, чышкăпа йунасах каларăм: Ки-и-ин! терĕм, епĕ сана куншăн каçармастăп! терĕм. Сута паратăп! терĕм. А мĕншĕн, вăл мана, старике, тĕксе йараӑ? Ай, хаљхи саккунпа кинĕсен аппĕсене ĕнсерен тӳплеттермеле?

Сăпани. Суйаӑ вăл ан ĕненĕр ăна!..

Ухтеркке. Есĕ ан пӳл мана, старике! Епĕ йĕркипе калатăп. Итле-хе, хăспатин миравай. Вара епĕ сута тухса утрăм. Кин мана кăшкăраӑ: тухса сĕтĕрнех,

упăте хăраххи! сĕтĕрнех, намăссăр! тет. Çапла каларĕ ку... Епей! Тислĕк муклашки илчĕ те, мана çурăмран йара пачĕ! Муклашки иртсе кайтăр тесе пĕшкĕнме тăнăччĕ, çу-ук, ман вата шăм-шак вăр-варах çаврăнаймасть. Вара çурăмран, мĕн, кашт айаларах, çакăнтан тиврĕ. Хам сисеймерĕм те, леп! турĕ.

Сăпани. Суйать вăл. Ан ĕненĕр ăна, лачч! анчах турĕ.

Ухтеркке. Есĕ ан пŭл мана, старике. Епĕ йĕркипе калатăп· Итле-хе, хăспатин миравай. Вара унтан мана тем те пĕр те каларĕ, тем те пĕр каларĕ. Сута мар санă, вата сăрнайăн, киремет айне кайса тăрăнасчĕ, терĕ. Çу-ук! Каçармастăп епĕ ăна, хăспатин миравай! Нихăçан та каçармастăп. Вилсе кайам,—каçармастăп. Вилсен те вăл ман çине пырса тăпра ан пăрахтăр. Вăт, çавăнпа есĕ ăна, хăспатин миравай, мĕнле те пулин чар!

Миравай. Чаратпăр.

Ухтеркке. Чар, чар! Улĕмрен ман алăри çăкăра туртса илмеле мар ту! Кукăљ тĕ çимеле ту!..

Миравай. Вара, унпа çитет-и сана?

Ухтеркке. Çитмесĕр!. Çитет, çитет.

Миравай. Апла пулсан, есĕ ăна касамата хуптарас теместĕн-им?

Ухтеркке. Мĕ-ĕн! Касамата? Çук, çук, çу-ук? Касамат тесе çăварна та ан уç! Есĕ ăна ахалĕх чар! (Хуллен). Епĕ сана уншăн ахаљ тумастăп, алике пус паратăп...

Миравай. Ха-ха-ха! Ах-ха-ха-ха!!.

1-мĕш çетатлĕ. Хе-хе-хе!

2-мĕш çетатлĕ. Хы-хым-хым!

Ухтеркке (вĕсене курса кулаť). Ахи-ăхи-ăхи-хик!

Миравай. Ха-ха-ха! Ну, Ухтеркке! Есĕ питĕ тĕлĕн меле çын! Ахаљ мар сана, мучĕй, Ухтеркке, тесе калана!

Ухтеркке. Ара çаплах! Ахаљ ăçтан апла калатăн çынна!

Миравай. Ну, Ухтеркке! Каçар кинўне. Вара ĕçĕ те пĕтет.

Ухтеркке. Çук, çу-ук! Каçармастăп! Ман çвитетлĕсем пур. Пенине урăмра çынсем курчĕç. Катăк Çăварпа Кайура Крахйанĕ пăхса тăчĕç. Ĕненместĕр пулсан, епĕ причак çиме те пултаратăп.

Миравай. Ыйтатпăр свидетĕлсенчен.. Позвать сюда свидетеля Герасима Криворотова!

Çекретар. Криворотов!

Катăк Çăвар. Мы! (Кĕрет).

**9-мĕш курăнни.**

Çавсемех, тата Катăк Çăвар.

Катăк Çăвар. Чево исвољте?

Миравай. Кривовотов, есĕ—çвидетлĕ...

Катăк Çăвар. Так точчĕн, хоспада причашнăйĕ!

Ухтеркке. Çаплах, иййа, çаплах, хоспада миравай! Вăл ман çвитетлĕ. Вăл сана пĕтĕмпех каласа парать.

1-мĕш çетатлĕ. Ан шарла! Санран ыйтмаççĕ хаљ.

Миравай. Кривороговˏ сан ĕнтĕ мĕн ыйтнине пĕтĕмпех чăн калас пулать.

Катăк Çăвар. Никак нет, хоспада причашнăйĕ, епĕ ку ĕçпе нимĕн тĕ пĕлместĕп.

Ухтеркке. Ара, куртăн вĕт, мĕн тунатăн?

Катăк Çăвар. Курман.

Ухтеркке. Е-е, Катăк шăллăм, есĕ апла, мĕнле ара? Епĕ сана лайăх ача тесе?

Катăк Çăвар. Ан йантра, тĕнче ·ухмаххи! Кам шатри шăллăмĕ пур сан ваљљи? Ухмах! Камшăн пулсан—шăллăм, сирĕн пеккишĕн пулсан—шăллăм мар, хоспадин Герасим Федорович Криворотов Второй! Пĕлетĕн-и есĕ ăна?

Ухтеркке (аллипе шарт! çапать). Вăт кутăн!

Катăк Çăвар. Хоспода причашнăйĕ! Вăл мана кĕлевĕç тăвасшăн çвидетле тăратнă. Епĕ ку ĕçпе нимĕн те пĕлместĕп.

Ухтеркке. Кутăн! Кутăн! (1-мĕш çетатлĕ Ухтерккене аллипе йунать).

Миравай. Криворотов, итле есĕ малтан. Санран халех пĕлни пĕлменни çинчен ыйтмаççĕ.

Катăк Çăвар. Пĕлетĕп, çаплах.

Миравай. Раз есĕ çвидетлĕ, сан мĕн ыйтнине чăн калас пулать. Чăн каламасан, сана хуна лайăх пулмасть. Сутра суйа суйнăшăн тĕрмене хупаççĕ.

Катăк Çăвар. Етă так точчĕн. хоспада причашнăйĕ.

Миравай. Апла пулсан кала: виçĕмкун есĕр Крахйанпа иксĕр урамра тăтăр-и?

Катăк Çăвар. Его так точчĕн... Е-е, тăман, тăман Виçĕмкун епĕ урама та тухман!

Миравай. Каларăм, вĕт, епĕ сана чăннипе калас пулать, тесе. Мĕншĕн суйатăн?

Катăк Çăвар. Никак нет, хоспада причашнăйĕ! Чăна чăн калатăп. Халиччен суйа суйманна, тин çăвара вараламастăп.

Миравай. Мĕнле тата есĕ икĕ тĕслĕ каласа йатăн?

Катăк Çăвар. Ето, так точчĕн, ман темскерле, чĕлхе çыхланчĕ.

Миравай. Кала малала: есĕр урамра тăнă чух Сапани ашшĕне тислĕкпе печĕ-и?

Ухтеркке. Ийиа, печĕ çав, хăспатин миравай, печĕ!

Катăк Çавар. Никак нет, хоспада причашнăйĕ.

Миравай. Куртăн пулсан, мĕншĕн чăннипе каламастăн?

Катăк Çăвар. Я—слопотный гражданин, хоспада причашнăйĕ. Ни суймастăп, ни курнине тунмастăп. Анчах та, ку ĕçпе епĕ нимĕн те пĕлместĕп. Курман, илтмен.

Миравай. А, пĕлместĕн-и есĕ: Сăпани вăл ашшĕне пăртак хĕсĕрлемест и?

Ухтеркке. Ийна, хĕсĕрлет çав, хăспатин миравай, хĕсĕрлет. Пĕр хĕсĕрлеме пуçласан, алăк патнех персе хупăрлать. (1-мĕш çетатлĕ Ухтерккене аллипе йунать).

Катăк Çăвар. Никак нет, хоспада причашнăйĕ. Ухтеркке вăл хăй пуплекелет Сăпани çинчен йала тухсан.

Ухтеркке. Хăспатин миравай, есĕ унтан урăх ан ыйт! Вăл кутăна перет.

Миравай. Криворотов, кала-ха тата: Сăпани ашшĕне килтен хăваласа кăларса йамасть-и?

Катăк Çăвар. Не моку снăть, хоспада причашнăйĕ! Курман, илтмен.

Ухтеркке. Хăспатин миравай! Вĕсем Сăпанипе иккĕшĕ пĕр шутлă! Ан ĕнен есĕ вĕсене. Катăк Çăвар вăл ман кине качча илесшĕн астарать. Ĕнер те вĕсем иккĕшĕ пасара пĕрле кайрĕç.

Катăк Çăвар. Никак нет, хоспада причашнайĕ! Ни пасар не пывал, ни Сăпани не кулђал. (Ухтерккене). Ы-ы, ватă сăрнай! Епĕ ĕнер Сăпанине пасарта мар, тĕлĕкре те курман.

Ухтеркке. Есĕ питне кĕççе çĕленĕ, çавăнпа намăса пĕлместĕн.

Сăпани. Вĕсем, хăйсем, Крахйанпа иккĕшĕ пĕр шутлă. Ĕнер атте мана тĕрлеттерет: Крахйана качча илем анчах, тет. Вара сана, киремете, пуççапмăттăмăрччĕ, тет. Ан пуççап! Мĕн тăвап епĕ сан пуççапнипе!

Миравай. Криворотов! Тата мĕн пĕлетĕн?

Катăк Çăвар. Урăх нимĕн те пĕлместĕп.

Миравай. Довољнă! Ухтеркке, сан кинўне каçарас пулат. Çвидетлĕ сан майлă пĕртте каламасť.

Ухтеркке. Çук, çук! Каçармастăп. Аçа çапсан та каçармастăп. Ман Крахйан пур, вăл пĕтĕмпех каласа парать. (Крахйана чĕнет) Крахйан, кил-ха кунта! Кил.

1-мĕш çетатлĕ. Ан кăшкăр! Сансăрăнах чĕнеççĕ.

Миравай. Ухтеркке! Тăр есĕ ху вырăнна!

Ухтеркке. Йурать, тăрам.

Миравай. Позвать сюда свидетельницу Агрипину Каюрину.

Çекретар. Агрипина Каюрина!

Крахйан. Кунта!

Çекретар. Кĕр!

Крахйан. Кĕретĕп, халех!

### 10-мĕш курăн

Çавсемех, тата Крахйан.

Миравай Крахйан! Тăр кунтарах! (Крахйан сĕ ел патнерех пырса тăрать).

Катăк Çăвар (Крахйан иртсе кайнă чух ăза чавсинчен туртать те, хăлхинчен шăпăн калать). Ан кала, ан кала. Тун, пĕтĕмпех тун Тунмасан, епĕ сан çинчен йалĕпех йат сарап.

Миравай. Крахйан, курнине чăнипе кала Суйа суйсассăн, хуна лайăх пулмасť.

Крахйан. Йурать калам.

Ухтеркке. Крахйан, есĕ: печĕ те. (1-мĕш çетатлĕ Утерккене аллипе сулать)

Миравай. Крахйан, есĕ виçĕмкун урамра тăтăн-и?

Крахйан Тăтăм Катăк Çăварпа иксĕмĕр тăраттăмăрччĕ епĕр. (Катăк Çăвар Крахйана пырса чавсинчен хытă туртать).

Крахйан. Ее, тăман, тăман! Виçĕмкун епĕ урама та тухман.

Катӑк Ҫӑвар. Хоспада причашнӑй, Крахйавпа епӗр урамра виҫӗмкун мар, тӑватӑмкун тӑнӑччӗ кӗтех... Ахаљ пулсан, тӑрас ҫукчӗ те, вӗсем умне пӗр тутар пулӑ сутма пынӑ та, пулӑ швеший-ши? тесе, пытӑм.

1-мӗш ҫетатлӗ. Ан шарла! Санран ыйтмаҫҫӗ!

Ухтеркке. Суйат: тӑватӑмкун пирӗн умра тутар мар, кушак ҫури те пулман. Хам пӗлсе тӑратӑп.

Миравай. Крахйан, куртӑн-и есӗ Сӑпани ашшӗне тислӗкпе пенине? (Катӑк Ҫӑвар Крахйана чавсинчен пырса туртат).

Крахйан. Ҫу-ук, курман! Пӗлместӗп епӗ ним те.

Ухтеркке. Крахйан! Курнине мӗншӗн каламастӑн?

1-мӗш ҫетатлӗ. Ан шарла! Санран ыйтмаҫҫӗ!

Ухтеркке. Ҫу-ук, шарламастӑп. Крахйан тунӑран анчах калатӑп.

Миравай. Крахйан, Сӑпани вӑл ашшӗпе мӗнле пурӑнат? (Катӑк Ҫӑвар Крахйана чавсинчен пырса туртат).

Крахйан. Ҫу-ук, пӗлместӗп епӗ нимӗн те. Ҫаплах пурнаҫҫӗ пуљ.

Ухтеркке. Крахйан, мӗншӗн тунатӑн?

1-мӗш ҫетатлӗ. Ей! (Ухтерккене аллипе йунат).

Миравай. Сӑпани вӑл ашшӗне хӗсӗрлемест-и? (Катӑк Ҫӑвар Крахйана чавсинчен пырса туртат).

Ухтеркке. Крахйан, кала!

Крахйан. Ҫу-ук, пӗлместӗп епӗ нимӗн те.

Ухтеркке (аллисене шарт! ҫапат). Акӑ тамаша!

Миравай. Крахйан, кала-ха тата! Сӑпани вӑл ашшӗне килӗнчен хӑваласа йамаст-и? (Катӑк Ҫӑвар Крахйана чавсинчен пырса туртат).

Крахйан. Ҫук. Хут те мӑйран шӑршлӑ вӗренге кӑкарсан та, нимӗн те пӗлместӗп. Ни илтмен, ни курман, ҫӑвар та уҫман...

Ухтеркке (аллисене шарт! çапат). Ну, Крахйан!

Миравай. Нимĕн те пĕлмĕстĕн-и?

Крахйан. Пĕр пĕрчĕ те пĕлместĕп.

Миравай. Çитет.

Ухтеркке. Крахйан, мĕн ара есĕ?

Миравай Ухтеркке!

Ухтеркке. Йа-х!

Миравай. Сан кинӳне каçарас пулат анчах... Пĕр çвидетли те путлĕ кăтартмаст.

Ухтеркке. Ара чим-хе! Хăспатин миравай! Кукăљ çиме чармаст пулсан, ман вара, каçарас шутăм та инçех мар. Хăй каçартăр!

Миравай. Сăпани, малала аçуна кукăљ çиме чармăн-и есĕ?

Сăпани. Епĕ ăна ахаљ те нихăçан та чарман.

Ухтеркке. Кин! Есĕ, вара, малала та ан чар!

Сăпани. Кукăљ мар, хут те хуплу туса çи!

Ухтеркке. Вăт ман кинĕм, пукане тус!

Сăпани. Атте! Есĕ те вара мана пĕр йапала тума ан чар!

Ухтеркке. Мĕн ара?

Сăпани. Епĕ Катăк Çăвара киле кĕртес тĕтĕп те..

Ухтеркке. Ара, кĕрт, пайанах кĕрт! Кĕрӳ! Тавай. пар аллуна!

Катăк Çăвар. Малала лайăх пурăнар ĕнтĕ.

Ухтеркке. Епĕ те авланатăп! Крахйăн! Качча пыратăн-и? Ман пĕр качака пур!

Крахйан. Сăпани чармаст пулсан, епĕ пăрăнсах тăмастăп. Ман хамăн та пĕр сурăх пур!

Ухтеркке. Кин, кинĕм! Чармастăн-и?

Сăпани. Мавшăн пулсан, хут те çирĕм çиччĕ авлан.

Ухтеркке. Авланатăп, пайанах авланатăп!

Миравай. Ухтеркке! Ентĕ кину́не каçартăн пулĕ вĕт?!.

Ухтеркке. Мошнĕ! Каçаратăп! Çырах: каçарчĕ, те. Авланат, те.

Миравай. Ха-ха-ха!

Çекретар. Хе-хе-хе!

1-мĕш çетатлĕ. Хо-хо-хо!

2-мĕш çетатлĕ. Ыхм-ыхм-ыхм!!!

Ухтеркке. Крахйан! Ентĕ пирĕн, иксĕмĕрĕн, кунта урăх ĕç те çук! Прашчай, хăспатин миравай!

Катăк Çăвар. Прашчайте, хоспада причашнăйĕ! (Сутйссем кулаççĕ).

Чаршав.

## РЕДАКТӐР АСӐРХАТТАРНИСЕМ.

„Йалта“ драмӑпа „Сутра“ комеди Ф. П. Павлӑвӑн чи паллӑ литератур произведенисем. Ку пйессӑсем чӑваш литературинче паллӑ вырӑн йышӑнса тӑраççӗ. Вӗсем, Ф. П-н музык произведенийӗсем пекех, малашне пурӑнма тивӗççийӗ те пире пачах иккӗлентермест. Çавӑнпа, тата чӑвашсен пйессӑсем сахаллине асра тытса („Йалта“ 1922 çулта пичетленни саланса пӗтнӗ, ӑна халӗ тупма та хӗн), епӗр Ф. П. Павлӑвӑн çак драмӑлӑ произведенийӗсене пичетлесе кӑларас терӗмӗр. Анчах акӑ мӗн çинчен асӑрхаттарма тивет. „Йалта“ пйессӑна урӑхлатса пичетлетпӗр. Мӗншӗн тесессӗн, çырасса пит те ӑста çырнӑ пулин те, „Йалта“ пйессӑ Ф. П. çырнӑ пекех илсессӗн, пайанхи сценӑшӑн вӑл йурӑхлах темеле мар. Идеологи тӗлӗшпе ку пйессӑ хаљхи тапхӑрти чи аслӑ геройӗн—пролетари революцин историне тӑвакан рабочи класӑн ӑсхакӑлӗпе килӗшӳлӗ калӑпланайман, пйессӑ чӑвашсен наци интеллигенцин „вӑйлисен философине“ пырса перӗнкеленӗ, çав хушӑрах унӑн „тур çырни“, „пурнӑç шӑпи“ тенисен тыткӑнлӑхӗнчи вӑйсӑрлӑхӗпе чир-чӗрленнӗ кӑмӑлӗпе сыхӑнса тӑрат.

Ф. П. Павлӑв йалта етемсем пурлӑх тата тивӗçлӗх тӗлӗшпе те пӗр маррине лайӑхах сиснӗ, пйессине пит те сӗтеклӗн, хӑшпӗр типсене çавӑрса илсе, пӗр-пӗринпе тытӑçтарса кӑтартат вӑл. Анчах вӗсене (йалти вӑйсене) тивӗçлипе хӑйсен чӑн-чӑн класлӑ вырӑнне тӑратса, хаљхи пурнӑçри пек кӗрештерейместь. Кун пирки хӑй

пуранна чухне Ф. П. Павлӑв та, хӑйӗн ҫитменлӗхне палӑртса, ҫавӑн пекех асӑннӑччӗ (Чӑваш республикӗ 10 ҫул тултарнӑ йачӗпе районсем тӑрӑх Патшалӑх хорӗпе кайсассӑн, вӑл манпа рас̌нах ҫавӑн ҫинчен калаҫнӑччӗ).

Ҫаксене сиссе, вӗсене курса тӑнипе, Чӑвашсен академилӗ театӑрӗн чӑваш труппи те кӑҫал (1932 ҫул) „Йалта“ пйессӑна тӑшкерӳлӗ йышӑнса, ӑна ҫӗнетсе, урӑхлатарах выљаса пачӗ. Урӑхлатасса труппӑн режиҫҫорӗ К. Парнепе ӑна пулӑшаканӗ Н. Айзмӑн урӑхлатнӑ. Ҫавсем ҫӗнетни тӑрӑх, тата редакциленӗ май та кӑштах йакатса, пйессӑна пичете хатӗрлерӗмӗр.

„Йалта“ „4 пайлӑ драмӑ“ вырӑнне „5 картинлӑ пйессӑ“ пулса тӑчӗ. Кирлӗмартарах вырӑнсене кӗскетнӗ. Йуррисем нумайӗшӗ нотсӑр пичетленеҫҫӗ, мӗншӗн тесессӗн, пйессӑна выљанӑ чухне усӑ курма палӑртнӑ йурӑсене чылай ҫӗрте халӗ пӗлеҫҫӗ, тата вӗсем уйрӑм сборниксенче пичетленнӗ. Улӑштару йенчен чи палли— пйессӑри геройсене хӑйсен тивӗҫлӗ класлӑ вырӑнне тӑратни. Ҫӗнетнӗ пйессӑра ӗнтӗ Йељук, Ваӊук т. ыт. пурнӑҫне улӑштарса пыракӑнӗ курӑнми вӑйсем: „турӑ ҫырни“, „шӑпа“, „телей“ („предопределение“ „рок“) тенисем мар, пачах урӑх сӑлтавсем, социалӑ процессем иккенне туйатӑн.

Й е љ у к—карт лайӑх тухманнипе „ах, ырӑ пулас ҫук“, „чӗре ырра сисмест пулӗ“, „турӑ тепӗр тӗслӗ ҫырнӑ“ тесе калакан хӗрарӑм вырӑнне, авалхи йӑласене пӑхӑнса, „епӗ тин сан патна пырсан та хам телейе тупас ҫук“ тесе, („малтанах чӗри сиснипе“ ӗнтӗ!) Ҫтаппан майлӑ хыттӑнах тӑрса, Ваӊук аллипе вилме хатӗрленекен хӗрарӑм вырӑнне, халӗ кив пӗркенчӗке хывса пӑрахса, Ваӊук майлӑ, ҫартан таврӑннӑ маш̌ри—чухӑн Ваӊукпа пӗрлешсе, унпа пӗрле ҫӗнӗ пурнӑҫшӑн кӗрешӗве тухма хатӗр хӗрарӑм пулса тӑрат.

Ваҫук—йал чухӑнӗ, Раҫҫей пролетарипе пӗрле революци тума хатӗрленсе ҫитнӗ ҫар ҫынни. Вӑл халӗ, Ф. П-н малтанхи драминчи пек,—хӑйӗн класлӑ тӑшманӗпе (Ҫтаппанпа, ӗмӗрхи пусмӑрпа) тӳрех тытӑҫса ӳксе кӗрешес вырӑнне, хӑйӗн арӑмне персе пӑрахса, „ухмаха йерсе" таҫта, шыва сикме пулас, (хайхи „шӑпа" тенин танатине лекнӗ пирки ӗнтӗ вӑл та!) „чупса тухса кайса" кӗрешӳрен пӑрӑнмасӑ. Стаппан та тек простӑ „авланнӑ ҫын" мар ӗнтӗ ку пйессӑра. Вӑл пурнӑҫ ӑнманни ҫине „тарӑхса", ӗҫсе, хыттӑн пусса утса ҫӳрекен, тата „пӗчӗк ача пек алӑ тӑсса" чунтан-вартан хӗрарӑма йуратакан „вутчулӗ пек тивсе кайакан чӗрелӗ", шыва сикнӗ Йеҫука ҫӑлакан ҫын сӑнӗ вырӑнне, вӑл ултавҫӑ, йал куштанӗ, кулак, ҫынна чуралатса, унӑн ӗҫ вӑйне ӗмсе пурӑнакан тип пулса тӑчӗ. Йуратӑва та вӑл хӑйӗн пурлӑхӗпе сутӑн илесшӗн, йурату сӑлтавӗпе ҫыннӑн пурлӑхне те (арӑмӗн, Пӑрчканӑн) хӑй йенне сӑптӑрасӑ вӑл, хӑйӗн тӗллевне ҫитсе хыпса илессишӗн вӗҫӗмсӗр улталӑма, суйма та хатӗр. (Суйа ҫыру, шывран туртса кӑлартӑм тесе суйса, Йеҫука—„хама шывран туртса кӑларнӑшӑн епӗ—санӑн" тесе калаттарса ҫӗнсе илни. „Ваҫук—дезертир" тесе суйни т. ыт. те.).

Пӑрчкан—халӗ хӑйӗн пуйанлӑхне упраттарас тесе Ҫтаппанпа пӗрлешесшӗн ҫунакан хӗрарӑм мар, пуйанпа пӗрлешсе унӑн пурлӑхне ӑмсанса, „пыллӑ ҫуллӑ" пурнӑҫне кӗрсе ӳкме ӗмӗтленекен, анчах ку тӗлӗшпе пуйанӑн пархатарне курман, улталаннӑ средҫачкӑ.

Муҫҫа та, Паҫҫа та урӑх сӑнлӑрах ӗнтӗ. Ҫӗнелнӗ сӑнсем пйессӑра тата пур.

Декораци те улшӑнасӑ. Пӑрчкан, Йӑскар пӳрчӗсем вырӑнне, Пӑрчкан кил хушшийӗ пулса тӑнӑ, тата урӑххи те.

Диалăгсене кĕскетнĕ, хăшпĕр курăнусем те тухса ӳкеççĕ. (Йеђук упăшкисем салтака кайассине карт тăрăх йумăç йарса пĕлни, салтак ачисем таврăннă хыççăн, 3-мĕш картинăн йулашкинче, Вађукпа Йеђук йумахласа выртса çывăрни, Çтаппан Вађук пӳртне вут тĕртни—пурĕ виçĕ курăну тухса ӳкеççĕ, вĕсене выђаса парсан та, питех пăсас çук пулĕ те, выђама пит те кансĕррине те асра тытнă т. ыт. те.) Йеђук шыва сикнĕ хыççăнхи вырăна улăштарнă, тата 5-мĕш картинăн йулашки курăнуне пĕтĕмпех çĕнетнĕ.

Ĕлĕк „Йалта" драмăна курнă хыççăн, куракане, „ниçтала мар таçтала" тенĕ пек, „çухалса кайса" театăртан тухнă. „Турă çырни" т. ыт. ырлăхĕпе Йеђук-Вађуксем пĕтнĕшĕн куђанса аллине лачах усса таврăнма та пултараĭчĕ вăл. Халĕ пйессă пысăк овацийе, савăнăçлă пĕтет, куракана вăл кĕрешĕве мобилизацилет. Мĕншĕнни—паллах.

---

Ф. П. Павлăв йурă та, драмă та çыракан (композитăр, драматург) пулни—пирĕн искуствăра чеченлĕхпе пуйан, çав хушăрах вирлĕн калăпланакан сулăм хăварчĕ.

„Йалта"—музыкла драмă. Лирикă хăвачĕпе чĕрене, кăмăла тутлăн вырнаçакан, çав хушăрах ыраттаракан та тăкăска, „йӳçĕклĕ реаљнăç", акă мĕн вăл „Йалта".

Ф. Павлăвăн пйессăра идеализациленнĕ кăмăл, черченкĕ ĕмĕт, нацилĕ илем... çав хушăрах пурнăçăн нима хĕрхенми, „хытă алли", „турă çырни" (рок, судьба) тенисем ерипленеççĕ.

Çийелтен лăпкă пек, идилли виткипе витĕнтернĕ чăваш йалĕ шаларах кĕрсессĕн кĕрлесе тăракан, майĕпен çеç пулин те, капланса тулса ыракан клас кĕрешĕвлĕ чаваш йалĕ курăнаĭ халĕ пйессăра.

Акӑ мӗн ҫырнӑччӗ „Канаш" хаҫатра ку пйессӑна Чӑвашсен академилӗ театӑрӗнче выљаса пани ҫинчен.

Ана курнӑ хыҫҫӑн:

„...Пйессӑна постановкӑ тӗлӗшпе илсессӗн, реалисӑм ҫтилӗпе условнӑ конструктивнӑй метод пӑтранса кайни пӑсса тӑрат пулин те, вак-тӗвек ҫитменлӗхсем палӑраҫҫӗ пулин те, куракана пйессӑ килӗшет.

Чӑваш йалӗнчи кӗрешӗве, Октабӗр ҫеҫ пире ҫав Ҫтаппансемлӗ, пусмӑрлӑ, кӗсенлӗ йал „реаљнӑҫӗнчен" хӑтӑлма чӑн ҫул уҫса панине туйса илетӗн. Йепле кӗрешме кирлӗ пулнине, халӗ те Ҫтаппансен йулашкийӗсемпе пӗр килӗшӳсӗр ҫапӑҫма, вӗсен тымаррисене кӑкласа ывӑтма кирлине татах та хытӑ ӗненсе, хайарлӑхпа кӗрешӗве авӑрланатӑн.

Пйессӑн ҫӳжечӗ, вӑйӑлӑхӗ, кашни картинӑ хӑйӗн содержанине нацилӗ калӑплани аван. Пйессӑн паллӑрах вырӑнӗсем чӑваш йурри-кӗввипе илемленсе пыраҫҫӗ (пӗччен йе ушкӑнпа йурланисем, скрипкӑ, кӗсле т. ыт.). Йурласса та выљаканӗсем пит те килӗшӳлӗ йурлаҫҫӗ. Рољсене лайӑх валеҫсе пама пӗлнӗ.

Массӑлӑ сценӑсем вырнаҫулӑ, вӑхӑтра иртеҫҫӗ. Пирӗн ҫамрӑк артиссем хӑйсене тыткалама та, сасӑсене — интонацине — пӗлсе улӑштарса выљама та йерипен хӑнӑхса пыраҫҫӗ.

Декораци те оригиналлӑ — анлӑ та аслӑ вӑл, ӑна кашни картиншӑн шаккаса улӑштарса тӑмала мар. Декорацийӗ тӑрӑхах сценӑ ҫинче: шатрун ҫуртлӑ пуйан, вӑтам, чухӑн хуҫалӑх сӑнӗсем уйрӑмланса курӑнаҫҫӗ.

Ӳсӗмсем ҫинчен калаҫнӑ чухне, раснах тата акӑ мӗн ҫинчен чарӑнса тӑмала.

Постановкӑн чи лайӑх йенӗ, ман шухӑшпа, паллах, — Ф. П. Павлӑв творчӗствине тишкерӳлӗ йышӑнса илни, ӑна урӑхлатма хӑйайни пулса тӑрат. Театӑрта Ф. Пав-

лӑв пйессине лартнӑ пулин те, ӑна пĕтĕмĕшпе, унӑн, Ф. П.-ӑн, темеле мар, унта тата темĕн урӑххи, ҫенни те пурри лайӑхах сисĕнет.

Ф. Павлӑвӑн „йумахла илемлĕхĕпе“ „пурнӑҫӑн хайарлӑхĕ“—„реаљнӑҫĕ“, тата ниме шелле́ми курӑнми вӑйсем („рок“, „турҫырни“ т. ыт.) туйӑннине, интеллигентла шикленĕвне илсессĕн—унӑн ку пйессӑра пĕтĕм творчĕствишĕн тĕлĕнмеле сӑнлӑх (симвӑл) сиксе тухат̆. Вӑл—Йељук. Йељук, условнӑ илсессĕн, Ф. П. Павлӑвӑн пĕр пытанчӑклӑ тĕп шухӑшне витĕнтерсе тӑракан сӑнлӑх (обрӑз). Йељук—чӑвашсен нацилĕ сӑнлахĕ, вӑл—чеченлĕх, йӑвашлӑх, хурлӑхлӑ кĕвĕсен сӑлтавĕ, пусмӑр пусӑмĕ, ĕмĕт ҫунатланавӑ т. ыт. те.

Йељукӑн шӑпи карт тӑрахах курӑнат̆!

„Турӑ ҫырнинчен иртме ҫук“.

„Ах, ырӑ пулас ҫук...“ тет вӑл Ф. П. Павлӑв пйессинче. Пурнӑҫ хирĕҫĕвĕсем ҫирĕпленсе пынине вӑл—чӑваш пуйанĕ (наци буржуазийĕ) ҫумне пуҫне тайса, унпа пĕрле пĕтме те хатĕр. Ваӈук салтак айакка кайса ҫӳремеле пулни, вӑл ытти халӑхсемпе хутшӑнса, чӑваш йалне революцилĕх илсе кӳни—Йељука (чӑваш илемлĕхне, нацилĕхне) персе пӑрахат̆.

Халĕ, пйессӑна ҫĕнетнĕ хыҫҫӑн, Йељук та класлӑ вырӑн йышӑнат̆. Карт-мĕн тӑрӑх „турӑ ҫырнисем“ ӑна вилĕм сĕнсе шӑл йĕрмеҫҫĕ. Кунта класла кĕрешӳ саккунĕ хӑйĕн пĕтĕм пысӑккӑшĕпе тухса тӑрат̆.

Йељук халĕ, ҫĕнетнĕ пйессӑра, „турӑ ҫырни йе „халӑх мĕн калĕ“ тенисем айĕнчен тухса, мĕн авалтан пыракан тĕшмĕплĕ йӑласене илсе ывӑтса, Ваӈук аллине ӳкет. Чӑвашӑн нацилĕ искусстви, нацилĕ илемлĕх вӑйĕ революци йе йертсе пыракан клас—пролетари—ҫулйĕрĕ ҫине тухса, социалисӑм тӑвас ĕҫе хутшӑнат̆.

Ф. П. Павлӑв ҫырнине ҫавӑн пек пӗлсе ҫӗнетни, лайӑх хатӗрленсе, мӗн пур вӑй-халтан тенӗ пек хатӗрленсе выљаса пани—чӑваш труппин авторитетне ҫӗклерӗ" („Канаш" ран).

Вырӑнти сценӑсем ҫинче те ҫавнашкал постановкӑшӑн кӗрешсе ӗҫлесессӗн, „Йалта" вӑйлӑ, илемлӗ, пысӑк усӑ паракан пйессӑ иккенне палӑртма пулать.

„Сутра" комеди-шуткӑ чӑваш сцени ҫине кӗнӗ оригиналлӑ пӗрремӗш произведенисенчен пӗри (комедисем йенчен илсессӗн, ӑна пӗрремӗшӗ темех те тивӗҫ). Автӑрӗ ӑна 1917 ҫултах ҫырнӑ. Керӗнски вӑхӑтне илсе ҫырнӑ пек курӑнать.

1917 ҫул, Ф.П. Хусанти йуридичӗски курсран вӗренсе килсессӗн, Шемшерте халӑх судйи пулнӑ. Ун чухнех ку комедийе йалта выљама тытӑннӑ. К. Иегорӑв артис комедийе 1918 ҫул йанварӗн 3-мӗшӗнче ҫырса илнӗ. 1919 ҫулти март уйӑхӗнче Хусанта выљаса кӑтартнине асӑнаҫҫӗ. Ун чухне прологне те выљанӑ. „Шурӑмпуҫ" журналӑн 6-мӗш № рне (нойабӗр, 1919 ҫ.) пичетленет. Вулакансен масси питех те ыйтнипе, комедийе „Сунтала" кӗртнӗччӗ. Халӗ ӗнтӗ комеди 3-мӗш хут ҫапӑнать. Чи малтанах автӑрӗ ку комедийе „кулмали пӗр сыпӑклӑ пйескӑ (шуткӑ)" тенӗ. Пйессӑна йулашки хут Ф.П. 1925 ҫул декабӗрӗн 12-мӗшӗнче тӳрлетсе пӑхса тухнӑ. Унӑн алҫырӑвӗ Шупакарта Чӑвашсен тӗп музейӗнче усранать, ун ҫине Ф. П.:

„В виду того, что чувашская печать признала мою пьеску достйною для издания, кроме того, настоящая тетрадь сохранилась как единственный экземпляр авторского оригинала, который мне в феврале с./г. доставили акулевцы, нахожу достаточно смелости передать эту рукопись Центр. Чувашскому музею. Автор, 11/IV-25 г., Чебоксары", тесе ҫырнӑ. Прологӗ (фелйе-

тонĕ) пирки автăрĕ музейе панă алçырăвĕнче те асăнаҫ. „...Чаршав уçăлсан сута килнисем диван çинче виç-çĕн-тăваттăн калаçса ларaççĕ Калаçни куракансене илтĕнмест. Çак пйескăна выҫас умĕн фелйетон выҫас пулсассăн, çак çынсемех выҫаççĕ. Паллах илтĕнмеле выҫаççĕ вĕсем. Фелйетонне выҫаса пĕтернĕ çĕре çекретар тухмала...“ т.ыт. Фелйетон ун чухне çакăн пек пулнă:

## ПРОЛОГ.

—Суг çук, сут çук, теççĕ...

—Сутсăр самана—тăварсăр пашалу вăл.

—Самана мар—салакайăк...

—Ан йанра, тĕнче ухмаххи! Мĕскер пелкетĕн... Халĕ мĕскер шатри сучĕ... „Наротнăй правă“ вĕт!

—Епĕ сут йĕркипе ура та йарса пусман. Мана сут кирлĕ мар. Епĕ сутсăр та лайăх пурнатăп. Йӳççине пĕтерчĕç, çавă кансĕр.

—М-м-ма? Унтан кунтан аптăрамастпăр-çке... Хам патма пыр, „кăвакалне“ сакăрвуннăпах парăп-çке. Ĕнер Ухтерккепе Çиҫтăр ĕçсе кайрĕç. Ухтеркки, пĕр-иккĕ сыпсанах, мачча çине пăхса йурлама пуçларĕ.

—Ухтерккинне ун чух пуçне çапса шăтарнă, тет.

—Кам?

—Кам пĕлет вĕсене...

—Йуманай йалĕнче çын çапса пăрахнă, тет...

—Кам-ши? Акă тата!...

—Ей, тĕнче ухмаххи... „тет“ те „тет“, йалан „тет-летсе“ лараҫ.

—Пайан сут таврашсем килнĕ...

—Сутсăр май килет-и вара?

—Сутсăр ăçтан пурнатăн. Мана хамах „Катăк Çăвар“ ĕнер халăх çинче каларĕ: Саваҫи, сана пĕрре ислетсе илетĕп-ха, сассăр пăшалпа перетĕп, тет.

—Ман хамăн та сута памали пурччĕ те, ĕнер кайса патăм: сут пур-и? тетĕп. Пур! тет. Вара чунăм лаштах турĕ. Кайура Петĕрĕ те сута пынă та, кускалаŭ анчах —Ах, турă, тĕнче çĕнĕрен çуралнă пекех туйăнчĕ-çке. Чутах вĕтсе çийеччĕç, сутне час тумала мар-ши, тет.

— Шукăљ Микулайа лаша вăрланăшăн виçĕ çула тĕрмере лармала тунă, тет.

— Лайăхрахчĕ вĕсене, вăррисене. Çавна шыраççĕ вĕсем...

— Матак Кришкине, тырăпа сут тунăшăн, тата ытти спекуљаципе хăтланнăшăн пилĕк çуллăха, тет.

— Мускав Ентрине Илле арăмне ыталанăшăн тăхăр уйăха, тет.

— Хе-хе! Лартăр унта тепĕр Ентри çураличчен...

— Хы-хы-хы!—Хо-хо-хо!! Ха-ха-ха!..

К. Йегорăв аллинче усраннă алçырăвĕ тăрăх пролог çавăн пек. Ăна кайран кăшт урăхлатарах выљанă. Пролога халĕ выљаса парсан та ĕçе питех пăсас çук пек, ман шутăмпа. Усси те нумайах мар унăн, вăл нимĕнех те хушса калаймасŭ, комедийе хăçан çырнине çеç кăштах систерет те, „сута килнисен“ рољне выљакансене кăштах чĕмсĕр ларасран хăтараŭ.

Пичетленсе тухнисемпе алçырăвĕсем хушшинче комедин пысăк уйрăмлăхĕсемех çук. Ф. П-чăн малтан çырнинче вирйалла, тăван йалĕнчи пек сăмахсемпе сăмах çаврăнăçĕсем çеç ытларах пулнă.

Шупашкарти Чăваш театăрĕ XV çул тултарнине уйавланă май, унăн малтанхи драматургĕсенчен пĕри пулнă Ф. П. Павлăв çинчен йатнех çакна та асăнма тивĕç.

„Йалта“ Ф. П. театăр пирки шухăшĕсенчен пĕрне ĕçпе туса пани пулаŭ, темеле. 1919 çулта Хусанти Чăваш труппинче ĕçленĕ черетри режиçор Тал-Мăрса

(Г. Зайцёв) драматургпа иксёмёр Ф. П. патне номёра кайсаттăмар. Унта Тал-Мăрсапа Ф. П. чăвашсен оригиналлă пйесисем çинчен, малашне мёнле пйессăсем çырассипе пирён драматурги йепле çулпа кайасси çинчен те сăмах хускатрёç. Ф. П. пйессăсене йурăсем, кёвёсем. вăйăсем ытларах кёртсе илемлетме кирли çинчен каланăччё. Çавăнпа та „Йалта“ драмă унăн сăнавлă ёçё пулнă теме те йурат. Чăвашсен музыкла драмине çырас текенсем Ф. П. сăнавёсемпе усă курмала.

Ф. П. Павлăв произведенийёсемпе тата унăн пурнăçёпе интересленекенсем пуррине, тата Чăвашсен академилё театăрёнче (Шупашкарта) „Йалта“ пйессăна мёнле выђаса кăтартнипе те интересленекенсем пулассине асра тытса, ку кёнекене „Йалта“ пйессăн малтанхи содержанийё çинчен Е. Захарăв йулташ çырнине тата Ф. П. пурнăçё çинчен çырнă статйана кёртетпёр.

Пйессăна пичете вађђи хатёрленё чухне кăтартусем панăшăн К. Парне, Н. Айзмăн, К. Йегорăв йулташсене тав.

**Редактăрё.**

## „Йалта“ драмă.

(1922 çулта пичетленнĕ вариант çинчен).

П. Ф. Павлăв чăвашсен паллă музыкант-композитăрĕ, шкулра вĕреннĕ çулсенчен пуçласах, илемлĕ литературăпа та хытă интересленнĕ, художĕствăлă произведенисем çырнă. Пичетленни вĕсенчен иккĕ: пĕри—„Сутра“ йатлă комеди (1918 çулта çырнă), тепри—„Йалта“ йатлă драмă (1922 çулта пичетленнĕ).

„Сутра“—автăр халăх судйинче ĕçленĕ вăхăтра чăваш ĕçхресченĕсен пурнăçне тĕпчесе сăнанипе усă курса çырнă произведени. Вăл—вак хуçалăхлă хресчен çемйинче пулса иртекен кулленхи харкашу-йатлаçу таврашне сатирăлă кулăпа çунтаракан комеди. Ку пйессăна хулара та, йалта та пайтах лартаççĕ: пăхакансен кăмăлне вăл пит килĕшет.

„Йалта“ йатлă 4 пайлă драмăра автăр империалисăм вăхăтĕнчи чаваш йалне сăнласа кăтартнă. Произведенири чи паллă геройсем: чăваш хĕрарăмĕ Йеђук, йалти чухăн хресчен Вађук, йал куштанĕ Çтаппан.

Йеђук—Пăрчкан йатлă тăлăх арăмăн амаçури хĕрĕ. Йеђукпа Пăрчкан çителĕклĕ пурнăçпа пурнаççĕ: Йеђук ашшĕнчен вĕсене пысăк пурлăх йулнă. Йеђукпа Пăрчканăн лашапа ĕне те темиçе, çипуç та аван. Кăна драмăра акă йепле кăтартнă.—П ă р ч к а н (Йеђукран ыйтат): „Ĕнисене мĕн патăн?.. Лашисене мĕн патăн?“. Й е ђ у к: „Ĕнисене пахчара курăк çулса патăм... Лашисене—сĕлĕ патăм“. П ă р ч к а н (Йеђука): „Çипуç ырă, хырăм тутă мĕн кирлĕ?.“ Й е ђ у к: „Мана

нимте кирлĕ мар". Пăрчкан: „Аçупа аннÿ камшăн тăрăшнă?.. Пирĕн пуйанлăх йур пек çÿлтен çуса пулман. Ĕлĕкренпе çĕр тара илсе цухнă ăна... Ман шухăшпа, санăн çав çара, çипуçлă ушкăнпа çÿреме питех килĕшмест. Асту: есĕ пуйан хĕрĕ, çавна ан ман". Тепĕр тĕлте тата Пăрчкан калаť: „Пуйанлăх, тепĕр тесен, хамăн та çитет".

Çак пуйан çын хĕрĕ Йеђук чухăн Ваңука йуратса качча кайаť. Вĕсен мăшăрланнă хыççăнхи чухăн пурнăçне автăр çăкăн пек сăнласа кăтартаť.—Ваңук: „Йеђук, есĕ апат хатĕрле-ха"... Йеђук; „Халех. Апачĕ те ним те çук та, мĕнех хатĕрлес-ши?" Ваңук: „кăвас пĕтни-ха вара?" Йеђук: „Пур кăштах" „Кăвас çине сухан йар. А ку шăхличи (ача) вађђи качака суса кĕр. Вара çитрĕ те нирĕ".

Ваңук вăрçăна салтака кайсан, Йеђукăн, кил-çурт çунса кайнă пирки, Йăскар карчăк патĕнче нушалăхра пурăнмала килет. Ачи унăн вилет... Ĕлĕк пуйан çын хĕрĕ пулнăскерĕн, Йеђукăн халĕ „пĕр пыра тăрантарасшăн çын тарçи" пулса пурăнма тивет. Йăскар карчăк ăна пĕр май ĕçлеме хăвалаť.—„Мĕншĕн тата арламастăн? Сана ахалех тăрантарма епĕр çĕрме пуйан терĕн-им?" Çав вăхăтрах тата Йăскар, Çтаппан укçа парса хĕтĕртнипе Йеђука Çтаппанпа йавăçтарасшăн ĕçлет. Йеђук хăлхине вăл сăмахсемпе йÿçĕхтерет: „Çавăн пек кĕлеткепе епĕ сар çу çисе пурнăп. Авă, Çтаппан миçе хут килсе кайрĕ кăçал. Мĕн тутуна пăратăн, тепĕр тесен?"

Акă Ваңук йулташĕ Пађђа вăрçăрăн таврăнаť. Вăрçăра вăл Ваңукпа пĕрле пурăннă. Куштан Çтаппан, Йеђука хăй майлă çаварса пиçмо сыраť те, Йеђука—„çак пиçмона Пађђа илсе килнĕ",—тесе суйаť.

Йеђук, хут вулама пӗлменскер, Ҫтаппанăн ултавлă сăмахӗсене ӗненет. Кун хыҫҫăн Ҫтаппан Йеђука каллех хăй ăна савни ҫинчен калама тытăнать. Йеђук Ҫтаппана татăклăн калать: „Кай ман ҫумран! Хăвар мана! Ман чӗрене вырăнтан ан хускат. Епе ӗмӗрте те санăн арăм пулас ҫук. Есӗ ҫапатăн. Ей, телейсӗр чун. Хӗрхенетӗп епӗ сана. Йăвăр пулмала сана та. Санран ырă ҫын пулаччӗ-и тен. Ҫавах тă хăвар есӗ мана. Епӗ те чӗре тапраннă ҫын. Телей курас ҫук есӗ манпала“...

Ҫтаппан тухса кайасан Йеђук хăйпе хăй калаҫать: „Ҫтаппан... Пысăк кайăк пек вӗҫсе килчӗ вăл ман ҫумма. Унăн сăмахӗсем ман ăша вăрă пек шăппăн кӗрсе ларчӗҫ...“ Ҫавах та, Ваңука аса илсен, хуйхăлă Йеђук шыва сикет. Ăнеăртран таҫтан Ҫтаппан siксе тухать те, Йеђука шывран туртса кăларать. Унтан вăл каллех Йеђука хуллен калать: „Йеђук, епӗ сана чунтан-вартан калатăп: хӗрхенетӗн-и есӗ мана“. Йеђук (Ҫтаппан ҫине пăхса): „Ман пурнăҫа ҫăлнăшăн—епӗ санăн“. Ҫтаппан: „Ырă ҫынсем! Ваттисем, ҫамрăксем! Епӗ Йеђука качча илетӗп—ҫавăнпа ҫакă кунсенче сире туйа пыма чӗнетӗп!“

Драмăн йулашки пайӗнче, Йеђукпа Ҫтаппан туйӗ сикнӗ вăхăтра, Ваңук ҫитсе кӗрет. „Йеђук Ваңук йенеле пӗрре ура йарса пусать те, ăнтан кайса ӳкме тăрать. Ҫтаппан Йеђука ҫӗклесе тенкел ҫине лартать“. Ваңук Йеђукран ыйтать: „Савнă йулташăм! Паллатăни есӗ мана?“ Йеђук чӗнмест. Кайрантарах вăл калать: „Ей, телейсӗр Ваңук! Епӗ те сана нумай кӗтрӗм. Анчах, турă тепӗр тӗслӗ ҫырнă. Епӗ ӗнтӗ тин сан пата пырсан та хам телейе тупас ҫук. Кайа-

рах пултăн, Чăннипе каласан, епĕ сана хĕрхенетĕп. Сут тăвас тетĕн пулсан, сут ту—санăн ирĕк". Ваҧук: „Есĕ йуратса кайатăн-и?".

Йеҧук (вилнĕ пек): „Йуратса"...

Ҫтаппана воҧвĕрпа персе пăрахма хатĕрленекен Ваҧука Йеҧук калать: „Чарăн, Вăҧук! Епĕ тин санăн арăму мар, Мĕн тăвас тенине ту..." Ваҧук: „Вил апла пулсан!" (персе пăрахать).

Ҫакăн пек хĕрарăм ĕнтĕ Йеҧук. Вăрçă вăхăтĕнчи унăн нушалă пурнăçне аван сăнласа кăтартнă. Анчах Йеҧукăн кайранхи ĕçĕсем питех ĕненмеле мар: пĕр йенчен, вăл Ваҧука пит хытă йуратать,—çавăнпа вăл вилни çинчен илтсен шыва сикет; тепĕр йенчен, шывран тухсанах, куштан Ҫтаппана вăл калать: „Мана çăлнăшăн—епĕ санăн". Салтакран таврăннă Ваҧука вăл калать: „Кайарах пултăн..."

Тӳрех калас пулать: Йеҧук—сăпатланса çитеймен тип. Вăрçăран асапланса килнĕ чухăн Ваҧука та, вăрçă вăхăтĕнче йалта ĕçхалăха пусмăрласа пурăнакан куштан Ҫтаппана та,—Йеҧук пĕр пек сăмахсемех калать.

Ваҧука вăл калать: „Ей, телейсĕр Ваҧук... Епĕ ĕнтĕ тин сан пата пырсан та, хам телейс тупас çук... Чăннипе каласан, епĕ сана хĕрхенетĕп"...

Ҫтаппана Йеҧук калать: Ей телейсĕр чун. Хĕрхенетĕп епĕ сана. Йăвăр пулмала сана та. Ҫавах та хăвар есĕ мана. Епĕ те чĕре тапраннă çын. Телей курас çук есĕ манпала..."

Йеҧукăн Ҫтаппан каланă сăмахĕсем ĕççыннишĕн ытла та тарăхмала сăмахсем. Куштан Ҫтаппан хăйĕн малтанхи арăмне, сывмарскерне, хĕнесе пурăннине Йеҧук пĕлет. Йеҧукăн амаçури амăшĕ—Пăрчкан—

çумне çыпăçса, Çтаппан унăн „пĕтĕм пуйанлăхне хăй аллине пуçтарса илнине“ Йеђук пĕлет. Çтаппан йалта „халăх йунне ĕçекен вăрăм туна“ пулса пурăннине Йеђук пĕлет,—вăл Çтаппана малтантарах хăйех „—Есĕ мана мулпа астарасшăн-и?“—тесе каланă. Çаксене пурне те аван пĕлсе тăракан Йеђук—куратăр-и?—Çтаппана кайран калаť: „Хĕрхенетĕп епĕ сана. Йăвăр пулмала сана та... Телей курас çук есĕ манпала...“.

Ĕççыннисем вăрçăра асапланса пурăннă вăхатра йалта ашкăнса пурнакан куштана—„Йăвăр пулмала сана та“ (йурату пирки!) тесе калани—ытла та киревсĕр йапала.

Тата акă мĕн асăрхамала: Çтаппанпа калаçнă чух Йеђук ăна—„телей курас çук есĕ манпала“, тет; Вађук вăрçăран таврăнсан Йеђук ăна—„Епĕ... сан пата пырсан та хам телейе тупас çук“, тет. Çапла ĕнтĕ, Çтаппанпа калаçнă чух Йеђук Çтаппан телейĕ çинчен шухăшлаť, Вађукпа калаçнă чух—хăй телейĕ çинчен шухăшлаť. „Епĕ сана нумай кĕтрĕм... Кайарах пултăн“...—тет ним айăпсăр, мĕскĕн Вађука Йеђук.

Çаксем пирки вулакан ĕççыннин кăмăлĕ, драмăн малтанхи пайĕсенче Йеђук йенне туртăнаť пулсан—йулашки пайсенче, III-мĕш пайĕн II-мĕш курăнăвĕнчен пуçласа, Йеђукран сивĕнет.

Вађук—чухăн хресчен. Вăл кăмăллă çын, çав вăхăтрах вăл „вĕри йунлă“ паттăр. Драмăн малтанхи пайĕнчех вăл, Пăрчкан килĕнче Çтаппанпа тĕлпулсан, ăна хирĕç хăйуллăн калаť: „Ей, халăх йунне ĕçекен вăрăм туна! Асту! Епĕ... ирĕкре тĕл пулсан, санпа кĕрешме хатĕр. Акă çакă чăмăр сан пуçран тивсен—йе пуçу саланса кайĕ, йе ĕмĕрлĕхе сĕрĕм тивсе йулĕ!“

Хӑй салтак ӗҫпе кантура кайнӑ вӑхӑтра, Ҫтаппан Йеҙук патне пырса, ӑна пусмӑрлама хӑтланнӑшӑн, Ваҥук ӑна вирлӗн хӗртсе илет, тата тивӗҫлипе айӑплаҫа намӑслантарать.

Вӑрҫӑран йала таврӑнсан, Ваҥук хӑйӗн арӑмӗн туйне лекет. „Хамӑр йала курсан, чун хӗпӗртенипе чӑтаймарӑм—макӑрса йатӑм. Йала ҫитсен йалӗпе туй сикет. Кам туйӗ ку? тетӗп... Пӗр сӑмах та чӗнмеҫҫӗ, йытӑран тарнӑ пек хӑраса тараҫҫӗ“. Тарӑхнӑ Ваҥук Ҫтаппана калать: „Епӗр вӑрҫӑра йун тӑкнӑ чух есӗ кунта арӑмсене пусмӑрлатӑн-и?... Ман йун тӑкӑнни сан пуҫ ҫине килтӗр!“ Хӑйӗн арӑмне—куштан Ҫтаппана качча кайакан Йеҙука—Ваҥук калать: „Ҫакӑ ҫурӑлса, татӑлса пӗтнӗ кӑвак тумтирлӗ ҫынна йышӑнас теместӗн-и?... Манӑн пысӑк ҫунат ӳстерсе ҫан ҫумна вӗҫсе килес килетчӗ. Епӗ саншӑн тыткӑнран тухса тартӑм. Австри аслӑ вӑрманӗнче тискер кайӑксемпе пӗрле пурӑнтӑм. Хурал тӑракансене улталаса аслӑ Дунай шывӗ урлӑ ишсе каҫрӑм...“ Урса кайнӑ куштан Ҫтаппан—„тытӑр ҫакӑ таркӑна!“—тесе кӑшкӑрсан, Ваҥук воҙвӗр кӑларса Ҫтаппан ҫине аллине йӗрипен хӑпартса тӗллеме пуҫлать: „Епӗ сана авлантарас тетӗп, Ҫтаппан“... Анчах Ваҥук Ҫтаппана мар, Йеҙука вӗлерет.

Вулакан ӗҫҫынни пӗтӗм хӑйӗн кӑмӑлӗпе ҫунса кайнӑ ӑшчиклӗ, ҫурӑлса, татӑлса пӗтнӗ кӑвак тумтирлӗ чухӑн Ваҥука килӗштерет, анчах унӑн алли воҙвӗра кирлӗ тӗле пенӗ тесе калама пултараймасть.

Ҫ т а п п а н—патша саманинче чӑваш ӗҫхалӑхне пусмӑрласа пурӑннӑ куштан—пуйан ҫын типӗ. Вӑл хӑй ҫинчен калать: „Епӗ чаплӑ пуйан. Ман мулсем нумай... Манран пӗтӗм йал хӑраса тӑма пултарать“, тет. Пӑрчкан ун ҫинчен калать: „Мана, ухмах хӗрарӑма, улталарӗ вӑл, усал. Ман пӗтӗм пуйанлӑха хӑй аллине

пуҫтарса илчĕ... Арăмне ҫаплах ҫĕмĕрет... Йеҙук пӳҫне ҫавăратăп, тесе мухтанаҫ тет... Йытăланĕ те вăл, ăна никам та чараймĕ".

Хăйне хăй пуйан Ҫтаппан мăн кăмăллăн тытаҫ. Пăрчкан патĕнче вăл „урай варрине паттăр пек йăвăррăн утса тухаҫ те, чухăн Ваҙука кăшкăрса калаҫ:—„Ваҙук! Кай тухса!" Ҫавăнтах вăл тата Муҫҫана кăшкăраҫ: „Муҫҫа! Тепре шăлшуррине уҫатăн пулсан, халех кăларса пĕретĕп".

Ваҙук ăна—хăй кантура кайнă вăхăтра вăл Йеҙука пусмăрлама пынăшăн—хĕнени ҫине тарăхса, Ҫтаппан ҫĕрле унăн кил ҫуртне вут тĕртсе ҫунтарса йараҫ. Ваҙук салтака кайсан, Йеҙука хăй йенне ҫавăрмашкăн Ҫтаппан Йăскар карчăка укҫала тытаҫ, кайран тата Йеҙука суйа пиҫмо ҫырса парса улталаҫ. Ваҙук салтакран таврăнсан, Ҫтаппан ăна кĕретĕнех елеклĕ сăмахсем калаҫ: „Есĕ тыткăнра пулман! Есĕ тарса пурăннăскер! Епĕ сана халех тыттарса йаратăп. Тытăр ăна! Тытăр!"

Ҫакăн пек йурăхсăр ҫын вăл кущтан Ҫтаппан. Анчах, ҫак усал ҫынна автăр илемлетсе, лайăхлатса кăтартма пикенни палăраҫ. Ҫтаппана драмăра, пĕр йенчен, Йеҙука ытла та хытă савнă пек катарнă. Акă тĕслĕх.—Ҫтапан (Йеҙук умне чĕркуҫланса ларса) калаҫ: „Ех, Йеҙук! Хĕрхен мана... Халиччен мана никам та йуратман. Йе ман чĕрере ҫунакан вут ахалех сӳнсе ларĕ-ши? Сана йуратма пуҫланăранпа епĕ ухмаха йернĕ ҫын пек ҫӳретĕп. Ăҫта кайсан та есĕ ман куҫ умĕнче, ман ҫине пăхса ман чĕрене шăрататăн. Епĕ сан патала аллăмсене чăсса пĕчĕк ача пек йĕретĕп. Йеҙук—йурат мана!.. Ҫӳлти ҫутă хĕвел те сан пек ман чуна савăнтараймасҫ. Есĕ мана йурату сăмахĕ памастăн пулсан, епĕ пайанах хамăн

пӗтӗм пуйанлӑха хӗм-кӑвар туса салатса йарӑп. Унтан вара хам кӑкӑра хамах ҫӗҫӗпе касса ҫурӑп та, санӑн уру умне килсе ӳксе вилӗп".

Ҫак сӑмахсем тӗлӗшпе вулакансенчен хашӗ-пӗри калама пултарӗ: „кунта автӑр аскӑн куштана идеализацилесе кӑтартмасӑ̆,—вӑл кунта йалти кашкӑр—сурӑх тирне тӑхӑнса ЙеҌука улталасшӑн ҫуннине кӑтартаӑ̆", тейӗ. Кун пек пулсан пит аванччӗ те, анчах ӗҫ ун пек мар: драмӑ вӗҫне ҫитичченех „мӑнтӑр" куштан ЙеҌука ӑнран кайиччен йуратнӑ пек сӑнланнӑ. Драмӑ ҫак сӑмахсемпе пӗтет:

„Ҫ т а п п а н: ЙеҌук!... (ЙеҌук ҫине пырса ӳкет. Халӑх хӑраса хытса кайаӑ̆). Чаршав".

Хӑйӗн чирлӗ арӑмне ватса пурнакан, Пӑрчканпа йавӑҫса, тӗрлӗ ултавлӑ, ирсӗр ӗҫсем туса пурнакан куштан Ҫтаппана ҫакӑн пек илемлетсе сӑпатлани— „типлӑ ҫынсене типлӑ обстойатӗлствӑсенче кӑтартни" (Енгӗлс) пулмасӑ̆.

Кунсӑр пуҫне Ҫтаппана тата пит паттӑр, нимӗнрен те хӑраман ҫын пек туса илемлетсе кӑтартнӑ. Тӗслӗх: драмӑ вӗҫӗнче ВаҤук воҌвер кӑларса, Ҫтаппана тӗллесе—„епӗ сана авлантарас тетӗп, Ҫтаппан"—тесе каласан, Ҫтаппан нимӗн те хӑрамасӑ̆. „Ҫ т а п п а н М-мхм... (чавсипе ҫӗклесе тытса, ВаҤук ҫине кашкӑр пек пӑхса тӑраӑ̆, унтан ш у й т а н п е к к у л с а й а р а ӑ̆).

Драмӑра ӗнентерӳлӗхсӗр вырӑнсем урӑх та сахал мар. Паллӑраххисем ҫаксем:

1. ЙеҌук ВаҤук вилни ҫинчен илтнӗ-илтмен Ҫтаппана качча тухма килӗшни.

2. Малтанхи арӑмӗ вилмесӗрех Ҫтаппан „тӑлӑх" арӑм вырӑнче шутланакан ЙеҌука пӗтӗм туй йӗрки-йӑлине туса качча илни пӗртте ӗненмеле йапала мар: унаш-

кал ĕç чăвашсем хушшинче нихçан та пулман. Кунтах асăрхаттармала: Çтаппанăн малтанхи арăмĕ вилнĕ пулсан та, чăвашсен йăлипе, вăл Йеђука туйла илме пултарайман, уйрăмăнах тата вăрçă вăхăтĕнче.

3. Çтаппана качча кайакан Йеђук туйра тин Ваңук çĕррине хывса ывăтса—„ку сан çумна çыхнă сăнчăр! Мана вăл урăх кирлĕ мар",—тени тата ытти те.

Драмăра кăтартнă ĕç—империализăм вăрçи вăхăтĕнче вăрçа кайнă салтак хăйĕн арăмĕн пĕтĕм йĕркейăлапа пулакан туйне çитсе кĕни—пулман та, пулма та пултарайман.

Ку—йумахла çӳжет кăна, ăна вырăсла „муж на свадьбе своей жены" теççĕ. Ун пек çӳжет йумах сборникĕсенче чăнах та тĕл пулкалаť.

Драмăн паха йенĕ—чăваш йалĕнчи куштан пусмăрĕпе чухăнсен пурнăçне кăтартниччен пуçне—тĕрлĕ йăласене сăнласа кăтартнинче, тата халăх йуррисем нумай кĕртнинче.

Ку тĕлĕшпе автăр хайĕн пысăк маçтăрлăхне кăтартнă.

Драмăна çак йурăсене кĕртнĕ: Сăпка йурри, Салтак йурри, „Чашки-чашки сар мăйăр" йатлă хуйхăлă йурă, ачасен вăйă йурри, Туй йурри, Хăйматлăх йурри, тата ытти те. Çак йурăсен, драмăра пысăк ăсталăхпа вырнаçтарнăскерсем, произведенин витĕмлĕхне ытла та вăйлăлатаççĕ.

Акă хуйхăлă Йеђук хурланмала йурă йурласа лараť:

Чашки-чашки ай сар мăйăр та,
Кампа та ларса ай çийем-ши?
Чун хурланаť, чĕрем макăраť те,
Кампа ларса ай пуплем-ши?

Акă саьăнăçла ачасем „Пĕчĕкçеç путене сарă тула йурăтаť“ йурра йурлаççĕ. Йурласа пĕтернĕ çĕре кайарах йулнă ачисем чупса кĕреççĕ те, Йеђук шыва сикре, тесе каласа кăтартаççĕ. Кунта „контраст“ текен „хирĕçӳлĕ пĕрпекмарлăх“ прийомне куратпăр. Тата ытти те.

Произведенири чĕлхе ăнланма цит çăмăл.

Асăрхаттарни: халĕ „Йалта“ драмăна урăхлатса пичетлесе кăларнă.

(Е. Захарăв. „Чăвашсен илемлĕ литератури“ кĕнекинчен)



Чăвашсен Патшалăх хорĕ. Ф. П. Павлăв йурлаттарать.

## Ф. П. ПАВЛĂВ ПУРНАҪĔПЕ ĔҪĔСЕМ.

Федăр Павлăвич—пирĕн паллă композитăр—чăваш йуррисене илемлетсе кĕвĕлекен, ҫĕне йурăсем шутласа кăларса вĕсене музык ваҕҕи йĕркелекен, Чăвашсен республик хорне йертсе пыракан ăста дирижор, музык ĕҫне вĕрентекен, ҫав хушăрах—комедисем, драмăсем, шӳтлĕ калавсем ҫыракан, музыкпа т. ыт. искусствă тăрăх тĕпчесе статйасем ҫыракан. Пирĕн куҕтур тĕлĕшпе ĕҫлекен чи паллă ҫынсенчен пĕрichчĕ вăл.

Ҫураласса Ф. П. Йетĕрне уйезĕнчи (халĕ Ҫĕрпӳ районĕ) Патĕрйел йатлă йалта вăтам хресчен ҫемйинче 1892 ҫул ҫентабĕрĕн 13-мĕшĕнче ҫуралнă. Йалти шку-

ла вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн, Иккассинчи 2 класлӑ шкулта вӗренсе, 1907-мӗш ҫул Чӗмпӗрти чӑваш шкулне кӗнӗ. Вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн, 1911 ҫулта ӑна музык учитли туса унтах вӗрентме хӑвараҫҫӗ. 1913 ҫулта духовнӑй ҫеминарине кӗрсе 1916-мӗш ҫулччен вӗренет. 16/17 ҫҫ. Кушлавӑшра тата Балтайра (Йетӗрне у.) пуҫламӗш шкулта вӗрентет. 1917/18 ҫҫ. Шупашкар уйезӗнче (Шемшерте) мировой тата халӑх судйи пулса ӗҫлет. Хусанта Ҫурҫӗрпе Хӗвелтухӑҫ йенчи халӑхсен инҫтитутне кӗрет. Чӑваш республикӗнче (Ҫатракассинче, Хурамалта) учитлӗре пурӑнаӑ, хор организацилет. Шупашкар уйез ОНО пуҫлӑхӗн замеҫтитӗлӗ. Унтан Тутар республикӗнчи Ҫутӗҫ комиссариачӗн инскусствӑ инструктӑрӗ, Чӑваш ҫекци пуҫлӑхӗн замеҫтитӗлӗ. Чӑваш облӑҫӗ тунӑ хыҫҫӑн Шупашкара куҫаӑ. Ҫутӗҫ пайӗн музык уйрӑмӗнче ӗҫлет, Шупашкарти Педтехникумра тата Музык шкулӗнче йурӑпа музык ӗҫне вӗрентет, чӑваш хорӗн дирижорӗ (20/23 ҫҫ.). Тӗрлӗ учрежденисенче йурис-консуљтра пурӑнаӑ. 1923-мӗш ҫулта главсуд членӗ.

Чӑваш ҫӗршывне сӑнаса пӗлекен ушкӑнра тӑрса чӑваш музыкӗ ҫинчен материалсем пуҫтараӑ (ушкӑн тытӑмӗн членӗ—ҫекретарӗ те пулса ӗҫлет), кӗнекесем кӑлараӑ, йурӑсем ҫыраӑ, хаҫат-журналсенче статйиасем пичетлет. 1923-мӗш ҫулта Чӑваш хорӗпе Мускава йалхуҫалӑх выстӑвкине кайаӑ. Чӑваш республик хорӗнче дирижор пулса 2 ҫул ӗҫлет. Музык техникумӗнче вӗрентет (сольфеджио, хоровое пение), концертсенче тӑтӑшах сӗрмели купӑспа (скрипкӑ) тухаӑ. Чӑваш республик хорӗпе Мускава тата Чӑваш республикӗ тӑрӑх бригадӑпа кайса ҫӳрет. Унтан Ленинграда музык конҫерваторине кайаӑ. Унта чӑваш студенчӗсен хорне йертсе пыраӑ, хӑйӗн ҫӗнӗ йуррисене йурлаттараӑ.

Музык конçерваторине вăл йатарласа, композитăрсен ĕçне вĕренме кайсаччĕ. Анчах çĕнетнĕ пĕлӳне вăл пире параймарĕ, хăй çырса парас тенĕ музыкне, вăйăлă йуррисене çырса хăвараймарĕ. Унăн сывлăхне ӳпке чирĕ—туберкулёз—сăхса пырса, пурнăçне те касса татрĕ. 1931 çул ийунĕн 2-мĕшĕнче каçхине 7 сехет те 18 минутра Ф. П. Павлăв Сочи санаторийĕнче вилнĕ.

Чăваш хорĕсене организацилесси йенчен, тата чăваш йуррисене нумай сасăпа, тата музыкпа пĕрле йурлама илемлетни йенчен Ф. П. пысăк вырăн йышăнса тăрат. Вăл хора питĕ ăста йертсе пынинчен нумайĕшĕ тĕлĕнсе хавасланса калаçатчĕç, хаçатсем çине çыратчĕç![1]

Федăр Пăвăлча, тарăн шухăшласа, чĕререн тивмеле витĕмлĕ çыракан музыкçă, художник-лирик темеле. Унăн музыкĕ, тĕплĕрех илсе пăхсассăн, пĕччен хуçалăх пурнăçĕпе хăйĕн кăмăлĕсене çыхăнтарнă лирикă. Паллах, унăн пултарулăхĕ пĕр вырăнтах, ним улшăнусăр тăнă темеле мар.

Ф. П. музыкне епĕр унăн „Сăрнай", „Ача-пăча йуррисем", „Çĕнĕ йурăсем" тата „Çĕнĕ сăрнай" сборникĕсем тăрăх, тата духовой оркестăрпа калама çырнă маршĕ, скрипкăпа фортепийанă ваљљи çырнă ночĕсем, тата тĕрлĕ музыкпа пĕрле каламали „Сăрнайпа палнай" тăрăх пĕлетпĕр. (Ф. П. çырнă музык тата литератур произведенисем çинчен малала, çак статйиа çумне хушса кăларнă указатĕле пăх).

Малтанхи йурăсенче Ф. П. чăваш халăх кĕввисене илсе гармониленĕ кăна мар, вăл хăйĕн шухăшне ху-

[1] „Канаш" хаçатри („Концертсем çакна калаттараççĕ" статйиара Ф. П йурлаттарнă чухне кĕлетки,çурăмне мĕнле килĕшӳлĕ тыткаланине кино çине ӳкерсе йулас пулат, тенĕччĕ т. ыт).

дожĕствăлă музыкпа палăртнă. Кайран çырнă йуррисенче те унăн кашнинчех (кулăшлисенче те) лирикă сăрхăнаť, пур йурринче те вăл хăйĕн тĕп шухăшĕсене палăртаť. Йуррисенче унăн йуратупа пеçимисăм (шанăçа çухатнине палăртакан кĕвĕлĕ шухăшсем) ылмаш-тĕлмеш черетленсе пыраççĕ. Кунта Ф. П. хăй чăваш интеллигенципе çывăх тăрса, унпа хутшăнса ўснĕ май, чăвашсен интеллигентлă вăйсен, йалти малтарах тăракан тата пурлăхлăрах сăйсен кăмăлне палăртаť. Пĕр йенчен вĕсен—тутă пурнăçĕ, савăнăçлă самантсем: ĕçкĕ-çикĕ, пысăк туйсем т. ыт., романтисăм тени, çав хушăрах—земствăлă, кульturничĕствăлă шухăшсем пăркаланни, харпăрлăх—пĕччен хуçалăх тĕпренех кисренни, ку сăйсен тĕрекĕ хăйсен ури айĕнчен тухса кайни, вак буржуалă кăмăлсем, çавăн пирки „ыратни“ т. ыт. кунта сăн ўкернĕ. Чăвашсен авалтан пыракан етнографилĕ йуррисене Ф. П. пигĕ ăстан илемлетсе тахçанччеnлĕхех усрама тăрăшнине сисетпĕр („Туй“, „Хăйматлăх йурри“, „Сĕрен“ т. ыт.). Йулашки вăхăтала çеç Ф. П. чăваш ĕçхалăхне вальли, пайанхи кунсемпе çыхăнтарса, çĕнĕ йурăсем пара пуçларĕ („Малала утар“, „Колхоз йурри“ т. ыт ).

Çийелтəн кăна илсессĕн, Ф. П. йуррисене çакнашкал тапхăрсене уйăрма пулаť.

1. Хăйĕн кăмăлне палăртакан индувидуалисла лирикă: „Шупашкар туйи“, „Сапсар кĕрĕк“, „Вĕлле хурчĕ“ „Йĕс таканлă“, „Пирĕн урам“ т. ыт. Кунта иккĕленў, пеçимисăм тата темле курăнман вăйа (мистицисăма) парăннинчен килнĕ хурлăхлă кĕвĕсем илгĕнеççĕ. (Статйара кĕвĕсемпе кăтартма çук пирки йурăсенчи сăмахсене илсе хамăр шухăшсене çирĕплетсе пырар).

„Ĕмĕр вăрăм, пуçăм çамрăк,
Иепле пурăнса иртерем-ши?“
(„Шупашкар туйи“).

„Çӳлеле пăхрăм, ай тĕлĕнтĕм—
Кайăк-кĕшек вĕçнинчен.
Шухăшларăм, ай тĕлĕнтĕм—
Пĕчĕкрен пысăк пулнинчен“.
(Çавăнтанах).

„...Шанса кайас илемĕ...
Ах, шухăшăм, шухăшăм,
Мĕншĕн есĕ пăтранан?“
(„Вĕлле хурчĕ“).

Ф. П-н хăй пурнăçĕнчи трагедийĕ: кăмăллана хĕре илейменни, çемйере телейлĕх тупайманни, ача-пăча-сăр йулма тивни, килĕштерсе пурăнманни т. ыт. обшчĕствăри интеллигентлă сăйсен кăмăлĕпе пĕр пек ĕнерӳлĕ йанрама пуçлаť, пĕр вăлакпа сăрхăнса йурă кĕввине кĕрет.

„Пирĕн çамрăк чĕресем пусăрнмасť.
Тем чул хурлансан та,
Çынна курăнмасť“.
(„Чĕнтĕрлĕ те кĕпер“),

тенисем, Ф. Павлăв пĕтĕм пултарулăхне, шӳтернĕ темелех сăрхăнса кĕреймен пулин те, вĕсен тути çапнах.

2. Иккĕмĕш выранта Ф. П-н етнографилĕ йуррисем: „Туй“, „Хăйматлăх йурри“, „Олту“ „Вĕçкĕн“, „Сĕрен“, „Тӳттĕл“, „Ташă кĕвви“ т. ыт. вăйă-уйав чухнехи йурăсене, йăласене, йалти кивĕ пурнăçран йулнă йенĕсене кăтартни. Ырлăхпе усаллăхне хăшпĕр çĕрте шута илмесĕр, кĕвĕсемпех хавасланса кайса:

„Алтăр курки сыв пултăр“,

тенисем, çав хушăрах, хĕре тавар пек укçала сутнине, хĕрĕнчен ытла йапалине (туприне) хапсăнса

тăвакан туйсене кăтартма тăрăшни те пур („Хăйматлăх йурри“).

Октабĕр хыççăн револуцийе йышăннă интеллигенцин чăваш чĕлхине, искусствине пачах чĕрĕ вăй вырăнне хумасăр, ун çине алă сулнă пайĕпе каймасть Ф. П.—вăл чăваш йурри-сăввине тивĕçлĕ хак парса, ăна йуратса аталантарасшăн çуннă интеллигент представителĕ. Вăл наци илемлĕхне пуç тайса, ăш вăрканипе, пĕччеңлĕх тыткăнĕнче хĕмленсе тăракан кăмăла, „çамрăк чĕрине“, тăван кĕвĕпе пуçса нўретме, лăплантарма пăхнине сисетпĕр. Пĕр йенчен наци музыкĕн расналăхне хытах палăртакан „пилĕк тонлă гаммăсене“ çĕмĕрсе, наци кĕввине „çичĕ тонлă анлă гамма“ (Йевроп музыкĕн сăнĕ) кĕртме те хăйать, киввине нимĕн тивми хĕрхенсе тăрасшăн мар вăл („Чĕнтерлĕ те кĕпер“), паллă композитăр Чайковскирен музык ĕçне вĕренекен, çав хушăрах Ф П. наци сăнлăхне çĕклессишĕн, „йумахлă чеченлĕхшĕн“, наци расналăхĕшĕн çунать.

„Выљамашкăн, кулмашкăн —
Тухйа пуçлă хĕр чипер“.
(„Олту“).

3. Йулашки вăхăтри тапхăр - массăлă, револуцилĕ йурăсем:

„Малала утăр, харăс пусăр,
Пĕрлешсе ĕçре ыр курар“,
(„Хĕрлĕ йалав“).
„Пирĕн çамрăк чĕрере
Сулхăн тытма кирлĕ мар“.
(„Ай улми“).
«Уничерен тухар-и,
Атăр колхоз тăвар-и те,
Електрицă çутар-и“.
(„Колхоз йурри“).

„Маттур салтак пулар-и те,
Совет çĕршывне сыхлар-и“.
(„Хĕрлĕ çара кайакансен йурри“).

Кунта Ф. П. революцийе йышăнни, унăн пысăк усăлă попутчикĕ пулни курăнат. Иурăсен революцилĕхĕ асăннă сăвăсенче, поетсен сăмахĕнче кăна мар, кĕввисенче, музыкĕнче те çителĕклĕ темеле. Текстпа музыкĕ унăн итĕ килĕшсе пыраççĕ. Чăвашсен халăхи маршла йуррисенчен „Хĕрлĕ йалав“ чи лайăххи хисепленет. Ку йурăсене халĕ чылай çĕрте питĕ килĕштерсе йурлаççĕ, пахалаççĕ вĕсене. Анчах ку тапхăрти йурăсене те пачах лирикăсăр темеле мар. Вĕсен кĕвинче те хушăран шанчăклăх çителĕклех марри, темле „чун шикленĕвĕ“ те асăрханат. „Хĕрлĕ çара кайакансен йуррин“ 2-мĕш пайнех илер. Ĕçхалăх çарне, Хĕрлĕ çара тăрас паттăр шухăшлă çамрăкăн кĕвви, çĕкленсе пырас вырăнне. пĕр вырăнта темле тулланса, капланса килни те сисĕнет.

Ф. П. тата ĕç йуррисем, колхоз çамрăкĕсене валли вăйăлă йурăсем пама хатĕрленĕччĕ. Хăшпĕр поета сăмахĕсене çырса хатĕрлеме те хушнă.

Музык фронтĕнче питĕ тăрăшса ĕçлени, музык пирки калана сăмахĕсем те, Ф. П. чăваш музыкне чунтан йуратнине, чăваш йурри музыкĕ ĕçхалăхне културлатасси йенчен пысăк хĕçпăшал иккенне аван пĕлнине кăтартаççĕ.

Ф. П. „Чуваши их песенное и музыкальное творчество“ йатлă кĕнеке (1-мĕш выпуск) кăларчĕ. 10 выпуск кăларма хатĕрленнĕччĕ. Журналсем çине те музык çинчен чылай çырчĕ, пухнă материалсем те самайах пулма кирлĕ.

Музык ăсти кăна мар Ф. П., ăна епĕр—„Сутра“, „Йалта“ пйесăссен автăрне тивĕçлипе хак хурса аса

илетпӗр. Ку пӗессӑсене нумайӗшӗ пӗлеҫҫӗ, нумай ҫӗрте выљанӑ. „Сутра“ комеди пырса кӗмен сценӑ та ҫук пулӗ чӑвашсем хушшинче теме те пултаратпӑр.

Ку пӗессӑсем те йуррисемпе пӗр сӑнлах темеле. Питӗ кӑмӑллӑ старик, ҫав хушӑрах тӑмсаккай Ухтеркке кинӗсемпе сутлашни, вак-тӗвекшӗн чакалашшни... пысӑк хирӗҫӗвлех мар пурнӑҫра, куљтурлӑ чӗлхепе тӑнлантарса парсассӑн, хӑйех майланаť... тени—ҫӑмӑллӑн пуҫран ачашласа кайакан кулӑш (йумор) виткипе витӗнет („Сутра“). Интеллигент куҫӗпе пӑхса лайӑх сӑнаса ӳкерсе илнӗ йал сӑн-сӑпачӗ: ытарма ҫук ҫамрӑклӑх вӑййисем, ҫав хушӑрах татӑлан ҫинҫе ӗмӗтсем („Йалта“) вӗлтлетсе ирттеҫҫӗ. Чуна ыраттарсах темле вӑйа парӑнни, вӑрттӑн ӳпкев шухӑшӗсем, хушӑран йурӑсенчи:

„Тем чул хурлансан та,
Ҫынна курӑнмасť“,

тенисемех палӑрса пыраҫҫӗ.

Пӗессисенче те, йуррисенче те Ф. П. пысӑк ӑсталӑха пӑхӑнни, ӗҫе тӗплӗ, ҫителӗклӗ йакатса тума тӑрӑшниве аса илетпӗр. Ҫавӑнпа та,—автӑрӑн хушӑран хӑшпӗр произведенийӗсем ѐҫхалӑх кӗрешӗвӗнчен айакрарахра тӑраҫҫӗ пулин те—Ф. П. пултарулӑхӗ пирӗн искусствӑра чылай пысӑк етап, хаклӑ пулса тӑраť.

Ф. П-ран йулнӑ произведенисене пухса, тивӗҫлипе хак парса усрамала. Вӗсем тӑрӑх та искусствӑ ӑсталӑхне вӗренсе, Ф. П-ран тарӑнрах, тата ӗҫхалӑх кӗрешӗвӗ йенчен пӑхса, тумӗпе нацилӗ, ӑшчикӗпе (тултармӑшӗпе) пролетарилӗ чӑваш искусстви тума тӑрӑшар.

Ҫакӑ Ф. Павӑлча чи тивӗҫлипе асӑнни пулаť.

**Н. Ваҫанкка.**

## Ф. П. ПАВЛӐВ ҪЫРНӐ ПРОИЗВЕДЕНИСЕМ.

### 1. Йурлама тата музык вађђи ҫырнисем.

1. „Ача пӑча сасси"—ача-пӑчасем вађђи ҫырнӑ вӑйӑ-йурӑсем.

2. „Хитре йурӑсем"—музыкпа каласа пӗччен йурламали йурӑ кӗнеки.

3. „Сӑрнай"—илемлетнӗ чӑваш йуррисен кӗнеки, 1924 ҫулта Шупашкарта пичетлесе кӑларнӑ.

4 „Ҫӗнӗ йурӑсем"—3 автӑр пӗрле Октябӗр революции 10 ҫул тултарнине хисеплесе кӑларнӑ илемлӗ йурӑсен кӗнеки. Унта Ф. Павлӑвӑн 7 йурӑ кӗнӗ. Шупашкарта 1928-мӗш ҫулта ҫапӑнса тухнӑ.

5. „Ҫӗнӗ сӑрнай"—3 автӑр пӗрле йулашки вӑхӑтра гармониленӗ йе ҫӗнетнӗ йурӑсен кӗнеки. Ф. Павлӑвӑн 18 йурӑ кӗнӗ.

6. „Сӑрнайпа палнай"—тӗрлӗ инструментсемпе каламали пйескӑ (пичетленмен)

7. „Марш"—Чӑваш автономийӗ 10 ҫул тултарнине уйавланӑ тӗле духовой оркестӑр вађђи ҫырнӑ музык (пичетленмен).

8. „Чӳк—(киремете кӗлтуни) солӑ, хор йурласа тата оркестӑрпа каласа иртерекен вӑйӑлӑ йурӑ сценкӑ.

9. „Вӑйӑ"—оркестӑрпа хор, солӑ вађђи сценкӑ (пичетленмен).

10. „Салтак йурри"—хорпа йурлама гармониленӗ йурӑ. „Сунталра" пичетленӗ. Ленинградра вӗреннӗ чухне тата ҫӗнӗ йурӑсем ҫырнӑ, („Кӑвак лутка" т. ыт., вӗсене Ф. П. студентсене хорпа йурлама вӗрентнӗ (пичетленмен-ха).

11. Скрипкӑ вађђи етудсем.

12. „Кӗтӳҫ"—скрипкӑпа пианинӑ вађђи ҫырма тытӑннӑ лирикӑлӑ кӗвӗ (ҫырса пӗтереймен).

13. „Чӑваш йуррисем"—Ф. П. ҫырса илнӗ 175 кӗвӗ, сӑввисем 1700 йахӑн (пичетленмен).

### 2. Литературӑ произведенисем.

1. „Сутра"—пӗр пайлӑ комеди („Сунтал", „Шурӑмпуҫ" журналсенче пичетленнӗ).

2. „Йалта"—4 пайлӑ драмӑ, Шупашкарта 1922-мӗш ҫулта кӗнеке пичетленсе тухнӑ.

3. „Майра ухатникĕ“—шўтлĕ калав, 1930 çулта „Капкăн“ журналра пичетленнĕ.

4. „Тевик“—чăваш паттăрĕ çинчен кĕвĕлесе çырнă поемă

5. „Лурский“—повĕç, вырăсла.

6. „Ошибка“—калав, вырăсла, (кусем иккĕшĕ те пичетленмен).

7. „Авăн çапни“—сăвă, ун тăрăх В. П. Воробйов йурă çырнă.

8. „Сутра“ прологĕ, Колчак çинчен, тата ытти те.

## 3. Докладсем, теорилĕ статйасем, рецензисем.

1. „Хитре“ (Понятие чуваш о красоте по их народным песням)—„Ĕçлекенсен сасси“ тата „Отчет общества изучения местного края за 1923 год“—кĕнекере пичетленнĕ.

2. „Чуваши и их песенное творчество, первый выпуск, 1927 çул Шупашкарта тухнă.

3. „Речитативы“ в Чувашской народной музыке, 1923 çул „Красное жало“ журналра тухнă.

4. „Чăваш музыкĕ“—1923 çулхи чăвашла пысăк календарта тухнă монографи.

5. „Чăваш хорĕ Мускавра“—„Ĕçлекенсен сасси“ журналра тухнă.

6. „Сунтал“ журналра Ф. П. статйисем чылай. Сăмахран: „Чăваш кĕсли“, 8-мĕш №, 1928 çул тухнă; „Чăраннă сасă“, 1929 çул, 1-мĕш №; „Çырмари йурă“, 1928 çул, 1 мĕш №; „Чăваш музыкĕ çинчен çырнă кĕнекесем“, 1928 çул (1—7 № çырнă).

7. Н. В. Шупуççыннин „Çурхи кĕвĕсем“ кĕнекин умсăмахĕ („Сунтал“, 1928 çул, 11 №); „Канаш“, „Чувашский край“ хаçатсенче, тĕрлĕ жуналсенче „Аллегро“, „Хветке“, „Х. В. Павлăв“, тесе алă пусса çырнă рецензисем, искусствă тăрăх çырнă статйасем чылай.

8. Мускавра Ленин йачĕпе хисепленсе тăракан библиотĕкра—„Чăваш музыкĕ çинчен çырса илнисем“ тата ытти хаклă алçырăвĕсем те пулма кирлĕ.

---

## ТУПМАЛИ.


| | Стр. |
|---|---|
| Йалта . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . | 3 |
| Сутра . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . | 51 |
| Хушса кăларнисем . . . . . . . . . . . . . | 74 |



Отв. редактор Н. ВАСЯНКА.

Техн. редактор А. БЫКОВ.

Обложка работы худ. Г. ЭНГЕР.

Поступило в производство 5/XI—34 г. Подписано к печати 8/XII—34 г.

Формат 72×105/32 Тираж 4000 экз.
Изд. листов 3 1/4. В одном изд листе 69 535 знаков.

Индекс X—5 Заказ № 2774.
Уполн Чувашлита № 159.

Типография № 2 Чувашского Государственного Издательства в г. Алатыре, ЧАССР.

Хакĕ 1 тен.
Цена 1 руб.

Переплет 20 коп.

Ф. П. Павлов

ДРАМАТИЧЕСКИЕ ПРОИЗВЕДЕНИЯ

# В ДЕРЕВНЕ НА СУДЕ

ЧУВАШИЗДАТ